Бюджетное учреждение Чувашской Республики
дополнительного профессионального образования
«Чувашский республиканский институт образования»
Минобразования Чувашии

Т.В. Артемьева
С.Г. Михайлова

# Иккӗмӗш кӗҫӗн ушкӑнри ачасене илемлӗ литературӑпа паллаштарасси

(*Чӑваш ача сачӗсем валли*)

Шупашкар 2020

УДК 373,2
ББК 74.100.5
А86

Печатается по решению ученого совета БУ ЧР ДПО «Чувашский институт образования Минобразования Чувашии.

Рецензенты:
*М.Ю. Дерябина,* кандидат педагогических наук, заведующая кафедрой дошкольного образования и сервиса Чувашского государственного педагогического университета им. И.Я. Яковлева;
*З.И. Максимова*, ветеран педагогического труда.

**Артемьева, Т.В.**
**А 86** Ознакомление детей второй младшей группы с художественной литературой (для чувашских дошкольных образовательных учреждений): учебно-методическое пособие / Т.В. Артемьева, С.Г. Михайлова. – Чебоксары: БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования» Минобразования Чувашии – 132 с.

В учебно-методическом пособии рассматриваются вопросы литературного образования детей четвертого года жизни. Определяются цель и задачи, содержание работы. Раскрываются методические аспекты педагогической деятельности воспитателя, приведены конспекты непосредственно образовательной деятельности.

Предназначается для специалистов дошкольного образования, студентов.

УДК 373,2
ББК 74.100.5

© Артемьева Т.В., Михайлова С.Г., 2020
© БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования» Минобразования Чувашии

# УМĔН КАЛАНИ

Кĕнеке пĕчĕк пепке аталанăвĕнче питех те пысăк вырăн йышăнать. Вăл ачашăн этем кăмăл-туйăмĕн тĕнчине алăк уçать. Савăнăçпа хурлăх, çынпа çын хушшинчи хутшăнусене, вĕсен хăтланăшĕсене, шухăш-кăмăлне, туртăмĕсене курма-туйма вĕрентсе пырать. Кĕнеке çынна курма-ăнланма, харкамра çынлăх амалантарма вĕрентет. Илемлĕ литература ачан ăс-тăн, шухăшлав аталанăвĕшĕн те çав тери пĕлтерĕшлĕ. Кĕçĕн çулхи ачасен пуплевне йĕркелес, атлантарас ĕçре те илемлĕ хайлав витĕмĕ пысăк.

Ачара вулама вĕреничченех вулавçă вăранать. Вулама вĕренсе çитеймен, анчах та илемлĕ литература хайлавĕсене пур кăмăлтан итлекен-йышăнакан ача та – вулавçах. Илемлĕ хайлавсене харкам вуласа е ыттисем вуланине итлесе йышăнас процессем, тĕпрен илсен, пĕрешкелех.

Ачалăхра вуланă кĕнеке çитĕнсен вуланă кĕнекерен чунра самай тарăнрах йĕр хăварать. Шел пулин те, кĕнекене тарăн туяс, чун витĕр кăларас пултарулăх хăй тĕллĕн йĕркеленеймест. Ачана кĕнеке асамлăхне уçса парасси – çитĕннисен тивĕçĕ. Çапла вара, итлевçĕ-вулавçă малашлăхĕ аслисенчен, кил-йышри çитĕннисенчен, педагогсенчен килет. Ачапа çыравçă хушшинче тăракан çитĕннĕ çыннăн яваплăхĕ питех те пысăк. Унăн хăйĕн те илемлĕ литературăна юратмалла, хайлаври ĕç-пуçпа чăннипех те кăсăкланмалла, геройсен шухăш-кăмăлне туйма, хăтланăшĕсене ăнланса сăлтавлама, чунĕ витĕр кăларса ачасен патне çитерме пултармалла.

Çынсем сахалтарах вулама пуçланă хальхи саманара ачасенчен тарăн шухăш-кăмăллă, туйăмлă вулавçăсем çитĕнтересси питех те яваплă ĕç. Çакă педагогсем умне те кĕçĕн çулхи ачасене илемлĕ литературăпа паллаштарас тĕлĕшпе уйрăмах кăткăс задачăсем кăларса тăратать.

Сĕнекен пособие чăваш ача сачĕсенче ĕçлекен педагогсене пулăшма тесе калапланă. Унта иккĕмĕш кĕçĕн ушкăнри ачасене илемлĕ литературăпа паллаштарассин тĕллевĕпе задачисене, ĕç формипе меслечĕсене, шалашне палăртнă, ĕç йĕркеленĕвне çырса кăтартнă. Кунпа пĕрлех пособире ĕç йĕркеленĕвĕн тĕслĕх конспекчĕсене те тăратнă.

Авторсем ку кăларăм педагогсемшĕн самай пысăк пулăшу пуласса шанаççĕ.

# ИККĔМĔШ КĔÇĔН УШКĂНРИ АЧАСЕНЕ ИЛЕМЛĔ ЛИТЕРАТУРĂПА ПАЛЛАШТАРАССИ

Ачасене тăван пуплев, литература хайлавĕсен илемлĕхне илтме-туйма мĕн пĕчĕкрен вĕрентмеллине нумай педагог, психолог, лингвист палăртнă (К.Д. Ушинский, Е.И. Тихеева, Е.А. Флерина, Л.С. Выготский, А.М. Шахнарович, Л.И. Айдарова тата ыт.те).

Илемлĕ литература пĕчĕк ачана çут çанталăк вăрттăнлăхĕсемпе, çынсем хушшинчи хутшăну-çыхăнусемпе паллаштарать, туйăм тĕнчине алăк уçать. Сăвă-юрă, юмах-калав итленĕçемĕн ачан ăс-тăнĕ çивĕчленсе пырать, шухăш вĕçевĕ (воображение) папкаланса çунатланать, туйăмĕсем пуянланаççĕ. Ача майĕпен тăван пуплев тытăмĕпе кĕввине туйма пуçлать.

Илемлĕ литература ача пурнăçне çуралсанах кĕрет те тăршшĕпех унпа юнашар пулать. Çапах ачана илемлĕ литературăпа паллашма ятарласа хатĕрлемелле. Çапла çеç ĕç ăнăçлă пулать. Ачасене илемлĕ хайлавсене содержанийĕпе тытăмĕ тĕлĕшĕнчен пĕрлĕхлĕ йышăнма куллен, системăллă вĕрентсе пымалла. Кунпа пĕрлех хайлав чĕлхин пуянлăхне – сăвă-такмакри, юмахсемпе калавсенчи сăнарлăх хатĕрĕсене те – мĕн пĕчĕкренех тимлеттерме пуçламалла. Çавăн пек ачасем майĕпен паллашнă хайлавсенчен хăйсене хăшĕсем килĕшни-килĕшменнине уйăрма та сĕмленсе пыраççĕ.

Кĕçĕн çулхи ачасемпе ĕçлекен педагогăн тĕп тĕллевĕ – пепкесене илемлĕ хайлавсене кăмăлласа итлеме-йышăнма, кĕнекене юратса тирпейлĕ тыткалама вĕрентме пуçласси. Ку çулхи ачасене тĕрлĕ жанрлă хайлавсемпе паллаштарма пулать. Çак ĕç кăткăс, тĕрлĕ енлĕ. Тĕпчевçĕсем ку ӳсĕмри ачасен илемлĕ хайлавсене йышăнас çак уйрăмлăхне палăртаççĕ: вĕсен шухăшлавĕ конкретлă, пурнăç опычĕ питех те пĕчĕккĕ пулнипе вĕсем хайлавсенчи ĕçсене пурнăçри пек йышăнни. Çавăнпа ачан илемлĕ литература хайлавĕсемпе киленме вĕренсе çитиччен вăрăм çул-йĕр утса тухмалла.

Литература хайлавĕсене тытăмĕ тата шалашĕ тĕлĕшĕнчен пĕрлĕхлĕ йышăнма-тишкерме вĕренсе пынă май ачан пуплев ăславлăхĕ, пултарулăхĕ те аталанма пуçлать. Вăл калав-юмах, сăвă кăмăлласа итленĕ хыççăн, педагог хавхалантарнипе хăй те хайлама сĕмленет. Ятарласа тимлесен унăн поэзи сисĕмĕ те амаланма тытăнать. Вăл сăнарлăх хатĕрĕсене туйма пуçлать. Çакă вара пуплев ăславлăхĕн атланăвĕшĕн никĕс пулать. Ĕç ăнăçлăхĕ, паллах, ку тĕлĕшпе куллен ятарласа мĕнле ĕçленинчен килет.

Кĕçĕн ушкăнри ачасен итлев картине тĕрлĕ жанрлă хайлавсем кĕреççĕ терĕмĕр. Ку ӳсĕмри ачасене ача-пăча сăмахлăхĕн вак жанрĕсен тĕслĕхĕсемпе, юмахсемпе, калавсемпе паллаштарма пулать. Вĕсем кун пек хайлавсене тимлесе итлеççĕ, ĕç-пуç йĕркине сăнаççĕ, геройсемпе пĕрле савăнаççĕ, пăшăрха-

наççĕ. Хайлавсемпе паллашнă май вĕсен чĕлхине те (сăнарлăх хатĕрĕсене) ятарласа сăнаттармалла. Хăйсем кăмăлланă, уйрăмах асра юлнă е темиçе хут каланă сыпăксене, хайлавра тĕл пулакан сăвă-юрра педагог хыççăн евĕрлесе асăмлама хавхалантармалла.

Тĕслĕхрен, «Упапа хĕр ача» юмаха вуланă май ачасем чее Машукпа упа-у-таман сăмахĕсене çăмăллăнах ас туса юлса асăмлама пултараççĕ.

Упи: «*Тунката çине ларам,*
*Пĕр кукăльне çием!..»* – тет.
Хĕр ачи: «*Куратăп, куратăп! Тунката çине ан лар, кукăльне ан çи!»* –тет.

Юмах содержанине аса хывнă май ача геройсен сăмахĕсене педагог хыççăн, хăй тĕллĕн те калама вĕренет. Малтанах вăл, паллах, педагог интонацине евĕрлет. Майĕпен пуплев кĕввине, геройсен интонацине хăй тĕллĕнех тытса пыма вĕренсе пырать. Халăх сăмахлăхĕн хайлавĕсем ачашăн пуплев ритмĕн, кĕввин, сăнарлăхĕпе туйăмлăхĕн паха тĕслĕхĕсем пулаççĕ. Ку хай-лавсенчи геройсене ача çăмăллăнах ăса хывать, асăмлать.

Тĕпчевçĕсем кĕçĕн ушкăнра ачасене калăпăшĕпе пысăках мар, содержа-нийĕ тĕлĕшĕнчен ансатрах калавсем, сăвăсем вуласа (каласа) пама сĕнеççĕ. Ансат сюжета ача çăмăллăнах ăнланать, хăйсен опытне çывăх ĕç-пуç çинчен каланине кăмăллăн, туйăмлăн йышăнать, аса юлнă йĕркесене хаваслансах педагог хыççăн калать. Тĕпчевçĕсем кĕçĕн çулхи ачасем уйрăмах сăвăлла хайлавсене кăмăлланине палăртаççĕ. Вĕсене ритм, рифма, сăвă кĕвви илĕр-тет. Сăвва темиçе хут каланă май ачасем уйрăм йĕркесене астуса юлма, хава-слансах хăйсем калама пуçлаççĕ. Вĕсен пуплевĕ çĕнĕ сăмахсемпе, калаçу çаврăнăшĕсемпе пуянланать.

## Иккĕмĕш кĕçĕн ушкăнри ачасен илемлĕ хайлавсене йышăнассин уйрăмлăхĕсем

Вырăссен паллă тĕпчевçисем (Л.М. Гурович, Л.Б. Береговая, В.И. Логи-нова) 2-3 çулхи ачасен илемлĕ литература хайлавĕсене йышăнассин çак хăй евĕрлĕхĕсене палăртаççĕ.

Ку ўсĕмри ачасем илемлĕ хайлавра сăнлакан ĕç-пуçа хăйсен опычĕ шай-ĕнчен пăхса чăн пурнăçри пек йышăнма пултараççĕ. Пурнăç опычĕпе шайла-шакан фактсене вĕсем çăмăлах, тĕрĕс ăнланаççĕ, хăйсен опычĕпе тӳр килмен-нисене вара тăтăшах тĕрĕс мар йышăнаççĕ. Хăш чухне самай ансат пулăмсе-нех хăйсем майлă кураççĕ. Çапах та ку ўсĕмри ачасен пирвайхи литература опычĕ калăпланма пуçланине те палăртмалла. Çакă вĕсене хайлав содержа-нине ăша хума пулăшать. Илемлĕ текста тарăнрах ăнланма, сăнарсемпе пулăм-сене (геройсемпе событисене) асăмлама вĕсене иллюстрацисем пулăшаççĕ.

Илемлĕ хайлава вуланă май ку ўсĕмрисем пĕр-пĕрин хыççăн çыхăнуллă, йĕркипе аталанса пыракан ĕçсемпе хутшăнусене çăмăлрах ăнланаççĕ.

Çавăнпа вĕсене паллаштаракан хайлав сюжечĕ ансат та уçăмлă пулмалла.

Илемлĕ хайлавпа паллашнă чухне ачасемшĕн тĕпре унти сăнар пулать. Вĕсем геройсене питех те туйăмлă йышăнаççĕ. Хăйсем ырă тесе шутлакан геройшăн, ырри усаллине çĕнтернĕшĕн питĕ савăнаççĕ. Ĕç-пуç мĕнле аталанса пыни кăмăла каймасан унти пулăмсене улăштарма хăтланаççĕ, ыррисене мĕнле те пулин пулăшма ăнтăлаççĕ.

Тĕпчевçĕсем ку ӳсĕмри ачасен ритм, рифма туйăмĕ пысăк пулнине палăртаççĕ. Вĕсем прозăлла хайлавсенчен ытларах сăвăсем итлеме кăмăллаççĕ, хăйсем те хавасланса калаççĕ.

## Иккĕмĕш кĕçĕн ушкăнри ачасене илемлĕ литературăпа паллаштарассин тĕллевĕсемпе задачисем

– Ачасене программăра пĕрремĕш кĕçĕн ушкăнра паллаштарма палăртнă илемлĕ хайлавсене вуласа парасси;

– çĕнĕ юмахсемпе калавсене, сăвăсене тимлесе итлеме, ĕç-пуç мĕнле аталанса пынине сăнама, хайлаври геройсемшĕн савăнма-пăшăрханма вĕрентсе пырасси. Ачасене сăнарсен хăтланăшĕсене, мĕн пулса тухма пултарнине ăнлантарасси. Хайлавсенчи кăсăклăрах, çивĕч самантсене çырса кăтартнисене асăмланă май вĕсене уйрăм сăмахсемпе пуплев çаврăнăшĕсене каласа пĕтерме май парасси;

– халăх юмахĕсенчи пысăках мар сыпăксене воспитатель пулăшнипе выляса кăтартма вĕрентесси;

– пысăках мар йăпатмăшсемпе сăвăсене пăхмасăр калама вĕрентесси;

– ачасен кĕнекепе кăсăкланас туйăмне малалла амалантарса пырасси. Вĕсемпе вуланă кĕнекесенчи ӳкерчĕксене тăтăш сăнасси, иллюстрацисем çинчен ачасемшĕн илĕртӳллĕ каласа парасси, вĕсене хăйсен кăмăлне палăртма хавхалантарасси.

## Иккĕмĕш кĕçĕн ушкăнри ачасенчен çулталăк вĕçĕнче кĕтекен результатсем

**Çителĕклĕ шай.** Илемлĕ хайлавсене итлеме хавасланса килĕшет: аслисене вуласа пама ыйтать;

– пĕлнĕ тата çĕнĕ сăвăсемпе калавсене, юмахсене кăсăкланса итлет;

– итленĕ хайлавсен содержанине кĕнекери ӳкерчĕксемпе педагог ыйтăвĕсем çине тĕревленсе каласа пама пултарать;

– хайлаври пĕр-пĕр сыпăка итлесе ун ятне калама пултарать;

– калăпăшĕпе пысăках мар ансат сăвăсене хăй тĕллĕн е аслисем кăшт пулăшнипе пăхмасăр калать;

– илемлĕ хайлавсем тăрăх йĕркеленĕ ăславлă ĕçсене (ӳкерни, выляса кăтартни) хаваспах хутшăнать.

**Çителĕксĕр шай.** Аслисем илемлĕ хайлавсем вуласа пама сĕннине хăлхана чикмест;

– итленĕ хайлавсен содержанине сӳтсе явма килĕшмест, панă ыйтусене пĕр сăмахпа хуравлать;

– илемлĕ хайлавсем итлесси ăна хаваслантармасть, вăййсене хутшăнас кăмăлĕ те пысăках мар.

## Ачасене литературăпа паллаштарас ĕçе хăш самантсенче ирттересси, ĕç формисем, усă курма сĕнекен меслетсемпе мелсем

Кĕçĕн çулхи ачасене илемлĕ литературăпа паллаштарасси вĕренӳ ĕç-хĕлĕн тĕрлĕ самантĕнче пулса пырать, ĕçе тĕрлĕрен йĕркелеме пулать:

– педагогпа ачасен пĕрлехи ĕçĕ-хĕлĕнче (ĕçе ушкăнпа, çурма ушкăнпа, пĕчченшерĕн йĕркелеме пулать);

– режим саманчĕсенче (ĕçе ушкăнпа, çурма ушкăнпа, пĕчченшерĕн йĕркелеме пулать);

– ачасен харкам ĕçĕ-хĕлĕнче (ĕçе пĕчченшерĕн, пĕчĕк ушкăнпа, мăшăррăн йĕркелеме пулать);

– педагогпа çемьен пĕрлехи ĕçĕ-хĕлĕнче (ĕçе ушкăнпа, çурма ушкăнпа, пĕчченшерĕн йĕркелеме пулать).

Усă курма сĕнекен меслетсемпе мелсенчен çаксене палăртса хăвармалла: каласа пани, вуласа пани, иллюстраци сăнаттарни, калаçу, рольпе вулани, моделировани, ӳкерчĕксем сăнаттарни, ачасемпе выляни, хайлава итлеме хатĕрлекен дидактика вăййисем, ачасен литература опытне çирĕплетме май паракан вăйăсем, фланелеграф çинчи театр, тетте тата ĕмĕлке театрĕсем, ачасене хайлавсене драмăласа выляса кăтартма явăçтарни, литературăпа юрăкĕвĕ вăййисем.

## Шкулчченхи вĕренӳ организацийĕ ачасене илемлĕ литературăпа паллаштарас тĕлĕшпе çемьепе килĕштерсе ĕçлесси

Ачапа кашни кун кĕнеке куласси, унти ӳкерчĕксене пăхасси йăлана кĕрсе пымалла. Ачан режимĕнче çакăн валли ятарлă вăхăт уйăрмалла. Вăл çак вăхăта кĕтме пуçлатăр. Итленĕ чухне ăна нимĕн те чăрмантармалла мар. Пепке нумай вăхăт тимлесе итлеме пултарайманнине те шута илмелле. Вуласа панă май ачана ыйтусене хуравлаттармалла, вăл е ку сăмахсене евĕрлеттерсе калаттармалла, паллана хайлавсене пĕрле аса илмелле. Пĕлекен юмахсене калаттарма юрать.

Ача ыврăннине сиссен – выляса илмелле. Хайлавсене пĕлнине çирĕплетес тĕллевпе вĕсене тĕрлĕ самантра тăтăш аса илме майсем туса памалла: теттесене пуçтарнă, йăвалана, каскаласа çыпăçтарнă, ӳкернĕ чухне.

Ачапа час-час кĕнеке лавккине кĕрсе капăр кĕнекесем тытса пăхни, суйлани, библиотекăна кайни питĕ аван.

Кĕнекене перекетлĕ тыкалас культурăна çирĕплетсе пымалла. Кĕнеке çине çырма, сăрлама юраманнине ачан çирĕп пĕлсе тăмалла.

Кĕнекесене ача хăй тĕллĕн илме май пур вырăнта упрамалла.

### Иккĕмĕш кĕçĕн ушкăнри ачасен итлев-вулав карти

Кĕçĕн çулхи ачасене паллаштармалли хайлавсене суйласа илесси – пĕлтерĕшлĕ те кăткăс задача. Пепке мĕнле хайлавсем итлесе çитĕнни унăн малашнехи литература аталанăвне питех те пысăк витĕм кӳрет. Ачасене вуласа пама мĕнле кĕнеке суйлани вĕсен харкамлăх йĕркеленĕвĕшĕн те пĕлтерĕшлĕ.

Кĕçĕн çулхи ачасене вуласа пама мĕнле хайлавсем суйласа илмеллине палăртнă чухне меслетçĕсем (Гурович Л.М.) çаксене шута илме сĕнеççĕ.

**Ачасене паллаштарма сĕнекен хайлавсем ӳнер пахалăхĕ тĕлĕшĕнчен çӳллĕ шайра пулмалла.** Хайлав идейи унăн содержанийĕпе тачă çыхăнса тăмалла, форми хайлав идейине витĕмлĕрех палăртма май памалла. Автор тĕнче çине мĕнле куçпа пăхни, кăмăл-сипетпе шухăш-кăмăл, ăс-хакăл пахалăхĕсем хайлавсен содержанийĕнче ӳкерĕнеççĕ. Тĕрĕс суйласа илнĕ илемлĕ хайлавсем ачасен ăс-хакăлĕнче тавраш тĕнче çинчен хăйне евĕрлĕ пĕлӳсем калăплама май пареççĕ: çакна пурнăçлама унти сăнарсем, ăнлавсем, идейисем пулăшаççĕ.

**Хайлав идейи кăмăл-сипет задачисене пурнăçлама май памалла**. Кĕнеке ачана çынсене тĕрĕс хаклама: ырăпа усала, тĕрĕслĕхпе тĕрĕсмарлăха уйăрма вĕрентмелле. Çынсене, харкама хисеплес мехеле аталантарса пымалла. Ачасем валли çырнă чаплă хайлавсем ытлашши вĕрентсе каламасăр вĕсен тĕнчекурамне калăплаççĕ, таврари чăнлăха тĕрĕс йышăнма-хаклама хăнăхтарса пыраççĕ. Çыравçăсем идея тĕлĕшĕнчен çӳллĕ шайри хайлавсем урлă ачасене кăмăл-сипет хаклăхĕсене (ориентирĕсене) харпăрлама пулăшаççĕ.

**Кĕçĕн çулхи ачасен итлев-вулав карти тема тата жанр тĕлĕшĕнчен анлă та пуян пулмалла.** Ачана мĕн пĕчĕкрен илемлĕ литература жанрĕсен пуянлăхне уçса памалла. Ку вăл вĕсен вулавçă интересĕсене анлăлатма, харкамăн литература туртăмĕсене тарăнрах уçăмлатма май парать.

Хальхи чăваш ача-пăча литератури ачасене проза тата поэзи, халăх сăмахлăхĕн хайлавĕсемпе анлă тивĕçтерет. Вăл халăх юмахĕсемпе, тупмалли юмахсемпе, юрă-такмакпа, автор сăвви-калавĕпе пуян. Çапла вара пепкесен тĕрлĕ туртăмне тивĕçтерме май пур.

Кĕçĕн çулхи ачасем ытларах сăвăсем, çавăн пекех халăх тата автор юмахĕсене юратнине те шута илмелле. Ачасен итлев-вулав картине сăвăсемпе юмахсем те çителĕклĕ кĕртмелле.

Тематика тĕлĕшĕнчен пăхсан хайлавсем ăспару задачисене пурнăçлама май памалла, ачасен кăмăл-сипет системине, тĕнчекурамне йĕркелеме пулăшмалла. Ачасене таврари япаласем, ӳсен-тăран тата чĕр чун тĕнчи, çут çанталăкри пулăмсем, ачасен хутшăнăвĕсем çинчен вуласа памалла. Кĕçĕн çулхи ачасен илемлĕ хайлавсем урлă Тăван çĕршыв, тăван тавралăх, уйрăм этем тата этемлĕх çинчен пуçламăш ăнлавсем çуралса калăпланса пыма майсем уçăлмалла.

**Ачасене паллаштарма сĕнекен хайлавсем вĕсен ӳсĕмне тивĕçмелле.** Çакна шута илсе, çитĕннисен кĕçĕн çулхи ачасене паллаштарма хайлавсем суйланă чухне вĕсен пурнăç опычĕ тĕпре пулмалла. Çав вăхăтрах ачасене çӳлерех шая çĕклеме пулăшакан аталантару çĕнĕ задачисене те асра тытмалла. Ачасен пĕтĕмĕшле тата литература аталанăвĕ ӳссе пынă май вĕсем шухăшĕ тата тытăмĕ тĕлĕшĕнчен кăткăсрах хайлавсене йышăнма пултарнине те манмалла мар. Çапла вара, ачасен ӳсĕм шайне шута илни вĕсен литература аталанăвне малалла çĕклеме май памалла.

Иккĕмĕш кĕçĕн ушкăнри ачасене паллаштарма сĕнекен хайлавсен шутĕнче çаксене палăртма пулать.

Чăваш халăх юмахĕсем, сăввисем: «Сармантей», «Çарăк», «Йăва» «Кермен», «Кашкăрпа качака» (А. Толстой илемлетнĕ, И. Тукташ чăвашла куçарнă), «Нарт-нарт кăвакал», «Куй-куй куян тус», «Мекекек качака!», «Кач-кач качака», «Уяр, уяр», «Пукани, пукани», «Ку-у, ку-у, кулькисем», «Хĕвел, пăх, хĕвел, пăх!», «Тух-ха, Ванюк, пирĕн ума», «Автан», «Тăр-тăри», «Качакапа упа».

Чăваш авторĕсен хайлавĕсем: Е. Афанасьев. «Сана супăнь парас-и?», «Илтĕм эп кушак валли». Н. Васильев. «Сарă чăх», «Чăх чĕпписем», «Кăркка». Н. Васанкка. «Кăсăя», «Качака», «Сысна çури», «Ав, кăмака умĕнче», «Меук, меук, Меукка!». В. Давыдов-Анатри. «Панулми», «Шыв юхать», «Параппан», «Тимĕр шапа», «Тетте», «Тилĕ тус». А. Ильин. «Ленăпа Кампур». Н. Карай. «Шапа», «Кам вăл?» И. Малкай. «Куккук килчĕ». П. Эйзин. «Пӳрт умĕнче йăмра пур», «Вĕçрĕ анчĕ сарă чăх», «Хĕл Мучи хутаçĕнче», «Мĕн тума», «Автан тус, автан тус...» «Пĕчĕк Лена». И. Тукташ. «Чĕрĕп чĕппи хăнаран таврăнни», «Чăпар чăхпа чĕппisем». Н. Ишентей «Чуччу кашти хурама». И. Яковлев. «Уçăлма тухнă шăши çури».

Ытти халăх çыравçисен хайлавĕсем: Г. Цыферов. «Юмах», «Уйăх», «Шапасем чей мĕнле ĕçнĕ». Я. Тайц. «Кăранташ», «Тилĕ».

С. Прокофьева. «Хăçан макăрма юрать?», «Пĕрремĕш çырласем çинчен калакан юмах».

# МЕСЛЕТЛĔХ СĔНĔВĔСЕМ

## Иккĕмĕш кĕçĕн ушкăнри ачасене илемлĕ литературăпа паллаштарас ĕç йĕркеленĕвĕ

3-4 çулхи ачасене паллаштарма сĕнекен илемлĕ хайлавсен списокĕ самай пысăк.

Çапах ку çулхисене илемлĕ литературăпа паллаштарас ĕçе мĕнле йĕркелессине планланă чухне вĕсем хальччен хайлавсенчен хăшĕсене итленине шута илмелле. Тĕслĕхлĕ программăпа килĕшӳллĕ икĕ çулхисене ача-пăча ансат сăвви-такмакĕпе, юмахĕсемпе, чăваш тата вырăс çыравçисен пысăках мар, содержанийĕпе хăйсене ăнланмалла сăвви-калавĕпе паллаштарнă. Çĕнĕ вĕренӳ çулне шăпах вĕсене аса илнинчен пуçламалла та. Аса илĕве вăйăлла йĕркелесен аван. Калăпăр, ачасемпе пуканене çывăрттарнă май сăпка юрри юрла-юрла выляса илме пулать.

Чака-ак, чакак!<br>
Чакак ачи чарусăр,<br>
Пирĕн ачи апла мар:<br>
Паппа тăвать, çывăрать.

Е тата кăнтăрлахи кануран педагог ачасене такмакла-такмакла вăратать:

Пысăк пул, пысăк пул,<br>
Ӳссе маттур ача пул,<br>
Юрлама та ăста пул.<br>
Ташлама та маттур пул.

Юмах каласа панă май унти сăвăсене аса илеççĕ, педагог хыççăн каласа пыраççĕ.

Ушкăнра ку çулччен ача садне çӳременнисем те пулма пултараççĕ. Вĕсемшĕн асăмлакан хайлавсенчен чылайăшĕ çĕнĕлĕх. Кун пек ачасем хăйсем пĕлменнишĕн именеççĕ, ушкăн ĕçне хутшăнма хăймасăр тăраççĕ. Вĕсене кăсăклантарса яма, пĕрле ĕçлеме явăçтарма чылай вăхăт кирлĕ. Малтан çӳренисем вара хăйсене пултаруллăрах, маттуртарах туяççĕ. Вĕсем палланă хайлавсенчи çаврăнăшсене, сăвă-такмака хавасланса асăмлама хăтланаççĕ.

Ĕçе вăйăлла йĕркелесен (сăвă-такмака, юмах-калав сыпăкĕсене ӳкерчĕксемпе, теттесемпе, мĕлке тата сĕтел çинчи театрпа усă курса вылясан) майĕпен пурне те хавхалантарма пулать.

Шел пулин те, хăш-пĕр çемьере аслисем ачасемпе сахал вулаççĕ, çĕнĕ кĕнекесем пĕрле сайра пăхаççĕ. Çавăнпа малтанхи тапхăртах ачасене кĕнекепе кăсăклантарса яма тăрăшмалла. Иккĕмĕш кĕçĕн ушкăнра ятарласа кĕнекесен кĕтесĕ йĕркелесен аван. Унта яланах ачасен ӳсĕмне тивĕçекен (программăра кăтартни те, кăтартманни те) 7-8 кĕнеке пулмаллах. Ку кĕтес ячĕшĕн, илемĕшĕн кăна ан пултăр. Унта ачасемпе куллен, кашни кун ĕçлемелле.

Пĕчĕк ачасенчен чылайăшĕ кĕнекери сăнарсене, ĕç-пуçа куç умне кĕрет

кăлараймасть. Вĕсене курăмлă тĕрĕв кирлĕ. Ку ӳсĕмрисемшĕн ӳкерчĕксем çав тери пĕлтерĕшлĕ. Çавăнпа ачасене хăйсем тĕллĕн пăхма-паллашма сĕнекен кĕнекесем усăмлă, çав вăхăтрах куçа илĕртекен янкăр сăрăсемпе илемлетнĕ иллюстрацисемлĕ пулмалла. Кашни çĕнĕ кĕнекепе паллаштарнă май унти ӳкерчĕксене ятарласа тимлеттеремелле. Педагог калăвĕ яланах хавхаланулла, кăсăклă пултăр. Ăна итленĕ май ачан çак ӳкерчĕксене хăвăртрах хăйĕн пăхас килсе кайтăр. Пĕр вăраннă кăсăклăх ан çухалтăр тесен пĕр вĕçĕм тĕрлĕ мелпе усă курса ӳкерчĕксене тимлеттерсех тăмалла. Тĕслĕхрен, педагог ушкăна хитре ӳкерчĕксемлĕ çĕнĕ кĕнеке илсе килет, ачасене кăтартать. Кĕнеке хуплашкине пăхать, страницисене васкамасăр уçма пуçлать, ӳкерчĕксене сăнать. Ачасене кăтартма васкамасть-ха. Вĕсем кĕнекепе кăсăкланма пуçласан унти сăнарсем çинчен хайлав йĕркисене вуласа парать:

– Качака тус, салам! Ăçталла васкатăн?

– Салам, Улайкка! Пахчаналла васкатăп-ха...

Хайлава сăнлакан ӳкерчĕке киленсе пăхать, мухтаса илет: «Ах, качаки мĕнлерех, Улайкки тата...».

Ачасем ӳкерчĕкне курасшăн хыпăнаççĕ. Педагог ӳкерчĕкĕсене халĕ те кăтартмасть-ха, кĕнекене малалла уçать, тепĕр калав йĕркисене вулать:

– Асатте, хырăм выçрĕ, – тет пĕчĕк Женя.

– Чăт кăштах, мăнукăм, кĕçех апат пиçĕ, – тет шур сухал ачана пуçĕнчен шăлса... *(Лидия Сарине. «Наçтукпа Мухтар».)*

Питĕ курасшăн «çунма» пуçласан тин педагог ӳкерчĕксене ачасемпе пăхма тытăнать. Хăш чухне вăл ӳкерчĕкри геройсем çинчен тупмалли юмахсем, такмаксем калать. Çапла ачасене илĕртет.

Хушăран ачасемпе ушкăн тăрăх «çул çӳреве» тухма та пулать. Пӳлĕмрен пӳлĕме çӳренĕ май кĕнекесен кĕтесĕ патĕнче ятарласа чарăнмалла. Унта мĕнле илĕртмĕшсем пуррине тимлеттермелле, кĕнекесене тытса пăхма, ӳкерчĕкĕсене сăнама хавхалантармалла.

Тĕпчевçĕсем кĕçĕн çулхи ачасем сăвăллă, кĕвĕллĕ пуплеве кăмăлланине палăртаççĕ терĕмĕр ĕнтĕ. Кĕвви янравлă, çĕкленӳллĕ пулмалла. Ача-пăча сăмахлăхĕн сăвви-юрри шăпах çакăн пек сăвă-такмакăн паха тĕслĕхĕ пулать те. Ачасем вĕсене хаваслансах итлеççĕ.

Кĕçĕн çулхи ачасем тата выляса кăтартнине юратаççĕ. Халăх хăй пепкисем валли юратса кĕвĕленĕ, ĕмĕрсем хушши якатса капăрлатнă сăвă-юрă вара хăйсемех пĕчĕккисемшĕн питех те илĕртӳллĕ спектакль. Ача унта вылякан та, итлекен те, куракан та пулать. Вăл вăйăра сăвăсенчи янравлă çаврăмсене, кĕвви-çеммине аса хурса малтанхи литература опытне пухать.

Çак сăвă-юрăпа усă курса педагог тĕрлĕ вăйă йĕркелеме пултарать. Хăшпĕр хайлавсем хăйсем хатĕр вăйăсем. Тĕслĕхрен, пӳрнесемпе вылямалли ятарлă ансат вăйă-такмаках илер. Ачасем выля-выля пӳрнесене ят хураççĕ, такмакласçĕ:

– Алпике ачисем мĕн ятлă?
– Пĕрремĕшĕ – Пӳрнетей.
Иккĕмĕшĕ – Пӳрнепи.
Виççĕмĕшĕ – Пӳрнемес.
Тăваттăмĕшĕ – Пӳрнехви.
Пиллĕкĕмĕшĕ – Пӳрнекке.

Малтан ачасем педагог каланине итлеççĕ, унтан унпа пĕрле калама хăтланаççĕ: асли пӳрнесене шутласа пырать, ачасем вара ячĕсене аса илсе калама тăрăшаççĕ.

Кĕçĕннисене такмаклама-выляма татах та кăсăклăрах пултăр тесен пӳрнесене ячĕсене кура «тумлантарсан» питĕ аван.

Пӳрнесемпе выляса калаçни те кĕçĕн çулхи ачасемшĕн илĕртӳллĕ пулмалла:

Пӳрнесем калаçаççĕ тет.
Пуç пӳрне: «Кулач илсе çиесчĕ».
Шĕвĕр пӳрне: «Укçа çук-çке...»
Вăта пӳрне: «Кивçен илес»
Ятсăр пӳрне: «Илсен парасси».
Кача пӳрне: «Çиес те тарас!».

Такмакланă май педагог пĕр-пĕр ачан хуçлатнă пӳрнисене уçа-уçа пырать.

Çакăн евĕрлĕ выляса кăтартма меллĕ сăвă-такмак ача-пăча сăмахлăхĕнче сахал мар.

Сăнар çумне сăнар хушăнса сыпăнса пыракан, пуплешӳллĕ хывнă сăвăсем те ку ӳсĕмри ачасемшĕн илĕртӳллĕ. Вĕсен сюжечĕ ансат, пуплевĕ кĕвĕллĕ, янравлă. Сăнарĕсем ачасене çывăх. Вĕсене ушкăна хăнана чĕнме те, туссемпе калаçнă пек кăмăллăн пуплешме те пулать:

– Кушак тус, кушак тус,
Ăçта кайрăн, кушак тус!
– Куками патне.
– Мĕн тума кайрăн?
– Хăнана кайрăм...

Ку ӳсĕмри ачасем таврари япаласемпе, пулăмсемпе кăсăкланма пуçлаççĕ. Вĕсемшĕн пурте интереслĕ: вĕл-вĕл вĕçекен лĕпĕшĕ те, шуса иртекен ăманĕ те, чечекĕ-курăкĕ те, кĕмсĕрти аслатийĕ те... Таврари пурнăçпа паллашнă май ачасене çут çанталăкри пулăмсене, чĕр чунсене мĕн те пулин хушса-ыйтса вылямалли сăвă-такмакпа паллаштарма меллĕ. Кусем питех те ансат, янравлă сăвăсем. Вĕсене выранлă каламалли сăлтавĕ те тупăнсах тăрать. Акă ачасем уçăлма тухнă, пĕри уяр тупнă, хавасланса ыттисене кăтартма васкать. Педагог та вĕсем патĕнчех, уяра алă тупанĕ çине лартса çапла такмаклать:

Уяр! Уяр!
Уяра – уялла,
Çумăр çусан – килелле.
Вăр-р-р!

Уярӗ вӗссе каймасан ӑна пӗр ачин алӑ тупанӗ ҫине лартать те ачине такмаклама хавхалантарать, ыттисене хутшӑнма сӗнет.

Такмакласа калаттарнӑ май педагог асасене сӑвва ансаттӑн пулин те тишкерттерме тӑрӑшать. Ҫут ҫанталӑк пулӑмӗсене, чӗр чунсене сӑвӑра ӗҫне тума тӗрлӗрен чӗнеҫҫӗ. Илӗртсе те:

Хӗвел тух, хӗвел тух!
Ҫупа чӑкӑт ҫитереп!

Хӑратанҫи туса та:

Хӗвел пӑх, хӗвел пӑх!
Ачу шыва кайнӑ!

«*Мӗн каласа чӗнеҫҫӗ?*», «*Мӗнле каласа?*» ыйтусемпе педагог ачасене хӗвеле пӗр хутӗнче илӗртсе, тепрехинче хӑратанҫи туса чӗннине ӑнкарма пулӑшать, еплерех илӗртнине (мӗн те пулин пама пулса), хӑратанҫи тунине сӑнаттарма тӑрӑшать.

Ҫыравҫӑсен сӑввисене те выляса кӑтартсан ачасем вӗсене хӑвӑртрах ӑша хураҫҫӗ, ҫирӗпрех ас туса юлаҫҫӗ. Хайсем те хаваслансах вӑййа хутшӑнаҫҫӗ, сӑвви-такмакне асӑмлаҫҫӗ.

Калӑпӑр, килти чӗр чунсемпе паллашнӑ май педагог вӗсем ҫинчен хайланӑ сӑвӑсене вуласа парать, унтан сӑвва пӗрле выляса кӑтартма йыхравлать.

Тӗслӗхрен, «Кача-кача качаки» сӑвӑпа паллашнӑ май ачасем ушкӑнпа асли хыҫҫӑн качакана «тӗпчеҫҫӗ», сӑвӑ йӗркисемпе килӗшӳллӗ шӑлтӑр-шӑлтӑр мӑйракине пӳрнисемпе туса, тяпписемпе тӑпӑр-тӑпӑр тӑпӑртатса кӑтартаҫҫӗ. Качакийӗшӗн малтан педагог такмаклать, тепрехинче аса илсе асамланӑ чухне ачасене хӑйсене такмаклама хавхалантарать.

**Кача-кача качаки**

– Кача-кача-качаки.
Шӑлтӑр-шӑлтӑр мӑйраки,
Тӑпӑр-тӑпӑр тяпписем,
– Аҫта каян, пӗлтерсем?
– Эпӗ ялти кӗтӳ пуҫ,
Часах килет шурӑмпуҫ.
Ертсе мӗнпур выльӑха
Каяс тетӗп улӑха.
(*Юхма Мишши.*)

Кӗҫӗн ҫулхи ачасене паллаштарма суйласа илнӗ сӑвӑсем пурте калӑпӑшӗпе пысӑк мар. Вӗсен сюжечӗ ансат, сасӑсен кӗвви янравлӑ, калама меллӗ, хӑвӑртах аса хума пулать. Сӑвва ҫирӗп ас туса юлчӑр тесен ачасене ӑна пӗр хутчен ҫеҫ мар итлеттермелле, каласа пӑхтармалла.

Пӗрремӗш хут паллашнӑ чухне ҫӗнӗ сӑвӑ 3-4 хутран кая мар янрамалла. Темиҫе хут ахаль ҫеҫ вӗҫе-вӗҫӗн калани, паллах, йӑлӑхтарать. Кашни хутӗнче ӗҫе илӗртӳллӗ сӑлтавлама тӑрӑшмалла.

Паллашнӑ сӑвва малашне кулленхи ӗҫсемпе тӑрмашнӑ май, тӗрлӗ вӑйӑ-

кулăра, уçăлса çӳренĕ чухне майлă самант тупса педагог хăй калать, ачасене калама ыйтать. Такăнсан, манса кайсан аса илтерет, пулăшать, мухтать.

Ку ушкăнри ачасене паллаштармалли юмахсем те кăткăс мар. Юмахсенчен чылайăшĕнче темиçе хут каламалли сăвă-юрă пур. Кун пек юмахсене выляса кăтартма та, ачасене сăвви-юррине педагог хыççăн калаттарма та меллĕ.

Илемлĕ хайлавсемпе паллашнă, вĕсене тишкернĕ чухне тĕпчевçĕсем (В.В. Гербова, М.М. Алексеева, В.И. Яшина) ĕçĕн виçĕ енне тимлеме сĕнеççĕ.

***Хайлав содержанине мĕнле ăнлантармаллине тишкерни.*** Педагог хайлавпа малтан хăй паллашать: хăш самантсене ача хăех ăнланма пултарнине, хăшĕсене ятарласа тимлемеллине, тишкермеллне асăрхать. Унтан ачасем хайлава кăмăллă, туйăмлă йышăнччăр; содержанине, шухăшне тĕплĕнрех ăнланччăр, геройсене кăмăллаччăр; шӳтлĕ самантсенче хавасланма, кулма-савăнма пĕлччĕр тесен ĕçе мĕнле йĕркемеллине шутлать, ăнаçлă меслетсемпе мелсене суйлать.

***Хайлав чĕлхине тишкерни***. Педагог хайлавпа паллашнă май унăн чĕлхине те тимлĕ тишкерет: сăнарлăх меслечĕсене, илемлĕ çаврăмсене асăрхать, пуплев кĕввине сăнать. Ачасене ятарласа тимлеттермелли, евĕрлеттерсе калаттармалли çаврăмсене, сăвви-юррине палăртать. Илемлĕ литературăн çак паха тĕслĕхĕсене еплерех ачасен пуплев ăславлăхĕн пуянлăхне çавăрмаллине шутлать.

***Хайлава каласа памалли меле суйлани.*** Педагогăн хайлава епле палăртуллă, туйăмлă вуласа (каласа) памаллине те малтанах шутламалла. Çакна май ачасем илемлĕ хайлавсене хăйсен пурнăç опытне кура ăнланнине, унти ĕç-пуçсене чăн пурнăçри пек йышăннине асра тытмалла. Çавăнпа кашни хайлава итлеме ачасене ятарласа, илĕртӳллĕ самантсем йĕркелесе хатĕрлемелле: кăсăкланса кайччăр, кăмăллăн тимлĕ итлеме пултарччăр.

Итленĕ хыççăн вара хайлав содержанийĕ тăрăх ытлашши йăлăхтармалла нумай вăхăт калаçни кирлех те мар. Анчах хайлав жанрне, терминсене асăнмасăр, палăртса хăвармаллах: «Кунта каласа кăтартнă ĕçсем чăннипех те пулма пултараççĕ-и? Ку юмах пулмарĕ-и?»

Уйрăм жанр хайлавĕсемпе паллашнă май лартакан задачăсем кашниййĕнче тĕрлĕрен пулаççĕ. Ĕç тытăмĕ, тĕпрен илсен, çакăн пек пулма пултарать.

Занятин тĕп пайĕ хайлава итленинчен пуçланать. Хайлава вуласа панă хыççăн педагог ачасемпе калаçу ирттерет. Вăл вăрăма ан тăсăлтăр, 5-10 минутран ытла мар.

Калаçу тĕллевĕ – ачасем хайлав содержанине, идейине мĕнле ăнланнине, сăнарлăх хатĕрĕсене епле йышăннине тĕрĕслесси. Ачасемпе калаçнă май педагогăн асăрхануллă пулмалла. Ытлашши ăса вĕрентесрен сыхланмалла. Сăнарлă çаврăмсене евĕрлесе ача хăех пуплев илемне туйса илет, вĕсен тӳрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшне уçăмлама сĕмленет. Сăнарсемпе паллашнă, педагог-

па пĕрле вĕсен хăтланăшĕсене сăнанă май ырри-усаллине уйăрма, ырришĕн савăнма, усаллине сивлеме вĕренсе пырать.

Заняти ку тапхăрĕнче тĕрлĕ мелпе усă курма пулать: ăнлантарни, ыйтусене хуравлаттарни, уйрăм сыпăксене тепĕр хут вулани, хайлаври самантсене выляни, ӳкерчĕксене сăнани.

Кĕçĕн тата вăтам ушкăнсенче меслетçĕсем (О.С. Ушакова, Н.В. Гавриш) хайлав сыпăкĕсене тишкернĕ чухне моделировани меслечĕпе те анлă усă курма сĕнеççĕ.

Занятин юлашки пайĕ – кĕске те ансат пĕтĕмлетӳ. Ăна çапла йĕркелеме пулать: «Эпир паян мĕнле хайлавпа паллашрăмăр? Ку хайлав кам (мĕн) çинчен? Сирĕншĕн мĕн кăсăклă пулчĕ? Пуринчен ытла мĕн асра юлчĕ?»

Малтанласа педагог хăй пĕтĕмлетет, каярахпа ачасене те явăçтарать.

Çапла вара, заняти вăхăчĕн чи пысăк тӳпи хайлав тексчĕпе ĕçлессипе çыхăнать.

Илемлĕ хайлава йышăнасси, ăша хурасси кĕçĕн çулхи ачасемшĕн ансат ĕç мар. Хайлава мĕн таран ăнланасси пурнăç опытĕнчен килет. Чылай чухне хайлавсенче çырса кăтартакан ĕç-пуç ачан пурнăçĕнче халиччен пулман пулăмсемпе, япаласемпе çыхăннă. Кĕçĕннисем хайлава тĕрĕс ăнланччăр тесен вĕсене ăна итлеме ятарласа хатĕрлемелле. Çакна тĕрлĕрен тума пулать. Мĕнле мелпе усă курасси ытларах хайлав уйрăмлăхĕсенчен килет. Ку вăл кĕнекери ӳкерчĕксене сăнани те, калаçу та пулма пултарать. Çутçанталăк çинчен калакан сăвă-калавпа паллаштарас умĕн ачасемпе уçăлма тухни, экскурсине кайни те вырăнлă. Сăнавсем, вăйăсем irttermelle.

Ачасене илемлĕ хайлавсемпе паллаштарасси вĕренӳпе атлантару процесĕпе тачă çыхăнса тăмалла, ун пайĕ пулмалла.

Ачасем кĕнекепе туслашчăр тесен педагогăн çине тăрса ĕçлемелле. Кĕçĕннисене илемлĕ литература тĕнчине илентерес тесе кунран кун тăрăшмалла.

### Ача садĕнче вулав кĕтесне йĕркелесси

Шкул çулне çитменнисен вĕренĕвĕн çĕнĕ стандарчĕсем вăя кĕнĕ тапхăрта вĕренӳ программисенче палăртнă тĕллевсемпе задачăсене тивĕçлĕ пурнăçлас тесен ача сачĕнчи мĕнпур ĕç йĕркеленĕвне çĕнĕлле пăхмалла. Вăл шутра вĕренӳпе аталантару уçлăхне (предметно-развивающая среда) йĕркелессине те. Шкулчченхи тапхăр ача аталанăвĕшĕн çав тери пĕлтерĕшлĕ вăхăт. Ку ӳсĕмре унăн харкамлăх пахалăхĕсен никĕсĕ калăпланать. Пĕлсе, тĕплĕн шутласа йĕркеленĕ вĕренӳпе аталантару уçлăхĕ ачан хăйтĕллĕнлĕхне ăнăçлăрах аталантарма пулăшать. Педагога кулленхи ĕçре кашни ачан харкамлăх, кăмăлтуртăм уйрăмлăхĕсене, интересĕсене шута илме май парать.

Ачасем садра яра кун irttereççĕ. Вĕсене выляма-савăнма, канма, хăйсем кăмăлланă ĕçпе тăрмашма хатлă пултăр тесе ушкăн пӳлĕмне чикĕленĕ уйрăм

лаптăксем, кĕтессем (зонăсем) çине пайлама сĕнеççĕ. Çак кĕтессен шалашĕ çулталăк тăршшĕпе тематикăлла ĕç планĕпе килĕшӳллĕ улшăнса тăмалла. Пӳлĕме епле пайлассине педагог ачасен ӳсĕмне кура хăй шутлать пулин те унăн программăра палăртнă вĕренӳ облаçĕсен содержанине шута илмелле. Çавăнпа иккĕмĕш кĕçĕн ушкăнри ачасен пӳлĕмĕнче кĕнекесен кĕтесĕ те пулмалла. Ăна ăçта вырнаçтарасси, мĕнле йĕркелесси питех те яваплă ыйту. Меслетçĕсем ку пĕлтерĕшлĕ ĕçре педагогика принципĕсене тĕпе хума сĕнеççĕ.

***Улшăнулăх (трансформируемость) принципĕ.*** Çакă кĕнекесен кĕтесне вăхăтран вăхăта вырăнĕ-йĕркипе те, шалашĕ тĕлĕшĕнчен те хăвăрт улăштарма май парать. Кĕтесре сĕтел-пуканĕ те меллĕ пулмалла: ачасем вĕсене çăмăллăнах хускатма, куçарса лартма пултарччăр. Çакăнтах вăл е ку хайлава выляса кăтартма та май пултăр. Калăпăр, ачасем хайлава итлеççĕ, ӳкерчĕкĕсене пăхаççĕ, кунтах выляса та кăтартаççĕ.

***Вариативлăх принципĕ.*** Кĕнекесен кĕтесĕнчи материал вăхăтран вăхăта улшăнса тăмалла. Çавăнпа вăл содержанийĕ тĕлĕшĕнчен пуян, тĕрлĕ енлĕ пулмалла. Чăн малтан кĕнекесен кĕтесĕнче мĕнле литература пулассине шутламалла. Пĕчĕк библиотека жанр тĕлĕшĕнчен анлă пултăр. Ачасем кунта тĕрлĕ халăх ача-пăча сăмахлăхне, çыравçăсен калавĕ-юмахне тытса пăхма, ӳкерчĕкĕсене сăнама, кăмăл пулсан аслисене вуласа пама ыйтма пултарччăр. Кунтах ачасен ӳсĕмне тивĕçекен тĕрлĕ энциклопеди, ача-пăча журналĕсем пулсан та аван.

Кĕçĕн çулхисем, пĕтĕмĕшле илсен, ăславлă, таврари çынсемпе хутшăнма хавас ачасем. Хăйсем курни-илтни çинчен те хавхалансах каласа параççĕ. Çакна шута илсе кĕнекесен кĕтĕсĕнче ачасем валли хăйсене кăмăла кайнă хайлавсем çинчен ӳкерме ятарласа альбом тытсан та тĕрĕс пулĕ. Альбомра мĕн, мĕнле ӳкермеллине, ăна епле тыткаламаллине, паллах, ачасене малтан педагог вĕрентет. Малтанхи ӳкерчĕкĕсене пĕрле ăсталасан та аван. Е педагог хăй ӳкерет. Кайран та ачасем альбома мĕнле тытнине, вĕсен ӳкерчĕкĕсене пăхса-сăнасах тăрать, интереслисене палăртать, мухтать, ушкăнри ытти ачасене тимлеттерет.

Ача ачах: тирпейлĕ, асăрханулла пулма тем пек вĕрентсен те вăл кĕнекене ăнсăртран çурма, варалама пултарать. Кун пек чухне вĕсене хăйсен йăнăшне тӳрлетме мĕн пĕчĕкренех вĕрентсе, хăнăхтарса пымалла. Ку тĕллевпе кĕтесре «Кĕнекесен сыватмăшне» йĕркелесен аван. Аслисем пулăшнипе ача çурăлса кайнă страницăна çыпăçтарма, лăпăрчăкне тасатма пултартăр.

***Çителĕклĕх принципĕ.*** Кĕнекесен кĕтесне вырнаçтаракан литература вĕренӳпе аталантару программин содержанийĕпе килĕшӳллĕ пулмалли, ăна суйланă чухне ачасен ӳсĕмне шута илмелли паллах. Çакăнпа пĕрлех паллашма суйласа илнĕ хайлавсем ушкăнри ачасен кăмăл туртăмне, ар уйрăмлăхĕсене жанр тĕлĕшĕнчен те, тематика енчен те тивĕçмелле. Кунсăр пуçне

кĕнекепе паллашнă чухне ачан тĕрлĕ анализаторне хута яма майсем туса пама тăрăшмалла. Кĕнекесене алăпа тытса пăхма кăмăллă пултăр. Янкăр сăрăсемпе илемлетнĕ капăр ӳкерчĕкĕсем куҫа илĕртсе хавхалантарччăр, ачасен кăмăлне ҫĕклеччĕр.

***Усă курма меллĕ пулни.*** Кĕнекесен кĕтесне уйрăмрах, ачасем вылякан ҫĕртен инҫерех, шавсăр вырăнта вырнаҫтармалла. Унта ачана хăтлă, лăпкă пултăр. Вăл кĕнекепе айккинелле пăрăнмасăр тимлĕ хутшăнма пултартăр. Вулав кĕтесĕпе юнашар ăславлăх е пĕчченлĕх лаптăкĕсĕсем майлама пулать.

***Хăрушсăрлăх принципĕ.*** Кĕнеке кĕтесне йĕркеленĕ, майланă чухне унăн пур элеменчĕ те шанчăклă пултăр тесе тимлемелле. Ачасен сывлăхне сиен кӳресрен сыхланмалла. Ку кĕтесе ҫутă вырăнта йĕркелемелле. Ҫутă сылтăм енчен (чӳречерен) ӳкмелле. Пур сĕтел-пукан ачасен ӳсĕмне тивĕҫмелле, ачасен сывлăхне сиен кӳмен материалтан пулмалла. Сĕтел-пукана майлаштарса лартнă чухне ачасене пĕр-пĕринпе хутшăнса ĕҫлеме меллĕ пултăр тесе тăрăшмалла.

***Опытлă меслетҫĕсемпе педагогсем кĕнекесен кĕтесне содержанийĕ тĕлĕшĕнчен ҫапла йĕркелеме сĕнеҫҫĕ:***

– сĕтел-пукан: сĕтел, ачасене ларма пукансем, кĕнекесене тăратма стеллажсем;

– тĕрлĕ жанрлă илемлĕ литература хайлавĕсем (кĕҫĕн ҫулхисемшĕн пĕр кĕнеке темиҫе пулни аван);

– ӳнерҫĕ-иллюстраторсем ҫинчен калакан материал;

– дидактика вăййисем (тĕслĕхрен, «Ку сăнар хăш юмахран»);

– тематикăллă альбомсем;

– юмахсене выляса кăтартмалли материал (маска, тутăр-саппун тата ыт. те);

– ачасем валли ӳкермелли альбомсем;

– «кĕнекесен сыватмăшĕ»;

– энциклопеди литератури, ача-пăча журналĕсем;

– ачасен ӳкерчĕкĕсен выставки.

Ҫапла вара кĕнекесен кĕтесĕ тĕрлĕ енлĕ, анлă (вĕренӳ, аталантару, ăспару, йĕркелӳ, хавхалантару, хутшăну) функциллĕ пулмалла. Вăл ачасен юратнă хăтлă вырăнĕ пултăр.

## Иккĕмĕш кĕҫĕн ушкăнри ачасен килти вулав-итлевне йĕркелесси

Ача нумай вăхăт шкулчченхи вĕренӳ организацийĕнче ирттерет пулин те унăн кăмăл-туйăм тĕнчи, тĕпрен илсен, пур пĕрех ҫемьере йĕркеленет. Ҫавăнпа пепкен вулавҫă ҫул-йĕрĕ епле аталанса пырасси те ҫемьери культурăллă хутшăнусенчен питех те нумай килет. Ашшĕ-амăшĕ вулама юратать

пулсан чылай чухне ача та пӗчӗкренех кӗнекене иленет. Ҫемьере аслисем вулас тӗлӗшпе сӳрӗкрех пулсан ача тӑрук хӑй тӗллӗнех кӗнекепе кӑсӑкланса каясси вара иккӗленӳллӗ.

Ачалӑхра вуланӑ юмах-калав пӗчӗк пепке асӗнче, чунӗнче тарӑн йӗр хӑварать терӗмӗр. Ҫавӑнпа ӑна мӗн пӗчӗкренех кӗнекене илентермелле. Ҫак ӗҫре килти вулав пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Мӗншӗн тесен ача ашшӗ-амӑшӗпе пӗрле пур ӗҫе те кӑмӑлласа тӑвать. Аслисемпе ҫума-ҫумӑн пӗрле тӑрмашни ӑна хавхалантарать, хӑйне маттуртарах туйма май парать. Кӑмӑлласа, ҫӗкленӳллӗ туйӑмпа тӑвакан ӗҫ вара яланах ӑнӑҫать.

Килте пӗрле вулани тухӑҫлӑ пултӑр тесен ачана ку хутшӑнӑва ятарласа хатӗрлемелле. Вӑл юратнӑ кӗнекепе тӗл пулас саманта кӗттӗр, вулава хапӑллаcard ласа йышӑнтӑр. Ҫакна тума аслисен майсем сахал мар. Калӑпӑр, ача садӗнчен таврӑннӑ е пӗрле уҫӑлса ҫӳренӗ чухне ачана кӗнекепе тӗл пулма хатӗрлеме самай меллӗ. Вулав валли ача кун йӗркинче ятарлӑ вӑхӑт уйӑрни те ӗҫ ӑнӑҫлӑхне ӳстерет. Аслисем тем тӗрлӗ ӗҫлӗ пулсан та вӗсен ачапа юнашар ларса вулама вӑхӑт тупӑнатех. Вӑхӑтне тӗплӗ шутласа палӑртмалла. Пӗрлехи вулав лӑпкӑ, кӑмӑллӑ лару-тӑрура иртмелле. Никам та ниҫта та васкамасть, нимӗн те чӑрмантармасть. Ача ҫемьери ҫынсемшӗн пуриншӗн те ҫак ӗҫ пӗлтерӗшлӗ, хисеплӗ пулнине туйтӑр.

Меслетҫӗсем 3-4 ҫулхи ачасем 10-15 минутран ытла тимлӗ итлеме пултарайминнине палӑртаҫҫӗ. Кайран вӗсен тимлӗхӗ сӗвӗрлет. Ҫавӑнпа вулакан кӗнеке ачана темле килӗшсен те ӑна вӗҫне ҫитиччен канмасӑр вуланин уссинчен сиенӗ ытларах.

Пӗрлехи вулавра ача сӳрӗк итлекен кӑна пулмалла мар. Ӑна тӗрлӗ мелпе ӗҫе хутшӑнтарма тӑрӑшмалла. Ача асли хыҫҫӑн уйрӑм сӑмахсене калама, ыйтусене хуравлама пултарать. Вуланӑ май пӗрле ӳкерчӗксене сӑнани те аван. Юмахсенчи пуплев ҫаврӑнӑшӗсене, сӑвӑ йӗркисене пӗрле калаттарма пулать. Ҫапла ача илемлӗ хайлавӑн паха тӗслӗхӗсемпе калаҫма ӑнтӑлать.

Пӗчӗк ачасем пӗр хайлавах темиҫе хут итлеме юратаҫҫӗ. Вӗсем тепӗр хут хайлав сюжетне, сӑнарӗсене, унти илемлӗ ҫаврӑмсене аса илсе хӗпӗртеҫҫӗ. Ҫавӑн пекех темиҫе хут вулани вӗсен асне ҫирӗплетет, пуплевне аталантарать. Ҫавӑнпа аслисен чӑтӑмлӑ пулмалла. Ача ыйтсан пӗр хайлавах темиҫе хутчен вулама ӳркенмелле мар. Кашнинчех хавхаланса, тимлесе вуламалла е каласа памалла.

Вӗрентӳ ӗҫӗпе ҫыхӑнман чылай ашшӗ-амӑшӗшӗн ачана сасӑпа туйӑмлӑ вуласа парасси самай кӑткӑс ӗҫ. Вулав чӑннипех те ачашӑн кӑсӑклӑ, илӗртӳллӗ пултӑр тесен меслетҫӗсем (Н.В. Микляева, Т.С. Мишина) ҫак самантсене шута илме сӗнеҫҫӗ:

– ҫемьере кӗнекене тирпейлӗ тытмалла. Ачана та кӗнекене хисеплесе тытма вӗрентмелле. Кӗнеке тетте мар. Унпа пукане ҫурчӗн тӑррине витме

юрамасть, урай тăрăх урапа вырăнне туртса çӳрени те килĕшӳсĕр;

– пĕрлехи вулав палăртуллă, туйăмлă пулмалла. Асли сӳрĕк, пĕр евĕрлĕ йăлăхтармăш вулани ачана та сӳрĕклетет. Унăн вулав аслисемшĕн хăйсемшĕн те интереслĕ пулнине курмалла;

– вулав тăршшĕпе ачапа кĕрет хутшăну тытса пыма тăрăшмалла. Вуланă май аслин ача кăмăлĕ мĕнле улшăнса пынине сăнама пултармалла. Çавăнпа унăн пепкин пит-куç хусканăвĕсене курмалла вырнаçмалла. Кун пек тусан ача хăйне вуласа панине курса-туйса тăрать, асли вара итленĕçемĕн пепкин кăмăл-туйăмĕ епле улшăнса пынине, хăш самантсенче ача ытларах савăнни е пăшăрханнине, хумханнине сăнама пултарать.

– вуласса васкамасăр, хайлав кĕввине палăртса вуламалла. Вулаканăн питĕ тимлĕ пулмалла. Хăçан хăвăрт, хăçан майĕпен вуламаллине пĕлмелле. Хăш самантсенче сасса хăпартмаллине, кашни сăнаршăн мĕнле вуламаллине те тĕплĕн шутламалла. Вуланă май ачасене хăйсем мĕн шутлани, туйни çинчен калаçтармалла. Малалла мĕн пулассине ăнкарма хавхалантармалла.

– хайлав ытла вăрăм пулсан ăна пĕтĕмĕшле вуламасан та юрать. Вĕçне кĕскен каласа пама пулать. Анчах сюжет аталанăвне, хайлав стильне упраса хăварма тăрăшмалла. Çапла тума аслисен хайлава малтан хăйсен тимлĕ вуласа тухмалла, епле кĕскетмеллине тĕплĕ шутламалла;

– вуласа памалли кĕнекене те тимлĕ суйламалла. Юмах-калава каçхине, çывăрас умĕн каласа пама шухăшлатăр пулсан, ăнăçлă вĕçленекеннине суйласа илмелле;

– аслисен ачана кашнинчех ыйтмассерен вуласа пама хатĕр пулмалла;

– çемьере пĕрле кашни кун вулассি йăлана кĕмелле. Ача хăй тĕллĕн вулама вĕренсен те аслисемпе пĕрле вулани питĕ паха. Вăл хăйне килĕшнĕ кĕнекене аслисем те кăмăллани-кăмăлламаннине пĕлесшĕн. Килти библиотека пурте юратса вулакан кĕнекесемпе пуянланса пымалла;

– мĕн пĕчĕкрен ача валли килти библиотека пуçтарма пуçламалла. Унпа час-час кĕнеке магазинне, ача-пăча библиотекине çӳремелле. Туянасса мĕн ал айне лекнине туянмалла мар. Ача кăмăлланă, ун ӳсĕмне тивĕçекен кĕнекесене суйламалла. Ашшĕ-амăшĕн хăйсен пĕлӳ çитмесен педагогпа канашламалла;

– аслисен пурин те хăйсем ача чухне юратса вуланă кĕнекесем пур. Вĕсем çинчен ачана каласа парсан лайăх, ăна пĕрле вуласан та питĕ аван;

– ача кĕнеке пăхса ларать пулсан ăна ан чăрмантарăр.Кайран вăл мĕн сăнанине, ăна мĕн килĕшнине ыйтса пĕлме ан ӳркенĕр. Çакă ачана хавхалантарать, хăй тĕллĕн кĕнекепе интересленес кăмăлне çĕклет.

## Килти библиотека йӗркелесси

Килти вулав питех те пӗлтерӗшлӗ, яваплӑ ӗҫ терӗмӗр. Ҫемьере пӗрле вулани пурне те – аслисене те, пӗчӗккисене те – кӑмӑл-туйӑм тӗлӗшӗнчен ҫывӑхлатать. Ашшӗ-амӑшне пепкисене ырӑпа усала уйӑрма, ыррисемшӗн пӑшӑрханма, савӑнма, усаллисене сивлеме вӗрентме анлӑ майсем уҫса парать. Аслӑ тата ӑслӑ ҫывӑх ҫыннисемпе пӗрле ырӑ кӗнеке вуланӑ май ача ашшӗ-амӑшне, ҫынсене, хӑйне хисеплеме, ӗҫченлӗхе, яваплӑха йӑлӑхтармӑшсӑр вӗренсе пырать. Ҫавӑнпа ачапа килте час-час вулама май пурри пӗчӗккисемшӗн те, ҫитӗннисемшӗн те чӑннипех те пысӑк ӑнӑҫу, кӑмӑл-сипет пуянлӑх йӗркеленӗвӗн никӗсӗ пулать. Апла пулсан кашни ачаллӑ ҫемьере кӗнеке нумай пулмалла: ҫитӗннисем валли те, кӗҫӗннисем валли те. Ку вӑл кӗнекесен пуххи кӑна мар, килти библиотека пулсан питӗ аван. Ӑна йӗркелесси, уйрӑмах пӗчӗк ачасем валли, самай кӑткӑс ыйту. Кунта пурне те тивӗҫтерекен татӑклӑ сӗнӳ пама пулмасть. Ашшӗ-амӑшӗ пӗчӗк пепкисене мӗн вуласа парасси, малалла ӳсерех хӑйсене мӗнле кӗнекесем вулама хавхалантарасси ҫемьере палӑртнӑ ӑспару ҫул-йӗрӗнчен тухса тӑрать.

Ҫапах та килте библиотека йӗркеленӗ чухне шута илмелли пӗтӗмӗшле сӗнӳсенчен ҫаксене уйӑрммӑн палӑртмалла.

Малтанхи тапхӑртан пуҫласах ҫемье вулавӗнче ача-пӑча сӑмахлӑхӗн паха хайлавӗсем тивӗҫлӗ вырӑн тупмалла. Вӗсем пепкесене тавралӑхпа, таврари пурнӑҫпа паллаштарас, тус-тантӑшӗсемпе кӑмӑллӑ, ҫураҫуллӑ хутшӑнма вӗрентсе пырас ӗҫре иксӗлми пуян ҫӑлкуҫ пулӗҫ. Тупмалли юмахсем, пулмасла сӑвӑ-такмакпа халапсем ачасене вӑйӑллӑ-йӑпануллӑ япаласен паллисене сӑнама, танлаштарма, ҫав паллӑсене кура ушкӑнлама вӗрентсе пырӗҫ. Халӑх тата ҫыравҫӑсен чӗр чунсем ҫинчен калакан юмахӗсемпе асамлӑ юмахсене те кӗҫӗн ҫулхи ачасем кӑмӑлласах йышӑнӗҫ.

Ачашӑн ҫут тӗнчепе – тавралӑхпа, ҫут ҫанталӑкпа – харкам сӑнавӗ урлӑ ҫеҫ паллашни ҫителӗксӗр. Ыттисен опытне ӑша хурса ӑна харпӑрлани те уншӑн питех те пӗлтерӗшлӗ. Ҫавӑнпа килти библиотекӑра ӳсен-тӑран, чӗр чун тӗнчи ҫинчен калакан, ҫут ҫанталӑк пулӑмӗсене сӑнлакан, ачасен ӳсӗмӗпе шайлашуллӑ паха кӗнекесем те тивӗҫлӗ вырӑн тупмалла. Чӑваш ача-пӑча ҫыравҫисенчен ҫут ҫанталӑк ҫинчен илӗртӳллӗ ҫыракансем нумай мар. Ҫавӑнпа куҫарусемпе (Н. Сладков, Б. Житков, М. Пришвин, В. Бианки) анлӑ усӑ курмалла.

Ача, пӗчӗк пулин те, обществӑн активлӑ членӗ, унӑн пуласлӑхӗ. Лаша пуласси тихаран паллӑ, ҫын пуласси ачаран паллӑ тесе ваттисем ахальтен каламан. Обществӑри лару-тӑру, хутшӑну-ҫыхӑну епле йӗркеленсе аталанса пырасси, халӑхсем хушшинчи тӑнӑҫлӑх ҫынсем мӗн пӗчӗкрен пӗр-пӗринпе мӗн таран ҫураҫуллӑ хутшӑнма, пӗр-пӗрне хисеплеме вӗренсе пынинчен нумай килет. Библиотекӑра чыс-хисеп, сапӑрлӑх ӑнлавсемпе ҫыхӑннӑ, йӗркелӗхпе сӑпайлӑха вӗрентекен, ачасен кулленхи пурнӑҫӗнчи самантсене сӑн-

лакан ансат, анчах та илӗртӳллӗ сюжетлӑ, ҫепӗҫ те янравлӑ, кӗвӗллӗ сӑвӑ-калав сахал мар пулмалла.

Ҫут ҫанталӑк, таврари япаласемпе механизмсен вӑрттӑнлӑхӗсем ҫинчен ансат ҫырса кӑтартнӑ хайлавсем те ачасемшӗн кӑсӑклӑ пулӗҫ. Ку ӳсӗмре вӗсем, паллах, пурне те тӗплӗн ӑнланаймӗҫ. Анчах вӑрттӑнлӑх асамлӑхӗ ӑшра юлатех. Тен, кайран, ҫулсем иртсен, вӗсем ҫак кӗнекесене аса илсе тепӗр хут вулӗҫ. Кунсӑр пуҫне меслетҫӗсем килти библиотекӑра тӗрлӗрен энциклопеди литератури, ачасен ӳсӗмне тивӗҫекен ача-пӑча журналӗсем те пулмаллине палӑртаҫҫӗ.

Килти библиотекӑра шӳтлӗ, ҫӗкленӳллӗ сӑвӑ-калав та ҫителӗклӗ пулмалла. Кӗҫӗн ҫулхи ачасем вӗсене чӑннипех те кӑмӑлласа йышӑнаҫҫӗ. Таврари пулӑмсене, пурнӑҫри тӗрлӗ саманта ӑшӑ кулӑпа, шӳтпе йышӑнма, шӳтлеме, ыттисен шӳтне ӑнланма пӗлни пурнӑҫра питех те кирлӗ ӑслай. Ку вӑл ҫынсене ҫураҫуллӑрах, кӑмӑллӑрах хутшӑнма пулӑшать. Анчах шӳт туйӑмӗ тӑрук ҫуралмасть. Ӑна мӗн пӗчӗкрен ятарласа, ҫине тӑрса аталантармалла. Ачасене час-час шӳтлӗ, ҫӗкленӳллӗ сӑвӑ-калав вуласа пани вара шӳт туйӑмне амалантарса аталантармалли питех те паха хатӗр. Кун йышши хайлавсем ачасен ӑс-тӑнне ҫивӗчлетме, тавҫӑрулӑхне аталантарма та пулӑшаҫҫӗ.

Ҫапла вара, меслетҫӗсем килти ача-пӑча библиотекине виҫӗ никӗс ҫинче йӗркелеме сӗнеҫҫӗ. Библиотекӑра ачасене кӑмӑл-сипет, ӑс-тӑн, сапӑрлав тӗлӗшӗнчен аталантарма ӑнӑҫлӑ, ача ӳсӗмне тивӗҫекен литература пулмаллине палӑртаҫҫӗ.

## КАЛАÇУ КОНСПЕКЧĔСЕН ТĔСЛĔХĔСЕМ

### Теми: «Пуканепе вылятпăр»
### Сăпка юррисем

***Ĕç тĕллевĕ***: ачасене сăпка юррисене аса илме пулăшасси, çĕннисемпе паллаштарасси, вĕсене итлес, ăнланас кăмăл çуратасси, хăйсен вăййисене кĕртме хавхалантарасси.

***Кирлĕ материал***: пукане, сăпка (тетте кравать), тетте чакак. Пӳлĕмре унта-кунта чакака «килĕшме» пултаракан йăлтăркка япаласем (куç кĕски, фольга хут, тетте çĕрĕ тата ыт. те ), пĕр-пĕр çӳлĕк çине шăрçа хурсан аван.

### Ĕ ç  й ĕ р к и

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, паян пирĕн патра – Марине. Вăл хăнана килчĕ. Маринене пурте сывлăх сунар, унпа паллашар.

Пукане пуринпе те «паллашса» тухать.

В о с п и т а т е л ь. Марине, сан çине пăхатăп та – ытла та капăр эс паян. Хăнана пуçтарăнмарăн пуль-çке? (*Маринепе «пăшăлатать».)* Ачасем, Марине хăнаран килет иккен. Анчах та юнашар куç кĕски пулманнипе хăй халĕ мĕнлерех курăннине пĕлейместĕп тет. Эсĕ, Марине, ан кулян. Эпир ачасемпе сана хăвăн çинчен каласа парăпăр.

Воспитатель ачасене пуканене сăнлама пулăшать. Ачасем ыйтусене хуравлаççĕ.

– *Маринен çӳçĕ мĕнле?*
– *Вăл мĕн тăхăннă?*
– *Кĕпи мĕн тĕслĕ, саппунĕ вара?*
– *Марине урине мĕн тăхăннă?*

В о с п и т а т е л ь. Куратăн-и, мĕнле чипер эсĕ? Акă мĕн терĕç ачасем сан çинчен. (*Ачасен хуравĕсене пĕтĕмлетет.*) Санăн çӳçӳ вăрăм, хура тĕслĕ. Çӳçне хитре çивĕтленĕ. Кĕпӳ шап-шурă, арки вара – шупка. Саппуну та шупка, кĕсьеллĕ. Урунта вара шурă туфли. Вăт еплерех хитре эсĕ, Марине!

Пукане ачасене хăйне сăнласа панăшăн тав тăвать.
Пуканепе воспитатель каллех «пăшăлтатса» илеççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пукане питĕ ывăннă тет. Выртса канма сĕнер-и ăна? (*Пуканене сăпкана вырттарнă май ачасене те сасăпа кала-кала вĕрентет.*)

– Марине, выртса кансам, тархасшăн.
– Марине, канса илсем, тархасшăн, пирĕн патра.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, Маринене хăвăрт çывăрса кайма мĕнле пулăшма пулать? *(Ачасем хуравлаççĕ.)* Тĕрĕс, сăпка юрри юрласа. Аса илей-

ĕр-и, манса кайман-и сăпка юррисене? *(Ачасем хуравлаççĕ.)* Маттур, атьăр пурте пĕрле юрлар.

Нянине – паппине,
Паппине – нянине.
Лăштăм-лăштăм ярăнма,
Шăппăн-шăппăн çывăрма.

В о с п и т а т е л ь *(шăппăн)*. Çывăрса кайрĕ пулас, куçне хупрĕ. *(Чакак сассине аса илтерекен сасă кăларать).* Ку тата мĕскер? Марине тин çеç çывăрса кайрĕ-çке! *(Сĕтел айĕнчен тетте чакак кăларать, çав хушăрах чакак евĕр чаклатать).* Чак-чакак! Чак-чакак! Ай-уй, ачасем, ку мĕн?

А ч а с е м. Чакак чĕппи вĕçсе килчĕ.

В о с п и т а т е л ь. Лăплан, лăплан, мĕскер шавлатăн? Пăх-ха эсĕ ăна – чакак ачи епле чарусăр. Чак-чакак! Чак-чакак, ун пекех ан шавла, пирĕн кунта Марине çывăрать. *(Ачасене.)* Тем, ун чĕлхипе калаçни пулăшрĕ пулас – тинех шăпланчĕ. *(Чакак çине пăхса, пуçне сулласа.)*

Чака-ак, чака-ак!
Чакак ачи чарусăр.

Воспитатель çак икĕ йĕркене ачасене те калама сĕнет.

А ч а с е м (*чакака пӳрнепе юнаса*).

Чака-ак, чака-ак!
Чакак ачи чарусăр.

В о с п и т а т е л ь. Курăр, мĕнле тимлĕ чакак ачи! Сире хаваспах итлет.

(*Сăпка юррине пĕтĕмĕшле юрласа парать*, *кайран ачасене те пĕрле ĕнĕрлеттерет.*)

В о с п и т а т е л ь п е  а ч а с е м.

Чака-ак, чака-ак!
Чакак ачи чарусăр,
Пирĕн ачи апла мар:
Паппа тăвать, çывăрать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, чакак йăлтăркка япаласем питĕ юратать. Ăна пирĕн ушкăнра мĕн килĕшнĕ пулĕччĕ-ши?

Воспиательпе ачасем пукане «çывăракан» вырăнтан пăрăнса пӳлĕм тăрăх çӳреççĕ. Вăйă выляççĕ: ачасем сĕннĕ япаласене тетте чакак «йышăнать» е «тиркет». Чакака воспитатель «манса» хăварнă шăрça питĕ «килĕшет». Вăл: «Эсир уçăлса çӳрĕрех, эпĕ кунта ларам», – тесе шăрça патĕнчех юлать.

В о с п и т а т е л ь *(ачасемпе пукане патне пырса)*. Пирĕн Марине вăранасшăн пулас. Авал асанне-кукамайсем ачана ыйхăран сăвă-такмакпа вăратнă. Ăна ырлăх, сывлăх суннă. Маринене вăратма çакăн пек такмак аса илер.

Каçа-каçа, каçа-каçа,
Пысăк пул, маттур пул!

Вăран, Марине!

Эпир сана маттур пулма сунатпăр. Маттур ача ташлама та, юрлама та ăста пулать.

Пысăк пул, пысăк пул,
Ӳссен маттур ача пул!
Юрлама та ăста пул,
Ташлама та маттур пул.

Ачасем, эсир çакăн йышши тата мĕнле такмаксем пĕлетĕр?

Воспитатель ачасене такмаксем аса илме пулăшать.

А ч а с е м.
Кăшăк-кăшăк-кăшăк,
Пысăк пул, пысăк, пысăк пул,
Кашни карăнмассерен
Шит тăршшĕ çитĕн.

Ырă пуçу ырра тĕллетĕр,
Ырă уру ырă уттăр,
Ырă аллу ырă ĕç тутăр!

П у к а н е. Тавах сире. Питĕ лайăх канса илтĕм.

Воспитатель ачасемпе пĕрле пуканене чакак вĕçсе килни çинчен каласа парать.
Пурте кайăк патне пыраççĕ. Чакак шăрçана пуканене илме сĕнет.
Кăмăлĕсем пулсан воспитатель пуканене ачасене выляма парать.

## Теми: «Кермен»
## Вырăс халăх юмахне каласа пани

***Ĕç тĕллевĕ*:** ачасене кил çинчен калаçма явăçтарасси, юмахпа паллаштарасси, ăна итлесе ăнланма пулăшасси, хайлаври самантсене, сăвви-юррине хăйсен вăййисене кĕртме хавхалантарасси.

***Кирлĕ материал:*** хут листи, кăранташ, тĕрлĕ тĕслĕ çавракасем, ӳкерчĕклĕ кĕнеке.

### Ĕ ç  й ĕ р к и

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эсир ăçта пурăнатăр? (*Ачасем хуравлаççĕ.*) Çапла, кашниййĕнех хăйĕн килĕ пур. Пирĕн ача сачĕ вара – пирĕншĕн пуриншĕн те иккĕмĕш кил. Эпир кунта ир пуçласа каçчен пĕрле кун ирттеретпĕр – мĕн кăна тумастпăр пулĕ! (*Ачасемпе хăйсем кунсерен пурнăçлакан ĕçсене каласа тухаççĕ.*)

– Ачасем, эсир тĕрлĕ чĕр чун, кăпшанкă ăçта пурăнни çинчен шутланă-и?

– Шăна ăçта пурăнать? (*Пур çĕрте те пуль ун килĕ – таçта та вĕçсе çӳрет вĕт.*)

– Вăрăм туна ăçта пурăнать? (*Вăл та çавах. Ытларах, паллах, нӳрĕ вырăнсене юратать. Шывлă, шурлăхлă вырăнсене кăмăллать.*)

– Шăши ăçта пурăнать? (*Ачасем хуравлаççĕ.*) Çапла, шăтăкра, пĕчĕк шăтăкра. Çавăн пек шăтăка тата йĕнĕ те, шăши йĕнни, теççĕ. Хир шăшийĕ хирте пурăнать, вăрман шăшийĕ вара – вăрманта. Шăшисем килти чĕр чунсем мар – çавăнпа çын таврашĕнче вĕсем вăрттăн пурăнаççĕ, пытанса.

– Шапа ăçта пурăнать? (*Шывра пурăнаканнисем те, çĕр çинче пурăнаканнисем те пур.*)

– Мулкач, тилĕ, кашкăр, упа тата ăçта пурăнаççĕ? (*Ачасем хуравлаççĕ.*) Çапла, вĕсем пурте вăрманта, кашни хăйĕн шăтăкĕнче пурăнать. Вĕсен килне упа йĕнни е кашкăр йĕнни тесе те калаççĕ. Халĕ эпĕ сире каласа парас тенĕ юмахра вара çак чĕр чунсем пурте пĕрле, пĕр çуртра пурăннă. Юмах «Кермен» ятлă. Кермен вăл мĕнле çурт-ши? (*Ачасем хуравлаççĕ.*) Маттур. Ачасем! Акă пăхăр-ха ӳкерчĕк çине. Çакăн пек вăл юмахри кермен. (*Юмаха каласа панă май воспитатель кĕнекери ӳкерчĕксене кăтартса пырать.*)

**Кермен**
**(Вырăс халăх юмахĕ)**

Пĕр старик пасартан чӳлмексем турттарса таврăннă. Пĕр чӳлмекĕ ăнсăртран лав çинчен тухса ӳкнĕ те кăлтăрр! кусса кайнă çул хĕрне. Ун патне шăпăрçă шăна вĕçсе пырса ларать те çапла ыйтать:

– Хуçи пур-и, майри пур-и,
Кам пурнать ку керменре?

Курать шăна – шалта никам та сасă паракан çук. Вара вăл чӳлмеке вĕçсе кĕчĕ, тет те, пурăнмах пуçларĕ, тет.

Вĕçсе килчĕ нăйăлти вăрăм туна. Вĕçсе килчĕ те ыйтать хайхискер:

– Хуçи пур-и, майри пур-и,
Кам пурнать ку керменре?
– Эпĕ шăпăрçă шăна. Эсĕ кам?
– Эпĕ вăрăм туна.
– Кил манпа пурăнма.

Акă вĕсем иккĕн пурăнма пуçларĕç. Кĕçех шăши чупса çитрĕ те ыйтать:

– Хуçи пур-и, майри пур-и,
Кам пурнать ку керменре?
– Эпĕ шăпăрçă шăна.
– Эпĕ вăрăм туна. Эсĕ кам?
– Эпĕ шăши тус – хушка пуç.
– Кил пирĕнпе пурăнма.

Акă вĕсем виççĕн пĕрле пурăнма пуçларĕç.

Кĕçех катăк тута, ват шапа, сиккелесе çитрĕ.

– Хуçи пур-и, майри пур-и,

Кам пурнать ку керменре?
– Эпĕ шăпăрçă-шăна.
– Эпĕ вăрăм туна.
– Эпĕ шăши тус – хушка пуç. Эсĕ кам?
– Эпĕ катăк тута, ват шапа,
– Кил пирĕнпе пурăнма.
Акă вĕсем тăваттăн пĕрле пурăнма пуçларĕç.
Чупса çитрĕ татăк хӳре, ват мулкач.
– Хуçи пур-и, майри пур-и,
Кам пурнать ку керменре?
– Эпĕ шăпăрçă шăна.
– Эпĕ вăрăм туна.
– Эпĕ шăши тус – хушка пуç.
– Эпĕ катăк тута, ват шапа. Эсĕ кам?
– Эпĕ мулкач, мул пухакан,
Сăрт хĕрринче пурăнакан.
– Кил пирĕнпе пурăнма.
Акă вĕсем пиллĕкĕн пĕрле пурăнма пуçларĕç.
Йăпăртатса чупса çитрĕ тилĕ тус.
– Хуçи пур-и, майри пур-и,
Кам пурнать ку керменре?
– Эпĕ шăпăрçă шăна.
– Эпĕ вăрăм туна.
– Эпĕ шăши тус – хушка пуç.
– Эпĕ катăк тута, ват шапа.
– Эпĕ мулкач, мул пухакан,
Сăрт хĕрринче пурăнакан. Эсĕ кам?
– Эпĕ тилĕ, ват ăста,
Сăмах çапма пит ăста.
– Кил пирĕнпе пурăнма.
Акă вĕсем улттăн пулчĕç.
Лĕпсĕртетсе чупса çитрĕ ырхан кашкăр. Чупса çитрĕ те ыйтать:
– Хуçи пур-и, майри пур-и,
Кам пурнать ку керменре?
– Эпĕ шăпăрçă шăна.
– Эпĕ вăрăм туна.
– Эпĕ шăши тус – хушка пуç.
– Эпĕ катăк тута, ват шапа.
– Эпĕ мулкач, мул пухакан,
Сăрт хĕрринче пурăнакан.
– Эпĕ тилĕ, ват ăста,
Сăмах çапма пит ăста. Эсĕ кам?
– Эпĕ кашкăр-кашаман.
– Кил пирĕнпе пурăнма.
Акă вĕсем çиччĕн пулчĕç.
Упаленсе килчĕ упа. Килчĕ те ыйтать:

– Хуҫи пур-и, майри пур-и,
Кам пурнать ку керменре?
– Эпӗ шăпăрҫă шăна.
– Эпӗ вăрăм туна.
– Эпӗ шăши тус – хушка пуҫ.
– Эпӗ катăк тута, ват шапа.
– Эпӗ мулкач, мул пухакан,
Сăрт хӗрринче пурăнакан.
– Эпӗ тилӗ, ват ăста,
Сăмах ҫапма пит ăста.
Эсӗ ху кам пулатăн?
– Эпӗ кашкăр-кашаман.
– Эпӗ упа-утаман,
Ик урапа утакан, ӗне тирне сӗвекен!

Ҫапла каларӗ те ҫăмламас упа чӳлмек ҫине лап! пырса ларчӗ. Чӳлмекӗ чăл-пар! кăна ҫӗмӗрӗлсе кайрӗ. Унта пурăнакансем тӗрлӗ ҫӗрелле тапса сикрӗҫ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, сире ку юмах килӗшрӗ-и? *(Ачасем хуравлаҫҫӗ.)* Кам ас туса юлчӗ – мӗн ятлăччӗ вăл?

– Керменре мӗнсем пурăнма пуҫларӗҫ, аса илӗр-ха. (*Шăна, вăрăм туна, шăши, шапа, мулкач, тилӗ, кашкăр, упа.)*

– Юмахра вӗсене мӗнле чӗнеҫҫӗ, аса илӗр *(Шăпăрҫă шăна; вăрăмтуна; шăши тус – хушка пуҫ; катăк тута, ват шапа; мулкач, мул пухакан, сăрт хӗрринче пурăнакан; тилӗ, ват ăста, сăмах ҫапма пит ăста; кашкăр-кашаман; упа-утаман, ик урапа утакан, ӗне тирне сӗвекен.)*

– Хăйсене кермене кӗртме мӗнле ыйтрӗҫ вӗсем? Мӗн каларӗҫ? *(Хуҫи пур-и, майри пур-и, кам пурнать ку керменре?)*

– Атьăр ҫак юмаха выльăпăр. Керменне хамăр тăвăпăр. Юмахри сăнарсем те хамăрах пулăпăр.

– Чи малтан кермен патне мӗнле чӗр чун килнӗ?

– Шăни мӗнлерех?

– Эпир ăна акă епле ӳкерӗпӗр...

Воспитатель ачасене чӗр чунсенчен кашниййӗ мӗнпе палăрса тăнине сăнаттарать. (Тӗслӗхрен, шăнан ҫунаттисем пур, вăрăм тунан – питех те хытă, ыраттармалла сăхакан вăрăм сăмси; шапан – тути урлă, тилӗн – шӗвӗр сăмсипе кăпăшка хӳри, кашкăрăн – пысăк ҫивӗч шăлӗсем тата тукмак хӳри, упан вара ҫаврака хăлха). Калаҫнă май кантрасем тирнӗ шурă ҫаврашкасем ҫине кашнинех ӳкерсе пырать. (Маларах хатӗрлесе хунисем пулсан та аван. Вăййа пуҫличчен ачасемпе ăҫта мӗне ӳкернине каласа тухмалли ҫеҫ юлать.)

Заняти театр вăййине куҫса каять.

## Теми: «Качака»
## «Мекекек качака!» йăпатмăша вулани

***Ĕç тĕллевĕ*:** ачасене «Мекекек качака!» йăпатмăшпа паллаштарасси, ăна ас туса юлма пулăшасси, качакапа ун путеккине сăнлама хистесси.

***Кирлĕ материал*:** «Качакапа путекки» ÿкерчĕк, тетте качака (е алă çине тăхăнмалли), кашни ача валли купăста тунисем ÿкернĕ хут листисем, симĕс тĕслĕ кăранташсем.

**Ĕ ç й ĕ р к и**

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, сире тупмалли юмах каласа парас тетĕп. Пĕлейĕр-ши тупмалли юмах мĕн çинчен пулнине: «Мĕн сухаллă çуралать?». Шутлăр-ха, шутлăр. (*Ачасен хуравне кура вĕсене пулăшса пырать.*) Йывăр-тарах пуль çав чухласа илме. Тата унăн мăйрака пур... (Ачасем хуравлаççĕ.) Тĕрĕс, пĕлтĕр – качака!

Воспитатель ачасене «Качакапа путекки» ÿкерчĕк патне илсе пырать.

Ÿкерчĕке пĕрле сăнама хавхалантарать.

– Качака мĕнле?

– Çапла, качака пысăк, шурă, çăмламас.

– Унăн мĕн пур?

– Тĕрĕс. Мăйракине тимлĕрех сăнăр. Вăл мĕнле? (*Пысăк, шĕвĕр.*) Качака мăйраки мĕне аса илтерет?

– Çапла, сенĕк пек, качакан мăйраки икĕ юплĕ сенĕк пек.

– Качака мĕн çиет?

– Качакапа юнашар мĕн тăрать?

– Качака путекки качака амăшĕ пекех-и?

– Çапла, унăн амăшĕ пысăк, мăйракаллă. Путекĕ вара пĕчĕк, унăн мăй-раки те шăтман-ха.

– Качака путекки мĕн çиет-ши?

– Çерем çинчи симĕс курăка та, хуçа хурса панине те качака путекки пĕчĕк чух çиеймест. Вăл малтанлăха амăш сĕтне çеç ĕçме пултарать. Качака амăшĕн вара путекки валли апачĕ çителĕклех – ун çилли туллиех. Пăхăр-ха, тулли енчĕкех аса илтерет качака çилли.

Воспитатель ачасене «симĕс çерем» тăрăх уçăлса çÿреме сĕнет.
«Качака» юрра юрлать.

В о с п и т а т е л ь.
Тÿрĕ тикĕс çулпала
Шăкăлт-шăкăлт пушмакпа
Качака килет, качака килет...

Ачасем каялла пукансем çине вырнаçса ларсан воспитатель
вĕсене алă çине тăхăнмалли тетте качака кăтартать.

Качакапа воспитатель «пăшăлтатса» илеççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пĕлетĕр-и мĕн калать ку качака: «Кунта сирĕн итлеменнисем çук-и?» – тет. «Йăлăнтармăш çук-и?» – тет. Вăл вĕсене: «Тăк! тăватăп!» – тет. «Мăйрака çине лартăп», – тет. *(Качакана.)* Качака тус, пирĕн ача садĕнче ун пеккисем çук пуль. Çапла-и, ачасем?

А ч а с е м. Çапла-а-а! Çук.

Малалла качака сăмахĕсене воспитатель сассине улăштарса кирлĕ хусканусем туса пырать каласа пырать.

К а ч а к а. Апла пулсан аван, мэ-э-э!

В о с п и т а т е л ь. Качака тус, эсĕ пирĕнпе вылямăн-ши? Эпир выляма юрататпăр.

К а ч а к а (*выляма килĕшсе сăвă калать*).

Килет качака
Ачасене тытма.
Мăйраки сенĕк пек,
Çилли енчĕк пек.
Сухалне силлет.
– Кам та кам итлемест,
Йăлăнтармăш çук-и? – тет, –
Ăна тăк! тăватăп, – тет.

Воспитатель кăтартнипе ачасем те аллисемпе качака тăваççĕ,
шĕвĕр пӳрнипе кача пӳрнине мăйрака пек кăнтараççĕ.
Выляна май воспитатель ачасене сăвă йĕркисене калама хавхалантарать,
аса хывма пулăшать.

В о с п и т а т е л ь. Качака тус, лайăх санпа выляма. Эпир те хамăра аван тытăпăр. Пире тĕкме сăлтав памăпăр. Çапла вĕт, ачасем?

А ч а с е м. Çапла-а-а!

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, Качака туса савăнтарар-и? Качакасем купăста юратнă çинчен каларăр-ха эсир. Халĕ эпĕ сире ун валли çав тутлă çимĕçе ӳкерсе пама сĕнетĕп. Акă кăранташсем те хатĕрех, хучĕ те ал айĕнчех. Куратăр-и, йăранĕпех купăста туни ларать, кучанĕсем вара çук. Мекек качака, кĕçех сан валли ачасем нумай-нумай çап-çаврака, шап-шурă купăста пуçĕсем илсе килĕç!

Качака ачасем ӳкернине сăнать, вĕсене хавхалантарать.

К а ч а к а. Эх, Коля мĕнле маттур! Мĕнле шап-шурă купăста ӳсет ун йăранĕ çинче. Сĕткенлĕ пуль ĕнтĕ? Тутанса пăхам-ха. *(Тутаннă пек тăвать.)* Тавах, сана. Питĕ тутлă!

Воспитатель те «калаçăва» хутшăнать. Ушкăнри ачасем маттуррине çирĕплетет. Кашнин ӳкерчĕкĕ пирки ăшă сăмах калама май тупать.

**Теми: «Çитрĕ сарă кĕркунне»**
**Н. Пăрчăканăн «Çитрĕ сарă кĕркунне» сăввипе паллаштарни**

***Ĕç тĕллевĕ:*** çут çанталăк илемне курма, унпа киленме хăнăхтарса чĕлхе сăнарлăхне, сăвăсен илемне туйма-курма вĕрентсе пырасси.

***Кирлĕ материал:*** кĕрхи çулçăсем, симĕс тата сарă, хĕрлĕ çулçăллă йывăççене сăнлакан ӳкерчĕксем (симĕс пан улми йывăççи, груша, хурлăхан тата сарă çулçăллă çав йывăççемех), сад, пахça çимĕç муляжĕсем, икĕ карçинкка (хутаç, курупка).

**Ĕ ç й ĕ р к и**

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, сăнăр-ха: паян пурте курткăсемпе ăшă кофтăсем тăхăннă. Саша, санăн питĕ хитре футболка пурччĕ-çке. Лена, мана санăн кĕске çанăллă кăвак кĕпӳ питĕ килĕшетчĕ. Эсир халĕ мĕншĕн çав хитре тумсене тăхăнмастăр? Хулăм, ăшă тумтир тăхăнма пуçланă?

– Çапла çав. Халĕ çулла мар. Кĕркуненнене кĕтĕмĕр. Çанталăк мĕнле улшăнчĕ? Çуллахи пек ăшă-и?

– Çук ăшă мар, сивĕтрĕ, тĕрĕс. Çуллахи пек çарран чупаймăн тулта.

– Ачасем, эсир тата мĕнле улшăнусем асăрхарăр?

– Йывăççен çулçисене сăнăр-ха. Вĕсем мĕнлерех улшăннă! Халь çеç йывăççен тумĕсем симĕсчĕ. Халĕ вара ... . Мĕн тĕслĕ çулçă çук пуль кунта...

Заняти пӳлĕмре иртет пулсан воспитатель маларах тĕрлĕ йывăçăн тĕрлĕ тĕслĕ çулçисене хатĕрлесе хурать.

– Юман çулçи – хăмăр, хурăн çулçи – сарă, вĕренен – хĕрлĕ. Садри çимĕççене те пуçтарса кĕртнĕ. Унти йывăççен çулçисем те сарăхнă.

– Ачасем, халĕ эпĕ сире сăвă вуласа парасшăн. Ăна Нина Пăрчăкан сăвăçă çырнă. Ячĕ – «Çитрĕ сарă кĕркунне».

**Çитрĕ сарă кĕркунне**
Тин кăна ялта çуллаччĕ,
Шевлине хĕвел сапатчĕ.
Кăлтăр-кăлтăр аслати те
Сас паратчĕ: «Эпĕ килтĕм!».

Çитрĕ ылтăн кĕркунне,
Улăштарчĕ сад тумне.
Сарă тутăр вăл çыхтарчĕ,
Çимĕçе пухса пуçтарчĕ.

(*Н. Пăрчăкан.*)

– Сире сăвă килĕшрĕ-и? Сăвăра мĕнле вăхăт çитрĕ тенĕ?

– Çапла, кĕркунне çитрĕ. Кĕркуннене сăвăра *ылтăн* тенĕ. Мĕншĕн çапла каланă-ши?

– Ылтăн вăл сарă хĕрлĕрех тĕслĕ паха металл шутланать. Кĕрхи тавралăха сăнăр-ха. Мĕнле тĕссем ытларах унта?

– Çавăнпа сăвăç кĕрхи сăнсене, кĕркуннене юратса ылтăн тенĕ пуль.

– Кĕркунне умĕн мĕнле вăхăт пулнăччĕ?

Воспитатель ачасен хуравне çирĕплетсе сăвă йĕркисене аса илет.

– *Тин кăна ялта çуллаччĕ*. Мĕншĕн сăвăра çулла пирки *тин кăна* тесе каланă-ши?

– Çапла, çулла питĕ хăвăрт иртсе кайнăн туйăнать.

– Çулла хĕвел мĕнле пăхать? Сăвă йĕркисене аса илер-ха.

– Тĕрĕс, сăвăç ун çинчен: «*Шевлине хĕвел сапатчĕ», –* тесе калать.

– Çулла час-часах мĕнле çумăр çăвать? *(Аслати çинчен çырнă сăвă йĕркисене вулать.)*

– Ачасем, кĕркунне çумăрлă вăхăт пулнине эсир пĕлетĕр. Çуллапа танлаштараймăн. Кĕркунне çумăр кашни кун çума пултарать. Анчах та кĕрхи çумăр аслатиллĕ мар, çапла вĕт? Вăл йĕпхӳ, сивĕ, пĕр вĕçĕм çăвать... *Кăлтăр-кăлтăр аслатиллĕ* çумăр – вăл çуллахи çумăр.

– Кĕркунне çитрĕ те мĕн улшăнчĕ? Сăвăра мĕнле каланă? *(Сăввăн иккĕмĕш çаврине вулать.)*

– Ачасем, сăввăн пĕрремĕш йĕркисене вуланă май хаваслă туйăм çуралать, алă çупса ташша яма та пулать пек. Кĕркунне çинчен вулама пуçласан вара урăхла кăмăл вăй илет – сумлă, васкамасăр таврана улăштарса пырать кĕркунне.

– Эпĕ сире сăвва тепре вуласа парăп, эсир хăвăрăн кăмăлăр улшăннă май шайлашуллă хусканусем тăвăр.

Малтанхи тăватă йĕркене воспитатель хавхаланулла, хаваслă янратать.
Иккĕмĕш тăват йĕркене вара ерипенрех, шухăша кайнă пекрех вулать. Воспитатель ачасене сăнать, вĕсен хусканăвĕсене хак парать: «Лена хăй тавра çаврăннă чухне – ун кĕпи арки вăрр кăна вĕлкĕшрĕ – хĕвел шевлине сапнă пекех»; «Коля аллипе кăлтăр-кăлтăр аслатиллĕ çумăрăн тумламĕсене тытнăнах туйăнчĕ»; «Катя чăн-чăн кĕркуннех вара – ерипен утса пырса аллипе йывăçсен тумне улăштарса пычĕ»...
Воспитатель ачасене ларма ыйтать.

– Кĕркунне тунă ĕçсене тепĕр хут каласа тухсамăр.

– Тĕрĕс: *сад тумне улăштарчĕ, çимĕçе пухса пуçтарчĕ.*

– Çак ӳкерчĕксене сăнаса каласамăр: хăш ӳкерчĕксенче кĕркунне йывăçсене *сарă тутăр çыхтарма* ĕлкĕрнĕ?

Воспитатель ачасене симĕс тата сарă, хĕрлĕ çулçăллă йывăçсене сăнлакан ӳкерчĕксем вырнаçтарнă мольберт çине пăхма сĕнет.
Ачасене калаçтарнă май («Ку улмуççин тутăрĕ симĕс-ха, кун вара сарă. Ку грушăна кĕркунне сарă тутăр çыхтарма ĕлкĕреймен-ха, ку вара – çыхнă та»...) йывăçсене икĕ ушкăна пайлать.
Мольбертăн пĕр енче кĕрхи сад пуçтарăнать.

– Çак садра мĕнле çимĕç ӳссе çитĕннĕ-ши?

Воспитатель ачасен умне (сĕтел çине) садри тата пахчари çимĕçсене (муляжсем е касса кăларнă силуэтсем) кăларса хурать. Садпа пахча çимĕçне уйăрса пуçтарма ыйтать. Икĕ карçинкка, е карçинккапа ещĕк сĕнет. Ĕçе вĕçлесен ачасене сăвва тепре вуласа парать.

– Атьăр-ха сирĕнпе урама уçăлма тухсан тимлĕрех сăнар – мĕн улшăнчĕ пирĕн тавралăхра? Çапла майпа асамçă-кĕркунне çинчен тĕплĕнрех те нумайрах пĕлĕпĕр.

## Теми: «Йăва»
## Вырăс халăх юмахĕпе паллаштарни

***Ĕç тĕллевĕ:*** юмаха кăмăллăн итлеме-йышăнма вĕрентесси; мĕн хыççăн мĕн пулса иртнине ас туса юлма, юмахри геройсен ячĕ-сăнарĕсене аса хывма пулăшасси; содержани тăрăх калаçтарасси.

***Кирлĕ материал**:* «Йăва» юмах кĕнеки, теттесем (юмах тăрăх), пӳрне театрĕ, модель калăпламалли капăшсем.

### Ĕ ç й ĕ р к и

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, паян пирĕн пата хăна килчĕ. Паллатăр-и эсир ăна? (*Тетте йăва кăтартать.*) Вăл хăй çинчен юмах кĕнеки илсе килчĕ. Ку мĕнле юмах иккенне кам тавçăрса илчĕ? (*Ачасем хуравлаççĕ.*) Атьăр, халĕ эпĕ сире ку юмаха каласа парам. Ăна пĕлекеннисем мана пулăшса пырăр.

Воспитатель юмах калать, каланă майăн унта мĕн пулса иртнине пӳрне театрĕн теттисемпе кăтартса пырать. (Йăва сăмахĕсене сăвăласа мар, юрласа пани пĕлтерĕшлĕ).

**Йăва**
**(Вырăс халăх юмахĕ)**

Пĕр старикпе карчăк пурăннă тет. Старикĕ карчăкĕнчен:

– Карчăк, йăва пит çиес килет. Йăва пĕçерсе пар-ха, – тесе ыйтать тет.

– Мĕнрен пĕçерес-ха, çăнăх çук-çке! – тет карчăкĕ.

– И-и, карчăк, ырçа тĕпне хырса пăх, пура тĕпне шăлса пăх, пĕр йăва тумалăх пуçтарăнĕ-пуçтарăнех, – тет.

Карчăк ырçа тĕпне хырать, пура тĕпне шăлать, пĕр йĕкĕр ывăç пек çăнăх тупать. Йăва пĕçерет те сивĕнме кантăк çине хурать.

Йăва выртрĕ-выртрĕ те сасартăк кусрĕ кайрĕ – кантăк çинчен сак çине, сак çинчен урайне, урай тăрăх алăк патне, алăк янаххи урлă çенĕке йăлт! сиксе каçрĕ те крыльцана, крыльцаран кил хушшине, кил хушшинчен урама, унтан çулпа кусса кайрĕ.

Кусса пырать йăва çулпа. ăна хирĕç мулкач:

– Ну, йăва, эп сана çиетĕп, – тет.

– Ан çи мана, катăк тута, эпĕ сана юрă юрласа кăтартăп, – тет те йăва юрласа ярать:

– Эпĕ йăва, ху пĕлен,

Пуринчен те лайăххи:

Мана ырçа тĕпĕнчен

Хырса-шăлса пуçтарнă,
Сĕтпе-çупа пĕçернĕ,
Кантăк çинче сивĕтнĕ.
Эпĕ тартăм старикрен,
Эпĕ тартăм карчăкран,
Санран, катăк тутаран,
Тарăп эпĕ çăмăлах.

Юрласа пĕтерет те малалла кусса каять. Мулкач курса çеç юлать. Кусса пырать йăва, хирĕç кашкăр:

– Йăва, йăва, эп сана çиетĕп, – тет.
– Ан çи мана, сăрă кашкăр, эпĕ сана юрă юрласа паратăп, – тет йăва.
– Эпĕ йăва, ху пĕлен,
Пуринчен те лайăххи:
Мана ырçа тĕпĕнчен,
Мана пура тĕпĕнчен
Хырса-шăлса пуçтарнă,
Сĕтпе-çупа пĕçернĕ,
Кантăк çинче сивĕтнĕ.
Эпĕ тартăм старикрен,
Эпĕ тартăм карчăкран,
Эпĕ тартăм мулкачран,
Санран, кăвак кашкăртан,
Тарăп эпĕ çăмăлах.

Юрласа пĕтерсенех кăлтăр! кусса каять, кашкăр пăхса кăна тăрса юлать.

Кусса пырать йăва, ăна хирĕç – упа.

– Йăва, эп сана çиетĕп, – тет упа.
– Ан çи мана, эпĕ сана юрă юрласа кăтартатăп, – тет каллех йăва.
– Эпĕ йăва, ху пĕлен,
Пуринчен те лайăххи:
Мана ырçа тĕпĕнчен,
Мана пура тĕпĕнчен
Хырса-шăлса пуçтарнă,
Сĕтпе-çупа пĕçернĕ,
Кантăк çинче сивĕтнĕ.
Эпĕ тартăм старикрен.
Эпĕ тартăм карчăкран,
Эпĕ тартăм мулкачран,
Санран, чалăш урараn,
Тарăп эпĕ çăмăлах.

Каллех тарать йăва. Кусса пырать, ăна хирĕç тилĕ:

– Лайăх-и, йăва тус? Эпĕ сана çиетĕп, – тет.
– Ан çи мана, тилĕ тус, эпĕ сана юрă юрласа паратăп, – тет те йăва юрласа ярать:
– Эпĕ йăва, ху пĕлен,
Пуринчен те лайăххи:
Мана ырçа тĕпĕнчен,
Мана пура тĕпĕнчен
Хырса-шăлса пуçтарнă...

– Пит аван юрă, – тет тилли. – Анчах та эпĕ пит ватăлса кайрăм-çке, хăлха витĕр илтмест. Ман сăмса çине ларса юрласа пар-ха юрруна. Хытăрах юрла, – тет.

Йăва тилĕ сăмси çине сиксе ларать те юрлама пуçлать. Тилле çакă çеç кирлĕ. Вăл айван йăвана кап! хыпать те ам! çисех ярать.

– Вăт мĕнлерех вăл Йăва! Аса илĕр-ха кинеми ăна мĕнле пĕçерчĕ? Атьăр çакна туса кăтартăр. Малтан кинеми мĕн тăвать? (Çăнăх пуçтарать). Унтан мĕн тăвать? (Чуста çăрать).

Ачасем кинеми çăнăх мĕнле пуçтарнине, чуста мĕнле çăрнине хусканусемпе кăтартаççĕ.

–Мĕнлерех йăва пиçсе тухрĕ? (Çаврака, тутлă, вĕри – пĕçерет.)

– Айтăр, юмаха тепĕр хут аса илĕпĕр, капăшсемпе кăтартăпăр.

– Ку пирĕн пӳрт пулать (тăваткал илсе хурать).

– Халь пӳрт тăрри кирлĕ (виçкĕтеслĕх илсе пӳрт тăррине майлаштарать).

– Ку Йăва пулать (пĕчĕк сарă çаврака илет). Пирĕн Йăва мĕн тĕслĕ? (Сарă.)

– Мулкачĕ мĕн тĕслĕ? (Сăрă, пĕчĕк.)

– Кашкăр вара? (Вăл мулкач пекех сăрă, анчах та пысăк.)

– Кашкăр валли çаврака тупăр тархасшăн.

– Унтан Йăва мĕнле чĕр чуна тĕл пулнă?

– Упа мĕнле?

– Упа хăмăр, пысăк. Çавăнпа пысăк хăмăр çаврака илетпĕр.

– Унтан Йăва мĕне тĕл пулчĕ?

– Тилĕ мĕнле? Мĕнле çаврака илмелле?( Хĕрлемес.)

Ачасем ушкăнпа калăпланă модельсен речĕ тăрăх юмаха аса илсе каласа параççĕ.

Унтан воспитатель ачасене пӳрне театрĕн геройĕсемпе выляма сĕнет, вăйă вăхăтĕнче вĕсене пĕр-пĕринпе пуплешӳ йĕркелеме пулăшать.

### Теми: «Вăйă сăвви»
### «Ларать, ларать, Миша ларать» вăйă сăввипе паллаштарни

***Ĕç тĕллевĕ***: ача-пăча сăмахлăхĕн хайлавĕсемпе малалла паллаштарасси, вĕсене вăйăсенче усă курас кăмăл çуратасси.

### Ĕ ç й ĕ р к и

Воспитатель ачасене вăййа чĕнет.

В о с п и т а т е л ь. Ку вăйăра эсир пĕр-пĕрне сасран пĕлме пултарни-пултарайманнине курăпăр. Уйăрайрăр-ши пĕр-пĕрин сассине? Кам хăйне тĕрĕслесе пăхасшăн? Коля, тухсам вăйă картине. Эсĕ ачасене çурăмпа ларăн, хăвна кам чĕннине пăхмасăр уйăрма тăрăшăн. Эпĕ вара Кольăна камăн чĕнмеллине алăпа тĕллесе кăтартăп. Малтан эпир вăйă карти тăвăпăр. Коля тавра çапла юрласа çаврăнăпăр.

Ларать, ларать, Коля ларать
Шĕшкĕ тĕмĕ айĕнче.
Çиет, çиет, Коля çиет
Шĕшкĕн сарă măйăрне.
Вăхăт çисен тăрас пулать,
Ятне тĕрĕс калас пулать.

Воспитатель кам çине алпа кăтартать, çавă арçын ача ятне калать.

В о с п и т а т е л ь. Коля, халĕ эсĕ тăр, пирĕн енне çаврăн. Кам чĕнчĕ сана?

Арçын ача хăйне кам чĕннине пĕлсен, ăна чĕнекен ачи ун вырăнне тухать. Вăйă маллала тăсăлать. Воспитатель ачасене вăйă сăввине пĕрле калама хавхалантарать. Тепрехинче воспитатель малтан паллашнă вăййа урăхларах выляма сĕнет. Вăйă картинче пĕр ача (Мишша) ларать. Ачасем карталанса юрласа çаврăнаççĕ:

А ч а с е м.
Ларать, ларать, Мишша ларать
Шĕшкĕ тĕмĕ айĕнче.
Çиет, çиет, Мишша çиет
Шĕшкĕн сарă măйăрне.
Вăхăт çитсен тăрас пулать
Ятне тĕрĕс калас пулать.

Юрласа пĕтерсен, çаврăнма чарăнаççĕ. Юрлакансенчен пĕри хыçалтан пырса Мишшăн куçне хуплать. Кам хупланине пĕлсен, Мишша вăйă картине тăрать, куç хуплаканĕ карта варрине ларать.

## Теми: «Çăмха»
## Н. Васильевăн «Çăмха» юмахĕпе паллаштарни

***Ĕç тĕллевĕ:*** юмахсене кăмăлтан итлеме вĕрентесси, ачасен кăмăл-туйăм лексикине пуянлатасси, харкам кăмăлне хусканусем, интонаци, мимика урлă палăртма вĕрентесси.

***Кирлĕ хатĕрсем*:** юмахра тĕл пулакан тетте чĕр чунсем е чĕр чунсен ӳкерчĕкĕсем, çăмха, фланелеграф.

### Ĕ ç й ĕ р к и

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пăхăр-ха ман алăра мĕн куратăр? (*Çăмха.*) Çакăн пек çип çăмхине аннĕр-асаннĕрсенне курнă пуль ĕнтĕ. Аса илĕр, çип мĕн тума кирлĕ? (*Ачасем хуравлаççĕ.*) Çапла, ахаль çăмхасенчен чăнах та эсир асăннă нуски-чăлха, кофта-калпак çыхаççĕ. Анчах манăн çăмха вара ахаль çăмха мар çав. Вăл – асамлă çăмха. Сире ун çинчен юмах каласа парам-и? «Çăмха» – Николай Васильев çырнă. Итлĕр.

Воспитатель юмах каланăçем ăна фланелеграф çинче ӳкерчĕксемпе (е теттесемпе выляса) кăтартса пырать.

**Çăмха**

Асанне пуръннă. Унăн кивĕ арча пулнă. Асаннен кивĕ арчинче кивелме пĕлмен Çăмха пулнă.

Ватă асанне пĕррехинче арчине ухтарма тытăнать. Çав вăхăтра арчара выртакан асамлă Çăмха урайне тухса ӳкет. Урайне тухса ӳксенех çав Çăмхана чун кĕрет. Вара асамлă Çăмха картишне кусса тухать.

Кунта вăл малтанах авăк хӳреллĕ Автана курать.

– Кам эсĕ? – тĕлĕнсе ыйтать Автан.

– Эпĕ Çăмха пулатăп,– тет Çăмха.

– Эсĕ мана кирлĕ мар, кус малалла! – тет Автан.

Çăмха малалла кусать. Кĕçех пирĕн Çăмха каçăр майракаллă Качака умне çитсе тăрать.

– Кам эсĕ? – тĕлĕнсе ыйтать Качака.

– Эпĕ Çăмха пулатăп, – тет Çăмха.

– Эсĕ мана кирлĕ мар, кус малалла, – тет Качака.

Çăмха малалла кусать. Кĕçех пирĕн Çăмха кăтра çăмлă Сурăх умне çитсе тăрать.

– Кам эсĕ? – тĕлĕнсе ыйтать Сурăх.

– Эпĕ Çăмха пулатăп, – тет Çăмха.

– Эсĕ мана кирлĕ мар, кус малалла, – тет Сурăх.

Çăмха малалла кусать. Кĕçех пирĕн Çăмха мăн майракаллă Ĕне умне çитсе тăрать.

– Кам эсĕ? – тĕлĕнсе ыйтать Ĕне.

– Эпĕ Çăмха пулатăп, – тет Çăмха.

– Эсĕ мана кирлĕ мар, кус малалла, – тет Ĕне.

Çăмха малалла кусать. Кĕçех пирĕн Çăмха пуклак сăмсаллă Сысна умне çитсе тăрать.

– Кам эсĕ? – тĕлĕнсе ыйтать Сысна.

– Эпĕ Çăмха пулатăп, – тет Çăмха.

– Эсĕ мана кирлĕ мар, кус малалла, – тет Сысна.

Çăмха малалла кусать. Кĕçех пирĕн асамлă Çăмха хаяр саслă Йытă умне çитсс тăрать.

– Кам эсĕ? – тĕлĕнсе ыйтать Йытă.

– Эпĕ Çăмха пулатăп, – тет Çăмха.

– Эсĕ мана кирлĕ мар, кус малалла, – тет Йытă.

Çăмха малалла кусать. Кусса пынă çĕртех хайхи тăп чарăнса тăрать. Мĕн пулчĕ? Мĕншĕн малалла кусмасть-ха Çăмха? Ах, инкек – çавра Çăмха сӳтĕлсе вĕçне тухнă иккен. Мĕн тумалла? Ним тума та çук – шухăшлас пулать. Кĕçех сӳтĕлсе пĕтнĕ Çăмха пуçне пĕр ăслă шухăш пырса кĕрет.

«Кун чухлĕ курса çӳренипе çитет пулĕ», – тет вăл хăйĕн ăшĕнче. Çапла шухăшласа илет те каялла çăмхаланса ватă асаннен кивĕ арчине кĕрех выртать.

Арчара выртать Çăмха – халь вĕçлем-ха юмаха.

(*Н. Васильев.*)

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, сире юмах килĕшрĕ-и? (*Ачасем хуравлаççĕ.*)

– Вăл мĕнле те пулин тепĕр юмаха аса илтермерĕ-и?

– Çав юмахăн ячĕ мĕнлеччĕ-ши?

– Йăва çул çӳревре мĕне-мĕне тĕл пулнине ас тăватăр-и? (*Аса илеççĕ.*)

– Атьăр, ачасем, Çăмха тĕл пулăвĕсене выляса кăтартар.

Воспитатель теттесем валеçсе парать. Кашни чĕр чун патне черечĕпе Çăмхапа пырать. Ачасем юмахри дилога аса илсе калаççĕ:

– Кам эсĕ. – тĕлĕнсе ыйтать ... .

– Эпĕ Çăмха пулатăп, – тет Çăмха.

– Эсĕ мана кирлĕ мар, кус малалла, – тет ... .

В о с п и т а т е л ь. Юмах мĕнле вĕçленет?

– Арчана кĕрсе выртах ĕнтĕ халь, Çăмха. Тепре тĕл пуличчен!

– Çăмха мĕншĕн арчана таврăнать?

– Юмах вĕçĕ килĕшрĕ-и сире?

Тепĕр хутĕнче ачасене итленĕ юмаха аса илсе ун модельне калăплама, ун тăрăх юмах содержанине асăмлама вĕрентсен аван.

## Теми: «Çăмха»
## Н. Васильевăн «Çăмха» юмахне аса илни

***Ĕç тĕллевĕ:*** юмахсене кăмăлласа итлес туйăма аталантарасси, ачасен кăмăл-туйăм лексикине малалла пуянлатасси, харкам кăмăлне ӳкерчĕксем урлă палăртма вĕрентесси.

***Кирлĕ материал:*** çăмха, çавракасем ӳкернĕ пысăк хут листи (ватман), кăранташсем.

### Ĕ ç й ĕ р к и

В о с п и т а т е л ь. Иртнинче эпир «Йăва» юмах евĕрлĕ тепĕр юмах вуланăччĕ. Аса илĕр-ха, ячĕ мĕнлеччĕ? (*Ачасем аса илеççĕ.*) Акă вăл пирĕн асамлă Çăмха. (*Кăтартать.*)

– Çăмха картишĕнче мĕнле чĕр чунсене тĕл пулчĕ? Айтăр, вĕсене пĕрле аса илер. Кашнинех çак çаврашкасемпе паллă тăвăпăр (*Хут листин тĕрлĕ вырăнĕнче 6 çавракa ӳкернĕ.*)

– Чи малтанах Çăмха мĕне тĕл пулчĕ? Юмахра ăна мĕнле автан тенĕччĕ?

– Çапла, чи малтан Çăмха авăк хӳреллĕ Автана тĕл пулчĕ. Автана хӳрине ӳкерсе парар. (*Çаврашка çумне хӳре ӳкерет.*)

– Унтан мĕне тĕл пулчĕ?

– Качака çинчен мĕн каланăччĕ юмахра?

– Каçăр мăйракаллă Качакана мăйракине ӳкерсе парар апла.

Çапла кăтра çăмлă Сурăха – кăтра çăмне, мăн мăйракаллă Ĕнене – мăйракине, пуклак сăмсаллă Сыснана – сăмсине, хаяр саслă Йытăна çаврăнса тăракан хӳрепе хăлхине ӳкерсе параççĕ.

– Атьăр халĕ çак ӳкерчĕксем тăрăх юмаха аса илер.

Воспитатель юмах калама пуçлать. Çăмхана кашни ӳкерчĕк патне илсе пырать.
Ачасем юмаха ушкăнпа аса илеççĕ.
Унтан воспитатель теттесене ачасене валеçсе парать. Юмаха хăйсене аса илме сĕнет.

## Теми: «Тетте»
## В. Давыдов-Анатри куçарнă «Тетте» сăвăпа паллаштарни

***Ĕç тĕллевĕ:*** ачасене сăвăпа паллаштарасси, хĕрхенӳ туйăмĕ çуратасси, сăвва аса хывма пулăшасси.

***Кирлĕ материал***: тетте упа.

### Ĕ ç й ĕ р к и

Воспитатель ачасене теттесен кĕтесне пуçтарăнма чĕнет.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пăхăр-ха, пăхăр, упа çурине мĕн пулнă?! Упа урайĕнче выртать: «*Ӳкрĕ упа урайне*».

Сăвă йĕркисене воспитатель кунта та, малалла та сассине улăштарса палăртуллă калать.

– Мĕн пулнă-ши ăна?

– Ай-у-уй, ун ури хуçăлнă. (*Ачасене упан «ыраттарнă» урине кăтартать.*) «*Ӳкрĕ упа урайне. Хуçрĕ хăрах тяппине».* Ачасем, атьăр-ха пулăшар ăна.

Воспитатель бинт илет те калаçа-калаçа упа çурин урине çыхса ярать.

В о с п и т а т е л ь. *«Эпĕ ăна пулăшатăп... Хĕрхенетĕп эп ăна, хамăн лайăх теттене».* Эпир ку упана юрататпăр, çапла вĕт? Вăл лайăх тетте: «*Хĕрхенетĕп эп ăна, хамăн лайăх теттене».* Лена, юрататпăр-и эпир упа çурине? Вăл лайăх-и? Хĕрхенсе, ачашласа каласам упана:

Л е н а.

Хĕрхенетĕп эп ăна,
Хамăн лайăх теттене.

Воспитатель ку йĕркесене тата 2-3 ачана упана хĕрхенме сĕнсе калаттарать.

В о с п и т а т е л ь. Коля та хĕрхенет упана. Ачашласам, эсĕ те, Коля, каласам хăв упана хĕрхенни çинчен.

К о л я.

Хĕрхенетĕп эп ăна,
Хамăн лайăх теттене.

В о с п и т а т е л ь. Маттур, ачасем! Акă пулчĕ те ĕнтĕ. Пулăшрăмăр упа çурине. Ачасем, эпĕ сире çак упа çури çинчен сăвă вуласа парам-и?

**Упа**

Ӳкрĕ упа урайне,
Хуçрĕ хăрах тяппине.
Хĕрхенетĕп эп ăна,
Хамăн лайăх теттене.
*(А. Барто. В. Давыдов-Анатри куçарнă.)*

– Ачасем, сире, сăвă килĕшрĕ-и? Упа çурине килĕшрĕ-ши сăвă? Эпĕ ăна тепре вуласа парам-ха. Итлетĕр вăл. (*Калать.*)

– Ачасем, упана сăвă питĕ килĕшнĕ иккен. Тен, эсир те упана савăнтарас тетĕр? Апла ăна сăвва тепре каласа парсамăр.

Воспитатель ытти куçарусемпе те усă курма пултарать.

Мишук ӳкрĕ урайне,
Тăпăлтарнă урине.
Килĕшет Мишук мана,
Пăрахмастăп эп ăна.
*(А. Барто. Н. Ыдарай куçарнă.)*

***

Мишкă ӳкнĕ урайне,
Суранлатнă тяппине.
Упана эп хĕрхенетĕп,
Тяппине хамах сиплетĕп.
*(А. Барто. Н. Ыдарай куçарнă.)*

***

Мишука пĕри пăрахнă.
Урине те хуçнă шаймăк.
Эп ăна пĕччен хăвармăп,
Ма тесен вăл питĕ лайăх.
*(А. Барто. П. Ялгир куçарнă.)*

Килĕшекен сăвăпа çӳлерех палăртнă йĕркепех ĕçлемелле.

## Теми: «Хĕвел, пăх, хĕвел, пăх!» Чĕнӳ-йыхрав сăввипе паллаштарни

***Ĕç тĕллевĕ****:* ачасене чĕнӳ-йыхрав сăввисемпе паллаштарасси, вĕсене хар-пăр хăй ĕçĕ-хĕлĕнче усă курас кăмăл çуратасси.

***Кирлĕ материал***: тĕрлĕ тĕслĕ кăранташсем, пукане, тетте уяр, хутран касса кăларнă çулçă, хĕвел ӳкерчĕкĕ (е хутран касса кăларнă силуэчĕ. Ăна тумлантармалла: касса кăларнă кĕпе тăхăнтармалла, саппун, тутăр çыхтармалла).

### Ĕ ç й ĕ р к и

Воспитатель ачасене чăваш тумĕ тăхăннă пуканепе паллаштарать. Ăна сăнлама сĕнет – пукане мĕнле, мĕн тăхăннă. Кун хыççăн вăл пуканерен çапла ыйтать:

*– Пукани, пукани,*
*Ăçта каян, пукани?*

Пукане «хуравламасть».

– Лена, пуканерен эс ыйтсам, тен сана хуравлĕ?

Воспитатель тепĕр 2-3 ачана ыйтма хистет:

*– Пукани, пукани,*
*Ăçта каян, пукани?*

Пукане «шарламаннине» кура воспитатель ачасене пурте пĕрле ыйтма сĕнет. Пукане тинех «хуравлать»:

*– Тусăм патне каятăп.*

– Пукани эпир пурте харăссăн ыйтасса кĕтнĕ иккен. Эпĕ малалла ыйтам-ха:

*– Унта мĕнле çитетĕн?*

Пукане хуравлать:

*– Ташла-ташла çитетĕп.*

– Ачасем, Пуканепе кам калаçасшăн? Воспитатель сăвва аса илтерет:

*– Пукани, пукани,*
*Ăçта каян, пукани?*
*– Тусăм патне каятăп.*
*– Унта мĕнле çитетĕн?*
*– Ташла-ташла çитетĕп.*

Ачасем калаçнă хыççăн воспитатель Пуканене ăсатса яма сĕнет.

– Пукани, ачасем сана ăсатма та пултараççĕ. Тен, пĕччен утма кичем пулĕ?

Пӳлĕм тăрăх утаççĕ. Воспитатель палăртнă вырăна – маларах хатĕрлесе хунă уяр патне – çитеççĕ. Воспитатель Пукане вырăнне калаçать:

– Пăхăр-ха, кунта мĕн пур?!

Ачасем хуравламасан воспитатель хăй калать.

– Пукане, ку уяр. Вăл пире пулăшма та пултарать. Çумăр çумĕ-и, пире çул çинче йĕпетмĕ-и? Ыйтар унран. Кĕр енне çумăр час-часах çума пуçлать вĕт.

Воспитатель уяра ал тупанĕ çине илсе такмаклать:

*Уяр! Уяр!*
*Уяра пулсан,*
*Çӳле-е кай!*
*Çумăра пулсан,*
*Аяла-а кай!*

– Халĕ сăнасси анчах юлать: çумăр çăвассине уяр мĕнле пĕлтерет?

– Çапла, çумăр çăвать пулсан уяр аяла каять. Çанталăк уяр пуласса вăл мĕнле кăтартать?

– Тĕрĕс, ун пек чух уяр çӳле-е каять.

– Пукане, эсĕ те ыйтсам уяртан.

Пукане вырăнне сăвва воспитатель калать.

Воспитатель ачасене те ыйтма хистет. Иккĕ-виççĕшĕ каланă хыççăн ачасене уяр хăйне мĕнле тытнине сăнама ыйтать. Хăй уяр çулçă айне «кĕрсе

ларнине» кăтартать.

– Тем, пĕлĕтленесшĕн мар пуль те? Хĕвел те тарса пытаннă.

– Хĕвеле чĕнер пуль, ачасем, Пукане тусĕ патне чиперех çитме пултартăр:

*Хĕвел, пăх, хĕвел, пăх!*

*Ачу шыва кайрĕ вĕт.*

Воспитатель хĕвел ӳкерчĕкне алла илет:

– Акă вăл хĕвел ачи. Эпĕ ăна туртса кăлартăм.

– Ачасем, тумлантарар пуль хĕвел ачине.

Хĕвел ачин тумне тĕрлĕ тĕслĕ кăранташсемпе ӳкерме пулать. Хĕвелне хутран касса кăларнă пулсан касса кăларнă тумтирпе усă курма юрать.

Ачасем Пуканепе воспитателе хĕвеле «тумлантарма» пулăшаççĕ: пурçăн кĕпе тăхăнтараççĕ, пурçăн саппун çактараççĕ, пурçăн тутăр çыхтараççĕ.

Воспитатель «тăхăнтарнă» май мĕн тунине каласа пырать:

*Пурçăн кĕпе тăхăнтартăм,*

*Пурçăн саппун çактартăм,*

*Пурçăн тутăр çыхтартăм.*

Юлашкинчен воспитатель хĕвел ачине «Пылпа кулач та çитерем-ха» тесе аллине ӳкерчĕк енне тăсать. Ачасене те (иккĕш-виççĕшне) хăналама ыйтать (*Коля, эсĕ те пылпа кулач çитер*), сăмахĕсене калама хистет.

Воспитатель хĕвеле тепĕр хут чĕнме ыйтать:

– *Хĕвел, пăх, хĕвел, пăх!*

*Ачу шыва кайрĕ вĕт,*

*Турчăкапа туртса кăлартăм,*

*Пурçăн кĕпе тăхăнтартăм,*

*Пурçăн саппун çактартăм,*

*Пурçăн тутăр çыхтартăм,*

*Пылпа кулач çитертĕм.*

Пукане те хăйĕн хĕвеле чĕнсе калас кăмăл пуррине пĕлтерет.

Пукане вырăнне чĕнӳ сăввине воспитатель тепĕр хут янраттарать. Малалла каяççĕ.

– Акă пирĕн Пукане тусĕ патне çитрĕ те.

Воспитатель Пуканене ачасен теттисем патне илсе пырать. Пукане кунти ытти теттесемпе пуканесене сывлăх сунать.

Ачасем выляма пуçлаççĕ.

**Теми: «Юратнă теттесем!»**
**Пĕлекен сăвăсене аса илни**

***Ĕç тĕллевĕ:*** ачасене асра юлнă сăвăсене палăртуллă каласа пама хавхалантарасси, поэзи хайлавĕсене кăмăллăн йышăнма вĕрентсе пырасси.

***Кирлĕ материал**:* А. Бартон «Игрушки», П. Ялкирĕн «Ача садĕнче» кĕнекисем; теттесем: мечĕксем, упасем, лашасем, качака такисем, йытă, кустăрмаллă пысăк лаша-тетте.

**Ĕ ç  й ĕ р к и**

Воспитатель ачасене илĕртӳллĕ кĕнеке кăтартать, ăна пĕрле пăхма сĕнет.

– Ку сăвă кĕнекинче теттесем çинчен çырнă. Эсир вĕсенчен хăшĕ-пĕрне пĕлетĕр те. Атьăр-ха, пĕрле аса илер вĕсене.

Воспитатель ачасене ӳкерчĕк кăтартать, унта мĕнле тетте ӳкернине, вăл еплерех пулнине калама ыйтать. Унтан çак тетте çинчен сăвă каласа парать. Ачасем воспитательпе пĕрле каласа пыма тăрăшаççĕ.

Кун хыççăн воспитатель ачасене сĕтел патне пыма чĕнет. Сĕтел çинче теттесем выртаççĕ, вĕсене салфеткăпа хупланă. Салфеткăна сирсе, педагог ачасене пĕрер тетте суйлама пулăшать, карталанса тăма чĕнет.

– Теттесене хăвăр умăра лартсамăр. Вĕсем хăйсем çинчен сăвăсем итлесшĕн. Акă упа çури сăвă каласа пама ыйтать. Кама упа çури лекнĕ, сăввине çавă каласа парать.

**Упа**

Ӳкрĕ упа урайне,  
Хуçрĕ хăрах аллине.  
Хĕрхенетĕп эп ăна,  
Хамăн лайăх теттене.  
(Мишука пĕри пăрахнă.  
Урине те хуçнă шаймăк.  
Эп ăна пĕччен хăвармăп,  
Ма тесен вăл питĕ лайăх.)  
*(А. Барто.)*

Малалла çак йĕркепех ытти теттесем çинчен те сăвă калаççĕ.

**Лаша**

Лашана эп юрататăп,  
Çилхине хитре туратăп,  
Якататăп хӳрине те,  
Хăнана кĕç вĕçтеретĕп.  
(*А. Барто.*)

**Качака таки**

Качака таки пур ман
Ăна эпĕ хам пăхатăп.
Çухалсан вăл ăнсăртран,
Курăк хушшинче шыратăп

(*А. Барто.*)

Пукане тытнă ача «Мечĕк» сăвва калать.

**Мечĕк**

Макăрма Танюк пикенчĕ –
Шыва ӳкнĕ пĕчĕк мечĕк.
Чарăн, ан йĕрсем, Танюк.
Шывра мечĕк путас çук.

(*А. Барто.*)

Воспитатель ачасене теттесемпе выляма сĕнет.

Заняти вĕçĕнче воспитатель ачасене çĕнĕ сăвăпа паллаштарать. Вăл малтан аяккарах тăратса витсе хунă тетте патне пырать, уçса кăтартать:

– Ман тетте те хăйĕн çинчен сăвă илтесшĕн. Ку мĕнле тетте иккенне пăхăр-ха.

Воспитатель ачасене лашан çилхине кăтартать:

– Ун çилхе пур, çилхи кăтра. Урисем вара мĕнле?

– Урисем кустăрмаллă! Вăт ман лаша мĕнлескер! Ачасем, лаша çинчен тепĕр сăвă итлĕр.

**Лаша**

Ман лашан кăтра çилхе,
Кустăрмаллă урисем.
Эп ача садне çил пек
Унпа çитĕп вĕçтерсе.

(*П. Ялгир.*)

– Ачасем, сирĕн ярăнас кăмăл çук-и?

– Паллах, юрать, лаша сире кĕтет. Ун çинчен сăвă калăр çеç, вăл сирĕн умма çитсе тăрать те.

Воспитатель ачасене сăвăн малтанхи икĕ йĕркине аса илме пулăшать: *Ман лашан кăтра çилхе...*

Калакан ачана лаша çине лартса ярăнтарать. Кăмăл пуррисем пурте, паллах, ярăнаççĕ.

## Теми: «Çарăк»
## Вырăс халăх юмахĕпе паллаштарни

***Ĕç тĕллевĕ:*** ачасене юмаха аса илме, сюжетне, геройĕсене моделлеме пулăшасси; юмахри самантсене хăйсен вăйӗисенче усă курма хăнăхтарасси.

***Кирлĕ материал***: «Çарăк» юмах тăрăх йĕркеленĕ пӳрне театрĕ, çавраш-касем ӳкернĕ шурă хут листи, кăранташ, «Çарăк» юмах кĕнеки, тетте шăши.

### Ĕ ç й ĕ р к и

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пăхăр-ха мĕнлерех хăна килнĕ паян пирĕн пата!

Воспитатель ачасене тетте шăши кăтартать, ăна сăнласа пама ыйтать.

– Шăши мĕнле?

– Юмахсенче ăна мĕнле чĕнеççĕ? (*Шăши тус.*)

– Пĕлетĕр-и, ачасем, çак Шăши тус тем пысăкăш çарăка туртса кăларма пултартăм тесе мухтанать. Çакăн çинчен калакан юмах кĕнекине те илсе килнĕ. Ларсамăр меллĕрех, каласа парам сире ку юмаха, тимлĕ итлĕр.

Воспитатель ачасене «Çарăк» юмаха каласа парать, кĕнекери ӳкерчĕксене кăтартать. (Ачасем те педагогпа пĕрле каласа пыма пултараççĕ).

### Çарăк
*(Вырăс халăх юмахĕ)*

Пĕр старик çарăк акрĕ тет те çапла калать тет:
– Ӳс, çарăкăм хăвăртрах.
Ӳс, çарăкăм, пысăкрах,
Пул, çарăкăм, тутлăрах!

Çарăкĕ пы-ысăк ӳссе çитĕнчĕ, тет. Кайрĕ старик çарăкне кăларма. Туртать-туртать, ниепле те туртса кăлараймасть.

Чĕнчĕ старик карчăкне.
Карчăк тытрĕ старикрен,
Старикки – çарăкран,
Туртаççĕ, туртаççĕ,
Туртса кăлараймаççĕ.
Чĕнчĕ карчăк мăнукне.
Мăнук тытрĕ карчăкран,
Карчăк тытрĕ старикрен,
Старикки – çарăкран,
Туртаççĕ, туртаççĕ,
Туртса кăлараймаççĕ.
Чĕнчĕ мăнук анчăка.
Анчăк тытрĕ мăнукран
Мăнук тытрĕ карчăкран,
Карчăк тытрĕ старикрен,
Старикки – çарăкран,
Туртаççĕ, туртаççĕ,

Туртса кăлараймаççĕ.
Чăнчĕ анчăк кушака.
Кушак тытрĕ анчăкран,
Анчăк тытрĕ мăнукран,
Мăнук тытрĕ карчăкран,
Карчăк тытрĕ старикрен,
Старикки – çарăкран,
Туртаççĕ, туртаççĕ,
Туртса кăлараймаççĕ.
Чĕнчĕ кушак шăшине.
Шăши тытрĕ кушакран,
Кушак тытрĕ анчăкран,
Анчăк тытрĕ мăнукран,
Мăнук тытрĕ карчăкран,
Карчăк тытрĕ старикрен,
Старикки – çарăкран,
Туртаççĕ, туртаççĕ,
Туртсах кăларчĕç.

Итленĕ хыççăн, ачасен кăмăлне кура, воспитатель кĕске калаçу йĕркелет.

– Ачасем, сире, юмах килĕшрĕ-и?

– Çарăка туртакансене кам ас туса юлчĕ?

– Хăшĕ пырсан туртса кăларчĕç?

– Шăши, эс ытла ан мухтан. Эсир пурте пĕрле тăрăшнă вĕт. Кирек мĕнле ĕç те пĕрле тăрăшсан çеç ăнать.

– Ваттисем «Пĕрлешӳре – вăй», «Эртел тăвайман ĕç те çук» теççĕ. Чăнах та çапла. Пурте пĕрле пулса карр! тăчĕç те – ĕçĕ те ăнчĕ.

– Ачасем, ку юмаха выляр мар-и? Кам хăш геройне вылясшăн?

Воспитатель ачасене пӳрне театрĕнчи сăнарсене валеççе парать. Ушкăнпа хăшĕ хăшĕн хыççăн вылямаллине, мĕн каламаллине, кашни сăнар хăтланăшне сӳтсе яваççĕ. Унтан юмаха выляççĕ.
Ертсе пыраканĕ – воспитатель.
Вăйă вĕçлесен воспитатель ачасене сĕтелсем хушшине ларма сĕнет, çаврашкасем ӳкернĕ хут листисене пăхма ыйтать.

В о с п и т а т е л ь. Хут листи çинче эсир мĕн куратăр? (*Нумай çаврака.*) Айтăр асамçăлла вылятпăр. Асамçăсем пулăпăр та çак çаврашкасенчен «Çарăк» юмахри геройсене туса хурăпăр. Пĕрремĕш çаврашки – çарăк. Ачасем, çарăк мĕнлерех?

А ч а с е м. Пысăк, сарă, çаврака.

Воспитатель ачасене çарăкăн формине, калăпăшне алăсемпе кăтартма ыйтать.

В о с п и т а т е л ь. Çарăкăн тăрринче çулçисем пур. Ӳкерсе хурар-ха вĕсене. (*Ӳкерет.*) Çарăка кăларма чи малтан кам килет? (*Старик.*) Вăл мĕнлерех?

А ч а с е м. Ватă, ун сухал пур. (*Алăсемпе кăтартаççĕ.*)

В о с п и т а т е л ь. Карчăк килчĕ. Карчăкĕ мĕнле? Вăл пуçне мĕн çыхнă?

А ч а с е м. Карчӑк ватӑ, пуҫӗнче тутӑр.

В о с п и т а т е л ь. Мӑнукӗ мӗнле?

А ч а с е м. Пӗчӗкскер, ҫӳҫне хӑюпа пуҫтарса ҫыхнӑ.

В о с п и т а т е л ь. Йытӑ мӗнле? (*Ачасем хуравлаҫҫӗ.*) Тӗрӗс: хӳрине кӗлентӗр пек ҫавӑрса хунӑ. Ҫапла ӳкерсе хурӑпӑр та ӑна, ку анчӑк пулни тӳрех паллӑ пулать. Кушак мӗнле?

А ч а с е м. Хӑлхи шӗвӗр, мӑйӑхӗ вӑрӑм.

В о с п и т а т е л ь. Шӑши мӗнле? (*Пӗчӗк.*) Мӗн пур-ха ун? Ҫинҫе, вӑрӑм... Ҫип пек ... (*Хӳре.*) Атьӑр, ӑна эпир ҫавӑн пек хӳре ӳкерсе парӑпӑр.

Модельсем хатӗр. Ачасем воспитатель пулӑшнипе юмахри персонажсене тепӗр хут аса илсе тухаҫҫӗ.

– Ҫарӑк ҫавракa, ҫулҫисем лапка.
– Старик ватӑ, сухаллӑ.
– Карчӑк ватӑ, тутӑр ҫыхнӑ.
– Мӑнукӗ пӗчӗк, ҫӳҫне хӑю ҫыхнӑ.
– Анчӑкӑн хӳри кӗлентӗр пек.
– Кушакӑн хӑлхи шӗвӗр, мӑйӑхӗ вӑрӑм.
– Шӑшин пӗчӗк: унӑн хӳри вӑрӑм, ҫип пек ҫинҫе.

Воспитатель модельсене пӑтраштарса ярать, ачасене вӗсене юмахри йӗркепе пуҫтарма ыйтать.

Калаҫу тӑсӑларах кайрӗ пулсан, ачасем ӗшеннине асӑрхатӑр пулсан, модельсемпе ӗҫлессине тепрене хӑварсан та юрать.

### Теми: «Пан улми»
### В. Давыдов-Анатрин «Пан улми», В. Ахунӑн «Чӗрӗп» сӑввисемпе паллаштарни

***Ӗҫ тӗллевӗ***: ачасене пан улмисем ҫинчен калаҫӑва явӑҫтарасси, сӑвӑсемпе паллаштарасси, «Пан улми» сӑвва аса хывма пулӑшасси.

***Кирлӗ материал***: карҫинкка, пан улмисем (антоновка, симиринка, анис, ранет, имант (пулмасан – ӳкерчӗксем те илме юрать)), чӗрӗп ӳкерчӗкӗ.

### Ӗ ҫ й ӗ р к и

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эсир тупмалли юмахсем юрататӑр вӗт – итлӗр, ку мӗн пулать?

*Чӑп-чӑмӑркка, чӑмӑркка,*
*Турат ҫинче йӑлтӑркка.*

– Тӗрӗс, ку вӑл пан улми. Мӗнле пӗлтӗр?

– Ҫапла, пан улми ҫавракa. Мӗншӗн ун ҫинчен йӑлтӑркка тенӗ вара?

– Курсамӑр, манӑн карҫинккара мӗн пур? Мӗн тӗрлӗ пан улми парнелемерӗ пуль асамлӑ кӗркунне!? Хӑшӗ ӗнтӗ кунта йӑлтӑркки?

– Эпĕ те çапла шутлатăп – хĕрлĕ пан улми çинчен çапла каланă пуль.

– Ачасем, эсир мĕнле пан улмисем пĕлетĕр?

– Сире карçинккари пан улмисене кăтартам-ха. Ку сарă симĕс тĕсли – антоновка. Ку вара – симиринка. Тĕсĕ ун çутă симĕс. Ку тата – ранет. Пăхăр, мĕнле хитре вăл: пĕр айăкки – сарă, тепĕр енĕ вара – хĕрлĕ. Ку – анис. Вăл хĕп-хĕрлĕ. Ку – хĕрлĕ кăвак тĕсли – имант.

– Василий Давыдов-Анатри сăвăçă «Пан улми» ятлă питĕ хитре сăвă çырнă. Каласа парам сире, итлĕр.

**Пан улми**

Натали,<br>Сан валли<br>Илсе килтĕм<br>Пан улми:<br>Чи хĕрли,<br>Пит тутли –<br>Анис улма<br>Текенни.

(*В. Давыдов-Анатри.*)

– Килĕшрĕ-и сире сăвă? Шутласа пăхăр-ха, Натали пан улмисенчен хăшне юратать-ши?

– Çапла пулĕ, Натали анис пан улмине юратать пуль ĕнтĕ. Мĕнле каланă сăвăра ку пан улми çинчен?

– Çапла – чи хĕрли, пит тутли, – тенĕ. Ман та сире анис пан улмине ас тивтерес килет.

Воспитатель ачасене хăналать (алла пан улмисене çуса, касса хунă турилкке илет), панă чухне ачан ятне калать (Катя, ...*Сан валли / Илсе килтĕм пан улми: / Чи хĕрли, /Чи тутли, /Анис улма текенни.* Маша, сан валли... Сережа, сан валли... тата ыт те. Сăвă йĕркисене воспитатель уйăрарах, палăртуллă калать).

– Çиме пултартăмăр, пуçтарма пултарăпăр-и?

– Ăçта ӳсеççĕ пан улмисем? (*Садра.*)

– Мĕнле йывăç çинче?

– Халĕ сада кайăпăр, пан улми татăпăр.

Воспитатель ачасене выляттарать – ачасем сике-сике панулми татанçи, воспитателĕн карçинккине хуранçи тăваççĕ.

В о с п и т а т е л ь (*ачасене хавхалантарса*). Эх, çӳллĕ-çке улмуççи тураттисем! Сиксе те çитмелле мар. Маттур, Коля! Мĕнле пысăк пан улми татрĕ вăл. Пар-ха ăна кунта, курçинккана хурам. (*Пан улмине иленçи туса карçинккана хуранçи тăвать*).

Юлашкинчен воспитатель: «Тулчĕ карçинкка – йывăр йăтма, туп-тулли тултартăмăр!» – тесе ачасене тав тăвать, каялла кайса ларма сĕнет.

В о с п и т а т е л ь («тулли» карçинкна «аран» йăтса). Мĕн чухлĕ пан улми пирĕн! Кама хăналар-ши? Пĕлетĕп, пĕлетĕп, аса илтĕм кам вĕсемшĕн питĕ хавас пулассине. Вăл хĕле хатĕрленет. Кăмпа анчах мар, пан улми те кăмăллать. Чухлаймарăр-и ку мĕнле чĕр чун пулнине? Тимлĕ итлĕр, вара пĕлĕр.

**Чĕрĕп**

Сысна мар вăл – укçаллă,
Хурт пек кĕске туналлă.
Чуппийĕ йăпăр-йăпăр,
Уттийĕ кăпăр-кăпăр.
Инкек çитсен – çăмхаллă,
Ахаль чухне – ураллă.
Çĕлен унран пытанĕ,
Чикенлĕ ун сăхманĕ.
Тукмак ăн тытаймĕ,
Тилли те кап хыпаймĕ.

(*В. Ахун.*)

– Сăмах мĕнле чĕр чун çинчен пырать?

– *Инкек çитсен – çăмхаллă* тени мĕне пĕлтерет-ши?

– Тĕрĕс, кашкăр та, тилĕ те, çĕлен те хăрушă мар пĕчĕк чĕрĕпе. Акă вăл – харсăрскер.

Воспитатель ачасене тетте чĕрĕп е унăн ÿкерчĕкне кăтарать.

– Халĕ чĕрĕп туса хамăр пуçтарнă пан улмисемпе хăналар. Малтан хам хăналам. *(«Карçинккаран» пан улми «илет те» чĕрĕпе парать.)*

Чĕрĕп,
Сан валли
Илсе килтĕм
Панулми:
Чи хĕрли,
Пит тутли –
Анис улма
Текенни.

Ачасем те чĕрĕпе «хăналаççĕ». Воспитатель ачасене сăвва калама пулăшать. Калакан ачана чĕрĕппе выляса илме май парать.

**Теми: «Чăх-чĕп картишĕнче»**
**Кайăк-кĕшĕк çинчен калакан сăвăсемпе паллаштарни**

***Ĕç тĕллевĕ****:* ачасене çĕнĕ сăвăсемпе паллаштарасси, вĕсене ăнланма пулăшасси; сăвăсен содержанийĕ тăрăх калаçма, ăна хусканусем урлă кăтартма хистесси.

***Кирлĕ материал***: тетте кăвакал, кăвакал чĕппи шывра ишнине сăнлакан ÿкерчĕк, чăх чĕпписен ÿкерчĕкĕ.

**Ĕ ç й ĕ р к и**

Воспитатель ачасене чăх-чĕп картишне чĕнет. Кирлĕ сĕтел патне илсе пырать, тетте кăвакал кăтартать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, ку мĕн? (*Кăвакал.*) Таçта питĕ васкать-ха вăл. Ыйтар мар-и унран?

**Нарт-нарт кăвакал**
– Нарт-нарт кăвакал,
Ăçта каян кăвакал?
– Кĕпер айне каятăп.
– Кĕпер айĕнче мĕскер пур?
– Унта манăн йăвам пур.
– Йăву çинче мĕскер пур?
– Йăвам çинче çăмартам пур.
– Çăмарту çинче мĕскер пур?
– Çăмартам çинче чĕппĕм пур.
Сикрĕ анчĕ Çавала
Тăрса юлтăм хам кăна.

– Кăвакал ăçта васкать?
– Мĕншĕн кĕпер айне васкать вăл?
– Халь чĕппи ăçта-ши ĕнтĕ ун? («*Сикрĕ анчĕ Çавала»* тенине, ачасене «*Сикрĕ анчĕ вăл шыва»* тесе калаттарма пулать.)

Воспитатель ÿкерчĕк кăтартать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, ÿкерчĕк çине пăхăр. Кунта мĕн ишет-ши? (*Ÿкерчĕк çине пăхса сăвă калать.*)

**Кăвакал чĕппи**
Шывра ишет сар çăмха –
Сÿтĕлместь çиппи.
Çăмха мар вăл, чимĕр-ха,
Кăвакал чĕппи.
(*Н. Васильев.*)

– Кăвакал чĕппине мĕнпе танлаштарнă?
– Мĕншĕн кăвакал чĕппине сар çăмха тенĕ?
– Сӳтĕлмен сарă çăмхах ĕнтĕ.
– Ачасем, кунта та сар çăмхасем мар-и?

Воспитатель ачасене тепĕр ӳкерчĕк кăтартать, унта чăх чĕпписене сăнланă.

В о с п и т а т е л ь. Курсамăр, ачасем, кунта мĕн чухлĕ кăвакал чĕппи!

А ч а с е м. Çу-ук! Кусем чăх чĕпписем.

В о с п и т а т е л ь. Кăвакал чĕпписем мар-и вара вĕсем? (*Тимлĕрех пăхать.)* Э-э-э, чăнах та-çке. Кăвакал чĕпписем мар çав, чăх чĕпписем вĕт-ха ĕнтĕ кусем!

**Чăх чĕпписем**

Чăх чĕпписем кунĕпе
Шимпи-шимпи тăваççĕ,
Хăйсен çепĕç чĕлхипе
Çиме апат ыйтаççĕ.
Шимпи-шимпи чĕпсене
Хĕрхенетĕп чĕререн:
Ĕçме-çиме вĕсене
Хам паратăп ирсерен.
(*Н. Васильев.*)

–Чăх чĕпписем мĕнлерех сас параççĕ? (Калаттарать).
– Çавăн пек шимплетсе хăйсен çепĕç чĕлхипе мĕн ыйтаççĕ вĕсем?
– Эпĕ чăх амăшĕ пулăп, эсир – ман чĕппĕмсем. Уçăлма тухăпăр.

Воспитатель «Вышла курочка гулять» юрă кĕввине ĕнĕрлет, текстпа килĕшӳллĕн хусканусем тăвать.

Тухрĕç чĕпсем уçăлма,
Симĕс курăкне сăхма.
Амăшне итлеççĕ,
Шимп-шимп шиплетеççĕ.

Ăман тупрĕç – çирĕçĕ,
Тăрă шывне ĕçрĕçĕ.
Амăш пек утаççĕ,
Тыр пĕрчи шыраççĕ.

– Ачасем, сире паян чăх-чĕп картишĕнче килĕшрĕ-и?
– Малтан эпир мĕнпе калаçрăмăр?
– Çапла, эпир кăвакалпа курнăçрăмăр, унпа пуплерĕмĕр. Вăл пире кĕпер айĕнчи йăви çинчен каласа пачĕ. Эпир ун чĕппи – сӳтĕлмен сар çăмха – шывра ишнине сăнарăмăр. Чăх чĕпписене те куртăмăр, хамăр та чăх чĕп-

писем пулса тăтăмăр. Алеша та, Катя та шимплетсе симĕс курăк «сăхрĕç». Тата мĕн турăмăр? (*Юратса калаçтарать, кашни ача хăйне мĕн тĕлĕшĕнчен лайăх кăтартнине тупса хаклать – Катя сăнарлă утма пултарчĕ, Сеня тимлĕ итлерĕ, Паша хитре каларĕ... тата ыт. те.*)

**Теми: «Кил карти»**
**Чĕр чунсем çинчен калакан сăвăсемпе паллаштарани**

***Ĕç тĕллевĕ:*** ачасене килти чĕр чунсем çинчен калаçма хистесси, çĕнĕ сăвăсемпе паллаштарасси, вĕсене ăнланма пулăшасси.

***Кирлĕ материал***: ӳкерчĕксем – кăкарнă качака, кăркка, чăх, хăйĕн йăви умĕнчи йытă.

**Ĕ ç й ĕ р к и**

Воспитатель ачасене хăй тавра пуçтарать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, сире паян выльăх картине чĕнетĕп. Пĕрле кайса çаврăнса килер, унти чĕр чунсемпе калаçар. (*Йытă ӳкерчĕкĕ патĕнче чарăнать.*) Ку мĕн?

– Йытă, Кампур ятлă.

– Кампур ăçта тăрать?

– Ку мĕнле пĕчĕк пӳрт? Ыйтам-ха ун çинчен Кампуртан.

**Ленăпа Кампур**

– Çакă пӳртĕн хуçи кам? –
Ыйтрĕ Лена Кампуртан. (*Ыйтрăм эпĕ Кампуртан.*)
Йытă вĕрчĕ:
– Хам-хам-хам!
Манăн пӳрт ку,
Хуçи хам.
Хам-хам-хам!

(*А. Ильин.*)

– Тавах, Кампур. Кăмăллă калаçатăн. Ачасем, малалла кайăпăр. Ку мĕн? (*Качака ӳкерчĕкне кăтартать.)*

– Качака мĕнлескер?

– Çапла, качака сухаллă, мăйракаллă. Мăйракипе вăл тĕкме те пултарать – сĕкĕшме юратаççĕ чарусăр качакасем.

– Качака мĕн çиет? (*Ачасем хуравлаççĕ: курăк, купăста...*).

– Курăкне вăл çитĕр, хуçа панă купăстине те çитĕр. Çамрăк йывăç вуллисене çеç ан кăшлатăр. Йывăççене кăшласа амантсан вĕсем хăрса лараççĕ.

– Качакапа калаçар-ха.

**Ка-ач, ка-ач качака**

Кач, кач качакин
Лăпăс-лăпăс сухалĕ,
Шĕп-шĕвĕркке майраки.
Кăкарам-и хурăнтан,
Кăшт ятлам-и хушăран:
– Çиме çи те çиессе,
Пăрах эсĕ сĕкессе,
Йывăççене ан кăшла,
Ан хуç манăн кăмăла!

(*Н. Ваçанкка.*)

– Чипер юл, качака. Пирĕн малалла каймалла.

– Мĕнле кайăк патне патне çитрĕмĕр çак? Сывă-и, ... (*ачасене калаттарать*) кăркка тус.

– Ну хитре те вара кăркка! (*Ачасене кăрккана сăнаттарать: хӳри – веер пек; сăмси авăк, хĕрлĕ, хăй тĕрлĕ тĕслĕ, пысăк*).

– Халĕ кăрккапа калаçар-ха.

**Кăркка**

– Кăркка тус, кăркка тус,
Капăр туму миçе пус?
Кăркка майне тăсрĕ те:
– Кăлтăр-кăлтăр-кăлтăр! – тет.
Те вăл манпа калаçать,
Те хăй тĕллĕн ятлаçать.

(*Н. Васильев.*)

– Эсир ăнлантăр-и кăрккан хуравне? Мĕн тесе каларĕ-ши? Мĕн терĕ вăл?

– Çапла: «Кăлтăр-кăлтăр-кăлтăр!», – терĕ. Мĕн тени пулчĕ-ши, эсир пĕлместĕр-и?

– Ачасем, ман шутпа... Куçарса парам сире кăркка чĕлхинчен. Акă вăл мĕн каларĕ!

Кăлтăр-кăлтăр-кăлтăр,
Пĕр пуспа та парас çук,
Çĕр пуспа та сутас çук!

Тен, апла та мар? Ку сăмахсене автан каланăччĕ пулас.

– Лена, эсĕ мĕнле шутлатăн?

Воспитатель ачасене калаçтарать. Ачасем хăйсен хуравне «*Кăлтăр-кăлтăр-кăлтăр!*» тенинчен пуçлаççĕ.

– Малалла каяр, тен ыттисем ăнланмалларах калаçаççĕ.

– Акă ĕнтĕ кур ĕнтĕ, çитрĕмĕр (...) чăх патне.

– Ачасем, чăх мĕнлерех? (*Илемлĕскер: самăрскер, хĕрлĕ киккириклĕ, шурă çунатлă.*)

– Чăх мĕн юратать?

– Чăх мĕнле усă кӳрет?

– Чăхран çăмарта туса пама ыйтар мар-и? Эпĕ çăмарта питĕ юрататăп.

**Чăх мана кĕтме хушать**

– Илемлĕ эс, самăр та,
Туса пар-ха çăмарта.
Вара кĕрпе парап вĕт...
– Кĕт-ха кăштах,
Кĕт-кĕт-кĕт!
(*А. Савельев-Сас.*)

– Тем, ăнланаймарăм эпĕ. Çăмарта туса парăп терĕ-и вăл?

Воспитатель ачасене калаçтарать, чăх хуравне евĕрлеттерет.
Занятине вĕçлесе воспитатель ачасене киле таврăнма вăхăт çитнине аса илтерет. Ăçта пулнине, мĕн курнине, мĕн калаçнине асăмлаттарать. Ачасен хастарлăхне ырласа, кăмăлласа хаклать, кашни валлиех ăшă сăмах тупать.

## Теми: «Качака»
## Н. Ваçанккан «Качака» сăввипе паллаштарни

***Ĕç тĕллевĕ:*** ачасене качака çинчен калаçăва явăçтарса пуплевне аталантарасси, çĕнĕ сăвăпа паллаштарасси, ăна ăнланма пулăшасси.

***Кирлĕ материал***: тетте качака, качака валли карта тума материал (конструктор пайĕсене усă курма пулать).

### Ĕ ç й ĕ р к и

Воспитатель ачасене çĕнĕ теттепе интереслентерсе ярать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пăхăр-ха пирĕн пата хăнана мĕн килнĕ? Паллаштарам сире. Ку – каччин-каччин качака. (*Тетте качака е ӳкерчĕк кăтартать, сассине улăштарса качака ячĕнчен калаçма пуçлать.)*

К а ч а к а. Мэ-э, эпĕ каччин-каччин качака! (*Пĕр-пĕр ачана.*) Эсĕ кам пулатăн?

Воспитатель ачана хирĕç хуравлама хавхалантарать.

М а ш а. Ырă кун, каччин-каччин качака. Эпĕ Маша.

К а ч а к а. Сывлăх сунатăп, Маша.

Малалла та çаплах качака кашни ачапа паллашать.

В о с п и т а т е л ь. Пирĕн хăна питĕ илемлĕ вара. Пăхăр-ха, унăн сухалĕ мĕнлерех. Кĕнчеле вĕçĕ пек. Сăнăр-ха, качака мĕн тăвать? Вăрăм сухалне лăпăс-лăпăс суллать. Качакан

*Кĕнчеле вĕç сухалĕ*
*Лăпăс-лăпăс сулланать.*

– Майракине сăнăр-ха тата, мĕнлерех вăл? (*Шĕп-шĕвĕр.*)

*Шĕп-шĕвĕрккe майраки*
*Тăрăнассăн туйăнать.*

– Ачасем, эсир качака çинчен мĕн пĕлетĕр? Каласа парсамăр хамăрăн хăнана.

– Çапла, качака чарусăр та пулма пултарать. Пахча алăкне хупма манса кайсан качака купăстасăр хăварма та пултарать. Тата мĕн юратать-ха вăл? Çакна Никифор Васанккан «Качака» сăввине итлесе пĕлер.

**Качака**

Каччин-каччин качаки
Чарусăра пултарать:
Карта умĕн уткалать,
Хушăк витĕр пăхкалать.

Кĕнчеле вĕç сухалли
Лăпăс-лăпăс сулланать.
Шĕп-шĕвĕрккe майраки
Тăрăнассăн туйăнать.

(*Н. Васанкка.*)

– Сире ку сăвă килĕшрĕ-и? Качакана та килĕшрĕ пулас – тимлĕ итлерĕ.

Педагог сăвва тепĕр хут калать, хайлав содержанийĕ майăн качакапа выляса пырать: карта умĕн уткаланине кăтартать, хушăк витĕр пăхкаланă пек тăвать...

– Атьăр, эпир качакана хамăр теттесен кĕтесне илсе кайса кăтартар. Малтан карта тăвар-ха ун валли.

Воспитательпе ачасем качака валли карта тăваççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Маттур, ачасем! Вăт çакăнта çӳреме пултарать халь каччин-каччин качака. (*Вылянă май сăвва тепре калать, ачасене йĕркесен вĕçĕсене каласа пĕтерме хистет.*)

Каччин-каччин ... (*качаки*)
Чарусăра ... (*пултарать*):
Карта умĕн ... (*уткалать*),
Хушăк витĕр ... (*пăхкалать*).

Кĕнчеле вĕç ... (*сухалли*)
Шĕп-шĕвĕрккe ...(*сулланать*).
Тăрăнассăн ...(туйăнать).

Воспитатель: «Кăшт вылятăр-ха качака сирĕнпе», – тесе теттене ачасене парать. Вĕсем унпа вылянине сăнать.

## Теми: «Ăçта кайрăн кушак тус»
## Йăпатмалли сăвва аса хывни

***Ĕç тĕллевĕ***: ача-пăча сăмахлăхĕн хайлавĕсемпе малалла паллаштарасси, вĕсене вăйăсенче усă курас кăмăла амалантарасси.

***Кирлĕ материал:*** тетте кушак.

### Ĕ ç й ĕ р к и

Ачасем çурма çавра лартса тухнă пукансем çине вырнаçнă. «Мяу» тени илтĕнет.

В о с п и т а т е л ь. Мĕн унта?

А ч а с е м. Кушак.

В о с п и т а т е л ь. Кайса алăка уçса кĕртем. (*Тетте кушакпа таврăнать.*) Ачасем, пăхăр-ха пирĕн пата Кушак тус çитнĕ. Нумай пулатчĕ ăна курманни. Ыйтса пĕлер, ăçта пулнă вăл?

Воспитатель кушак сăмахĕсене сассине улăштарса калать.

– Ăçта кайрăн, кушак тус?
– Кукамай патне.
– Мĕн тума кайрăн?
– Хăнана кайрăм.
– Кукаму мĕн çитерчĕ?
– Çуллă пăтă çитерчĕ.
– Мĕнле чашăкпа?
– Сăрлă чашăкпа.
– Мĕнле кашăкпа?
– Сăрлă кашăкпа.
– Мĕншĕн ман валли кӳмерĕн?
– Хама та сахал пулчĕ.
– Прис! Прис! Прис!

– Ачасем, эсир те Кушак туспа калаçса илсемĕр. Эпĕ кама чĕнĕп, вăл тухса кушака ыйту парĕ, юрать-и? Наташа, ыйтсам Кушак тус ăçта кайнине.

Воспитатель ачана пулăшса шăппăн ыйту сăмахĕсене каласа пырать, кушакшăн хăй хуравлать.

– Петя, эсĕ вăл мĕн тума кайнине ыйтсам.

Диалога çапла майпа вĕçне çити янратаççĕ. Хыççăн рольсене улăштараççĕ. Лайăххрах ас туса юлакан ача кушака алла илет те ун ячĕнчен калаçса хуравласа пырать, воспитатель вара ыйтусем парать.

В о с п и т а т е л ь. Маттур, ачасем! (*Йăпатмалли сăвва тепĕр хут пĕчченех вулать.*) Эпир ачасемпе пур пĕрле çук çурмалла пайлама хăнăхнă. Эсĕ вара, Кушак тус, мĕн пĕччененех хăналанатăн? Ачасем хăвалар пуль, Кушак туса.

А ч а с е м (*воспитательпе пĕрле*). Прис! Прис! Прис!

Кушак тус воспитателе хăлхаран темскер «пăшăлтатать».

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, Кушак тус урăх апла хăтланмăп тет. Хăвалар мар пуль ăна. Пĕрле туслă выляр-ха. Эпир кушакпа шăшилле выляма юратапăр.

А ч а с е м. Эсĕ пирĕнпе выльăн-и?

К у ш а к. Хаваспах вылятăп.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем – эсир пурте шăшисем. Эпир Кольăпа – кушаксем. (*Арçын ачана кушак маски тăхăнма пулăшать, хăй Кушак туса алла илет.*) Ачасем, эсир уçăлса çӳретĕр, эпир çывăратпăр. Эпир вăранатпăр та: «Мяу», – тесе кăшкăратпăр. Эсир вара тӳрех пирĕнтен тарса пукансем çине кайса ларатăр – вĕсем сирĕн йăвасем. Унта сире кушаксем тытаймĕç.

Вăййа кушаксен рольне улăштарса 2-3 хут выляççĕ.

– Маттур, шăшисем! Кушакĕсем те маттур пулчĕç. Халĕ пукансем çине ларăпăр. Йăпатмалли сăвва аса илĕпĕр. Кам каласа парасшăн?

Воспитатель 3-4 ачаран ыйтать.

– Ачасем, Кушак туса эсир каласа пани килĕшрĕ курăнать. Пăхăр-ха вăл мĕнлерех мăрлатса ларать!

**Мăр-мăрăлкка шур кушак**

Мăр-мăрăлкка шур кушак,  
Тяпписенче çăм пушмак.  
Мăр-мăрăлкка мăрлатать,  
Хăй хуçине юратать.  
(*Е. Рдюкова.*)

Кушак тус воспитателе каллех хăлхаран темскер «пăшăлтатать».

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, Кушак тус хуçи патне васкамалла тет. Эпĕ ăна ăсатса ярам-ха.

Кушак тус ачасемпе сывпуллашать. Воспитатель теттене илсе тухать.

– Ачасем, пирĕн пуканесен сăрлă чашăкпа сăрлă кашăк пур-и? Хамăр пуканесене çуллă пăтă пĕçерсе çитерер мар-и?

Воспитатель ачасемпе теттесен кĕтесне выляма васкаççĕ.

## Теми: «Кашкăрпа качака»
## Вырăс халăх юмахĕпе паллаштарни

***Ĕç тĕллевĕ:*** ачасене юмахпа паллаштарасси, ăна туйăмлă йышăнма, ăнланма пулăшасси, сасăпа выляма вĕрентесси.

***Кирлĕ материал***: тетте качака, тетте кашкăр (е качакапа кашкăр маскисем), юмах содержанине сăнлакан иллюстрацисем, ширма, хутран касса кăларнă качака путеккисен силуэчĕсем (ушкăнри ача чухлĕ).

### Ĕ ç  й ĕ р к и

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эпĕ сире паян «Кашкăрпа çичĕ качака путекĕ» ятлă юмах каласа парăп. Тимлĕ итлĕр.

**Кашкăрпа çичĕ качака путекĕ**

(*Вырăс халăх юмахĕ*)

Пĕр ватă качака пурăннă. Унăн çичĕ путек пулнă. Вăл вĕсене пит юратнă. Çапла пĕрре вăл вăрмана кайма пуçтарăннă.

– Ачасем, эпĕ халь вăрмана каятăп. Никама та алăк ан уçăр. Астăвăр, кашкăртан сыхланăр. Вăл чее: час-часах сассине улăштарса калаçать. Кашкăра эсир ун хулăн сассинчен тата хура урисенчен палласа илме пултаратăр, – тет амăшĕ. Ачисем ăна хирĕç:

– Аннеçĕм, пĕр шикленмесĕр вăрмана кайма пултаратăн. Эпир кашкăра кĕртместпĕр, – теççĕ.

Амăшĕ вăрмана тухса каять. Çавăн хыççăн нумаях та вăхăт иртмест, такам алăка пырса шаккать.

– Уçăр, ачамсем, аннӳ таврăнчĕ, – тет сасă.

– Уçмастпăр! Эсĕ пирĕн анне мар. Санăн сассу хулăн, – теççĕ качака путеккисем. – Пирĕн анне çинçе сасăллă. Эсĕ кашкăр! – теççĕ.

Вара кашкăр пĕр лавккаçă патне каять. Пĕр катăк шур тăм илет те ăна çисе ярать. Ак вăл каллех çаврăнса килет, алăка тепĕр хут шаккать.

– Уçăр, ачамсем, уçăр, аннĕр таврăнчĕ, – тет. Хăй хура урисене чӳрече çине хунă пулнă. Путексем çакна кураççĕ те:

– Уçмастпăр! Пирĕн аннен урисем хура мар. Эсĕ кашкăр, – теççĕ ăна.

Кашкăр çăкăр пĕçерекен патне чупать.

– Эпĕ урана такăнса амантрăм. Ура çине чуста сĕр-ха, – тет вăл.

Урине чустапа сĕрсен, арманçă патне чупать:

– Урасем çине çăнăх сап-ха, – тесе йăлăнать хайхискер.

«Кама та пулсан улталасшăн ĕнтĕ ку кашкăр»,– тесе шухăшлать арман хуçи. Малтан вăл кашкăр ыйтнине тăвасшăн пулман.

– Каланине ту, атту хăвна çисе яратăп, – хистет кашкăр.

Арманçă хăраса ӳкет те кашкăр урисене çăнăх сапать.

Çилленсе çитнĕ кашкăр путексен çурчĕ патне виççĕмĕш хут пырать те алăка шаккать.

– Уçăр, ачамсем, уçăр. Аннĕр вăрмантан таврăнчĕ, – тет кашкăр.

– Малтан урусене кăтарт-ха, тен, эсĕ пирĕн анне мар, – теççĕ путексем. Вара кашкăр урисене чӳречерен кăтартать. Путексем, ун шурă урисене курсан, алăка уçаççĕ. Кам сиксе кĕчĕ тейĕр? Кашкăр! Путексем хăраса ӳкеççĕ те тарса пытанма хăтланаççĕ. Пĕри – сĕтел айне, тепри – вырăн çине, виççĕмĕшĕ – кăмакана, тăваттăмĕшĕ – тĕпеле,

пиллĕкмĕшĕ – шкапа, улттăмĕшĕ – кăмака айне, çиччĕмĕшĕ стена çинчи сехет ещĕкне кĕрсе ларать. Анчах кашкăр вĕсене шыраса тупать, пĕрин хыççăн тепĕрне чăмламасăрах çăта-çăта ярать. Сехет ещĕкне кĕрсе ларнă чи пĕчĕкçĕ путеке çеç тупаймасть. Кашкăр пахчана тухать те йывăç айĕнче ӳсекен ешĕл курăк çине выртса çывăрать.

Пăртак тăрсан, ватă качака вăрмантан таврăнать. Мĕн курать-ха вăл! Алăкĕ – яри уçă! Сĕтел-пуканĕсене пĕтĕмпе тӳнтерсе пĕтернĕ, утиялсем, минтерсем урайĕнче сапаланса выртаççĕ... Амăшĕ хăйĕн путекĕсене шырать, анчах ниçта та тупаймасть. Путекĕсене вăл пурне те ятран чĕнет, хирĕç никам та чĕнмест. Каярахпа тин вăл пĕр çинçе сасса илтет:

– Анне, эпĕ сехет ещĕкĕнче! – тет сасă.

Амăшĕ сехет ещĕкне уçать те, унтан пĕчĕкçĕ путек сиксе тухать. Вăл пӳрте кашкăр килсе кĕрсе ыттисене пурне те çисе яни çинчен амăшне каласа парать. Иккĕшĕ хуйхăпа епле вĕри куççуль юхтарнине хăвăрах пĕлетĕр ĕнтĕ.

Йĕрсен-йĕрсен, вĕсем иккĕш те пахчана тухаççĕ. Кашкăр унта пĕр йывăç айĕнче çывăрса выртнине курах каяççĕ. Вăл харлаттарса çывăрнипе йывăç çулçисем силленеççĕ. Ватă качака кашкăр хырăмĕ çине пăхать те ун ăшĕнче темскер йăшăлтатнине курать. «Ман ачасем вилмен пуль-ха», – тесе шухăшлать. Пĕчĕкçĕ путекки хыпаланса килне чупать те хачăпа йĕп тата çип илсе килет. Качака кашкăр хырăмне çурать пăрахать, ултă путекки те пĕрин хыççăн тепри сике-сике тухаççĕ. Вĕсем пурте чиперех пулнă, кашкăр вĕсене чăмламасăрах çăтсаякă-çке-ха. Эх, мĕн тери савăнăç пулнă вара!

Путексем васкаса чул катăкĕсем йăтса килеççĕ те кашкăр хырăмне тултараççĕ. Амăшĕ вара кашкăр хырăмне хăвăрт кăна çĕлесе хурать.

Кашкăр çывăрса тăрать. Унăн пырĕ типсе кайнипе ĕçесси килет. Вăл пусă патне пырса шыв ĕçме пĕшкĕнет, анчах хырăмĕнчи чулсем ăна пусса туртса антараççĕ. Вăл шыва путать ларать.

Çакна курсан, путексем савăнса каяççĕ:

– Кашкăр вилчĕ! Кашкăр шыва путрĕ! – тесе амăшĕпе пĕрле пусă йĕри-тавра ташлаççĕ.

– Ачасем, сире юмах килĕшрĕ-и?

– Юмахри чĕр чунсенчен хăшĕ ытларах килĕшрĕ?

– Мана та качака путеккисем килĕшрĕç. Качака путеккисем мĕнле?

– Пĕчĕк. Вĕсем мĕнле пĕчĕккине кăтартăр-ха.

– Качака путеккисен пĕчĕк мăйракисем пур. Кăтартăр-ха.

– Вĕсем выляма юратаççĕ. Пĕчĕк мăйракисемпе сĕкĕшсе илеççĕ. Вĕсем мĕнле вылянине кăтартăр-ха.

– Качака путеккисем урисенчи чĕрнисемпе тăпăрт-тăпăрт тăваççĕ. Путексем мĕнле сикнине кăтартăр-ха.

Воспитатель ачасене вырнаçса ларма ыйтать. Ӳкерчĕк çине пăхма калать. Ачасем ӳкерчĕк юмахăн хăш самантне сăнланине тавçăрма тăрăшаççĕ. Качака вăрмана тухса каяс вăхăт пулнине калаççĕ.

– Качака тухса каяс умĕн хăйĕн путеккисене мĕн çинчен асăрхаттарать?

– Тĕрĕс, кашкăртан сыхланма ыйтать. Кашкăр чее пирки калать вăл: «...*час-часах сассине улăштарса калаçать. Кашкăра эсир ун хулăн сассинчен тата хура урисенчен палласа илме пултаратăр»*, – тет.

– Качака хӑйне кӗртме ыйтса путеккисене мӗнле сӑмахсем калать? Кам ас туса юлчӗ?

– Тӗрӗс. «*Уҫӑр, ачамсем, аннӳ таврӑнчӗ»,* – тет.

– Ҫак сӑмахсене амӑшӗ мӗнле калать? (*Калаттарать.*)

– Кашкӑр вара мӗнле калать? (*Калаттартать*).

Воспитатель ачасене выляса илме сӗнет.

– Эсир халь качака путеккисем. Хӑвӑр пата кам шакканине пӗлӗр-и?

Воспитатель палӑртнӑ сӑмахсене ҫинҫе саспа калать. «*Алӑка уҫатӑр-и ӗнтӗ*?» – тесе ыйтать. (Ачасене хӑйсен аллисене ик еннеле сарса кӑтарма сӗнме пулать.) Кайран хулӑн саспа калать. Каллех ачасем мӗн тунипе интересленет. (Ачасем «алӑксене хупаҫҫӗ» – алӑсемпе хӑйсене ыталаса илеҫҫӗ.)

В о с п и т а т е л ь. Халӗ эсир хӑвӑр качакапа кашкӑр пулӑр.

Воспитатель пӗр ачана хӑй патне чӗнсе илет. Ширма хыҫӗнче вӑл е ку маска тӑхӑнтарать (тетте парать). Ача йышӑннӑ сӑнар чӗлхипе калаҫать.

М а с к ӑ л л ӑ  а ч а. Уҫӑр, ачамсем, аннӳ таврӑнчӗ.

Ларакан ачасем ширма хыҫӗнче кам тӑнине чухласа илсе ӑна пӳрте кӗртессипе кӗртмессине калаҫҫӗ.
Воспитатель тепӗр ачана ширма хыҫне тӑма ыйтать. Малалла выляҫҫӗ.
Воспитатель ачасене хавхалантрать. Тӗрӗс интонаци тупнӑшӑн мухтать.

В о с п и т а т е л ь. Выляма юратакан хаваслӑ качака путеккисем амӑшӗпе пытанмалла выляма шутларӗҫ. Вӗсем пӗтӗм пӳлӗм тӑрӑх саланчӗҫ, хӑтлӑ вырӑн тупса пытанчӗҫ. Качака вӗсене тупса та пӗтерейменӗп тесе кулянать. (*Ачасене тетте качака кӑтартать, ун сассипе калаҫать.*).

К а ч а к а. Ачасем, эсир вӗсене тупаятӑр-ши?

В о с п и т а т е л ь. Качакана кашниех пӗрер путек тупса парсамӑр.

Ачасенчен пӗри икӗ-виҫӗ путек, тепри вара – пӗрре те тупма пултараймӗ.
Ҫавӑнпа та воспитатель питӗ тимлӗ сӑнать, лару-тӑрӑва майлаштарса пырать: «Коля тупрӗ те пӗр путекне. Коля Качака патне васка ӗнтӗ, савӑнтар ӑна».

Ача малалла та шырас кӑмӑллӑ пулсан: «Коля, эсӗ Ленӑна пулӑшасшӑн курӑнать. Питӗ аван, пӗрле хӑвӑртрах тупӑр. Лена куншӑн питӗ савӑнӗ паллах».

Качака ачасем пырса паракн путексене курсан «питӗ савӑнать».

К а ч а к а. Тавах, сире, ачасем!

Воспитатель ачасен кӑмӑлӗсем пулсан теттесене парать. Юмаха выляса кӑтартма пулӑшать.

Илемлӗ хайлавсемпе ачасем темиҫе хутчен тӗл пулни паллӑ ӗнтӗ. Ку юмаха та воспитатель пӗрре ҫеҫ вуланипе ҫырлахмасть. Юмаха моделлеме пулать, ӑна выляттарма юрать. Юмаха сӑнлакан ӳкерчӗксенчен йӗркеленӗ пазлсем

пуçтарсан аван. Анчах та ачасем юмах содержанине лайăх пĕлсе, ас туса тăрсан кăна çак ĕçсене пурнăçлама май пур.

Ачасем юмах содержанине мĕнле ăнланнине, аса хывнине çак ыйтусем тăрăх ĕçлесе пĕлме пулать.

– Качака тухса каяс умĕн хăйĕн путеккисене мĕн çинчен асăрхаттарать?

– Кашкăр килсен путексем ăна мĕнле палласа илчĕç?

– Тĕрĕс, сасси кашкăрăн хулăн. Кашкăр сассине мĕнле çинçетрĕ?

– Çапла, шур тăм илсе çирĕ.

– Анчах та путексем ăна çавах палласа илчĕç. Мĕнле?

– Тимлĕ путексем кашкăра хура урисенчен палларĕç. Вара кашкăр мĕн турĕ-ха?

Воспитатель çăкăр пĕçерекенпе арманçă çинчен аса илтерет.

– Кашкăр урисене чуста сĕртерчĕ, çиелтен çăнăх саптарчĕ.

– Путексем вара кашкăра паллаймарĕç, алăка....(*ачасене калама хистет*) уçрĕç.

– Путексем хăшĕ ăçта пытанчĕç?

– Путексенчен хăшĕ çăлăнса юлчĕ?

– Качака путеккисем мĕнле çăлăнчĕç?

– Юмах мĕнпе вĕçленчĕ?

Воспитатель ачасене юмах вĕçне аса илме пулăшать.

## Теми: «Юр пĕрчи»
## М. Мерченĕн «Юр пĕрчи», сăввине аса хывни

***Ĕç тĕллевĕ***: ачасене çĕнĕ сăвăпа паллаштарасси, аса хывма пулăшасси, вĕсен поэзи туйăмне аталантарасси, калаçăва хутшăнас пултарулăхне аталантарасси.

***Кирлĕ материал***: хутран е салфеткăран касса кăларнă юр пĕрчисем, юр пĕрчисене ташлама юрăхлă кĕвĕ (тĕслĕхрен, П. Чайковский кĕвĕленĕ «Щелкунчик» балетри вальс.)

### Ĕ ç й ĕ р к и

В о с п и т а т е л ь. Тĕлĕнмеле шурă кавир урамра. Вăл çуртсене, йывăçсене, пĕтĕм çĕре витнĕ. Утнăçем кăчăрт-кăчăрт тăвать. Ачасем, эпĕ мĕнле кавир пирки каланине чухларăр-и?

– Çапла, çак кавир вăл – юр, çĕр питне витнĕ «кĕмĕл пурçăн».

*Шурă юрĕ çурĕ, çурĕ,*
*Таврана шап-шурă турĕ.*

– Тавралăх тĕлĕнмелле илемлĕ шап-шурă тĕнче пулса тăчĕ. Ачасем, эпир уçăлса çӳренĕ чух хăвăр юр çунине сăнанине ас тăватăр-и?

Воспитатель ачасене мĕн сăнанине аса илме, каласа пама хавхалантарать: юр пĕрчисене тытма хăтланни, вĕсен тĕрлĕ-тĕрлĕ капашĕпе киленни...

– Пĕчĕк юр пĕрчисем çав тери илемлĕ, черчен. Вĕсем пĕчĕк çăлтăрсем пек, хаклă ахах чулсем пек йăлтăртатаççĕ. Юмахри пек.

**Хĕл юмахĕ**

Йăлкăшса вĕлтĕртетсе
«Çăлтăрсем» ӳкеççĕ,
Кĕмĕл пурçăн тĕрлесе
Çĕр питне витеççĕ.
Шап-шурах урам, пахча,
Уй юрпа хупланнă.
Сăрт-тăва ача-пăча
Ярăнса якатнă.
Йывăç тумĕ – чăн ахах,
Тĕкĕнсен ванас пек.
Сивĕ хĕл пуçлать юмах –
Пур тавра тăнласшăн.
(*А. Пăртта.*)

В о с п и т а т е л ь (*çип çине тыттарнă хутран касса кăларнă юр пĕрчине кăтартса*). Акă мĕнле юр пĕрчи вĕçсе килчĕ пирĕн пата, пăхсамăр! Ачасем, ан хăрăр, ку юр пĕрчи ирĕлсе шыв пулмĕ.

*Питĕ пĕчĕк юр пĕрчи*
*Вĕçрĕ-вĕçрĕ-вĕçрĕ те* – пирĕн ушкăна вĕçсе çитрĕ. (*Юр пĕрчипе ачасем патне çывхарать.*)
*Питĕ пĕчĕк юр пĕрчи*
*Вĕçрĕ-вĕçрĕ-вĕçрĕ те* – Коля патне çывхарчĕ.

Воспиатель юр пĕрчине Кольăна парать – малалла вĕçтерме ыйтать, кирлĕ сăмахсене калама пулăшать.
Ачасем сăвă йĕркисене епле ас туса юлнине кура 2-3 ачана çапла выляттарса илет.

– Ачасем, сире пирĕн хăна килĕшет-и? Вăл еплерех хитре, çапла-и? Эпĕ сире пĕчĕк юр пĕрчи çинчен сăвă вуласа парăп. Ăна Михаил Мерчен çырнă, ячĕ – «Юр пĕрчи».

Воспитатель сăвва выляса-каласа парать.

**Юр пĕрчи**

Питĕ пĕчĕк юр пĕрчи
Вĕçрĕ-вĕçрĕ-вĕçрĕ те –
Çухалса вăл кайнă-ши? –
Пырса перĕнчĕ пите
– Каласамччĕ, юр пĕрчи,
Мĕншĕн эсĕ пит хитре?
– Эпĕ вĕт илем ачи!
Çавăнпа пуль пит хитре.
(*М. Мерчен.*)

– Халĕ эсир пĕлтĕр-и, юр пĕрчи ман пата мĕнле çитнине:

*Çухалса вăл кайнă-ши? –*

*Пырса перĕнчĕ пите.*

– Ку юр пĕрчи пĕччен мар – унăн тантăшĕсем те кунтах – курăр-ха.

Воспитатель кашни ача валли хатĕрленĕ юр пĕрчисене кăтартать.

– Вĕсем пурте черчен, кашни хăйне евĕрлĕ хитре. Юр пĕрчисенчен вĕсем мĕншĕн пит хитре пулнине ыйтар-ха.

Воспитатель кашни ачана сăввăн тивĕçлĕ йĕркине янратма пулăшать.

*– Каласамччĕ юр пĕрчи,*

*Мĕншĕн эсĕ пит хитре?*

Ача панă ыйтăва хуравласа воспитатель ăна юр пĕрчине тыттарса çапла сăвăлать.

*– Эпĕ вĕт илем ачи!*

*Çавăнпа пуль пит хитре.*

Кĕçех ачасем пурте юр пĕрчиллĕ пулаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Мĕн чухлĕ юр пĕрчи. Епле хитре ушкăнра эпĕ! (*Пĕрин тата теприн патне пырса ыйтать.*)

*– Каласамччĕ юр пĕрчи,*

*Мĕншĕн эсĕ пит хитре?(Ачана хуравлама пулăшать.)*

*– Эпĕ вĕт илем ачи!*

*Çавăнпа пуль пит хитре.*

– Ачасем, ку юр пĕрчисен пурин те çав тери вĕçесси килет пулĕ, пулăшсамăр.

– Юр пĕрчи çав тери çăмăл, кăшт çил вĕрнипех вăл «ташлама» пуçлать: вĕлтĕртетет, çаврăнать, вĕçет.

Воспитатель юр пĕрчисене пӳлĕмре «вĕçсе илме» хавхалантарать, çепĕç кĕвĕ ярса парать.

– Маттур, ачасем – хитре юр пĕрчисем. Юр пĕрчисене пĕр çĕре пуçтарăпăр, вĕсемпе пӳлĕмри чӳречесене илемлетĕпĕр, юрать-и?

Воспитатель юр пĕрчисене пуçтарать те ачасене ларма ыйтать, сăвва тепре вуласа парать. 2-3 ачаран мĕн ас туса юлнине каласа пама ыйтать, пулăшса пырать.

– Ачасем, сирĕн çакăн пек хитре юр пĕрчисене ӳкерме вĕренес килмест-и?

Воспитатель хавхалантарнипе пурте ӳкерме пуçлаççĕ.

### Теми: «Чакак»
### И.Я. Яковлевăн «Чакак» калавĕпе, «Чак-чак-чакакак!» сăвăпа паллаштарни

***Ĕç тĕллевĕ:*** ачасене чакака сăнлакан хайлавсемпе паллаштарасси; вĕсене ăнланма, содержанийĕ тăрăх калаçма, харкам хăй кăмăлне палăртма пулăшасси.

***Кирлĕ материал:*** чакак ӳкерчĕкĕ.

### Ĕ ç  й ĕ р к и

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, паян сире пĕр питĕ илемлĕ кайăкпа паллашатарас тетĕп. Кам та пулин пĕлет-ши ăна? (*Чакак ӳкерчĕкне кăтартать.*)

– Çапла, ку – чакак. Сăнăр-ха ăна. Мĕнлескер вăл?

– Тĕрĕс, хăй хуп-хура. Хырăмĕ вара шап-шурă. Чакак ула тĕслĕ. Асăрхăр-ха, хӳри мĕнлерех унăн?

– Çапла, унăн хӳри вăрăм. Епле хитре кайăк чакак!

– Чакак ăçта пурăнать, мĕнпе тăранать?

– Итлĕр, ун çинчен калав вуласа парам. Ку калава Иван Яковлевич Яковлев çырнă. Калав ячĕ – «Чакак».

**Чакак**

Чакак çулла вăрманта пурăнать, юр çусан яла пырать. Çулла вăрманта вăл чĕпĕ кăларать; ялтан çăмарта вăрласа кайса чĕпписене тăрантарать. Хĕлле, сивĕ пулсан, йывăç çине ларать те: «Чак-чакак, чак-чакак», – тесе чакаклатать.

(*И. Я. Яковлев.*)

– Чакак ăçта пурăнать тенĕ?

– Çапла, вăл вăрманта та, ялта та пурăнать.

– Чакак çинчен тата мĕн пĕлтĕр? (*Хуравлама пултаракан ачаран ыйтать.*)

– Çапла, *çулла вăрманта вăл чĕпĕ кăларать; ялтан çăмарта вăрласа кайса, чĕпписене тăрантарать.*

– Чакак мĕнле сас парать?

– Янравлă саспа калаçать чакак. Халăхра ун пирки: «Чакакăн чĕлхи хӳринчен те вăрăм», – теççĕ. «Чакак çăварĕнче чарак çук» каларăш та пур. Хытă янранăран каланă пуль çавăн пек.

*Чак-чак-чакакак!*

*Чак-чак-чакакак!*

Чакак çинчен сăвă та çакăн пек йĕркесенчен пуçланать. Çак сăвва итлесемĕр.

**Чак-чак-чакакак!**

Чак-чак-чакакак!
Чак-чак-чакакак!
Чакак пăтă пĕçерет,

Хăнисене йыхăрать,
Алăк тăррине лартать,
Сăмсипеле тăвар ярать,
Хӳрипеле пăтратать.

– Мĕнле йăрă та маттур кайăк – чакак.
– Чакак мĕн тăвать тенĕ? (*Пăтă пĕçерет.*)
– Чакак пăтта хăй валли пĕçерет-и?
– Чакак мĕнле вăр-вар пулнине каласамăр.
*(Сăмсипеле тăвар ярать,*
*Хӳрипеле пăтратать.)*
– Ачасем, мĕнле шутлатăр – чакакăн хăнисем мĕнлерех-ши?

Воспитатель ачасене кайăксене сăнлакан ӳкерчĕксемлĕ кĕнеке курма вулав кĕтесне чĕнет.

## Теми: «Кам ăçта пурăнать?» П. Эйзинăн «Пӳрт умĕнче йăмра пур» сăввипе паллаштарни

***Ĕç тĕллевĕ****:* ачасене чĕр чунсем, вĕсен килĕ çинчен калаçăва явăçтарасси, сăвăпа паллаштарасси; ăна йышăнма, ăнланма пулăшасси.

***Кирлĕ материал***: «Кам ăçта пурăнать» дидактика вăйăйи. Уйрăм ӳкерчĕксем пулсан та аван: мулкач, пакша, тилĕ, упа, кашкăр; вĕсен çурисен теттисем; çак чĕр чунсем пурăнакан вырăн – килĕ. Йăмра çинчи кайăк йăви – ӳкерчĕк.

### Ĕ ç й ĕ р к и

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эпĕ сире ӳкерчĕксем кăтартас тетĕп. Ку мĕн? (*Мулкач, пакша, тилĕ, упа, кашкăр*). Çак чĕр чунсенчен кашнийĕ ăçта пурăнать?

Воспитатель ачасене «Кам ăçта пурăнать» вăйăйа выляттарать.
Ачасем кашни чĕр чун валли кирлĕ вырăн тупса палăртаççĕ. (Мулкач валли – тĕмĕ айĕ, пакша валли – йывăçри хăвăл; тилĕ, упа, кашкăр валли – шăтăк, йăва, йĕнĕ).

– Ачасем, тем, макăрнă сасă илтĕнет пек туйăнать. Мĕн пулнă-ши?
– А-ай, пăхăр мĕнле чĕр чун макăрать унта!

Ачасем воспитатель кăтартакан чĕр чуна курса хуравлаççĕ.

– Çапла, мулкач çури иккен. Çухалса кайнă, мĕскĕн, килĕ тĕлне пĕлмест. Ку тата мĕнсем?

Воспитатель сĕтел çине ытти чĕр чунсен çурисене те кăларса хурать. Вĕсен ячĕсене ачасене калаттарать: упа çури, пакша çури, кашкăр çури.

– Ку тата мĕн? (*Кайăк чĕппине кăтарать.*) Ачасем, пĕчĕкскерсене пулăшасах пулать. Килĕсене çитермелле.

Ачасем чĕр чунсен çурисене амăшĕсем патне куçараççĕ. Воспитатель кашнинех калаçтарать.
*Санра мĕнле чĕр чун çури? Ăна хăш чĕр чун патне патне, ăçта илсе каятăн?*

Юлашкинчен сĕтел çинче кайăк чĕппи çеç юлать.

– Кунпа халь мĕн тумалла? Кайăк чĕппи ăçта пурăннине кам пĕлет?

– Маттур, ачасем. Апла пирĕн йăва тупас пулать иккен. Эпĕ ку чĕпĕ мĕнле йăваран пулнине пĕлетĕп те пулас.

Воспитатель ачасене ўкерчĕк кăтартать, хăй П. Эйзинăн «Пўрт умĕнче йăмра пур» сăвă пуçламăшне калать.

– Акă пирĕн чĕп те хăйĕн килне тупрĕ. Пирĕн ĕнтĕ савăнма та сăлтав пур.

Воспитатель ачасемпе карталанса унччен вĕреннĕ юрă-ташша аса илет. (*Тух-ха, Ванюк пирĕн умма / Эсĕ ташша пит ăста*...)

Кун хыççăн вăл ачасене ларма сĕнет.

– Питĕ килĕшрĕ мана эсир чĕр чунсен çурисене кашнине хăйĕн килне илсе çитерни. Тăван килтен пахи мĕн пултăр? Кашниех хăйĕн килне юрататъ, кашни хăйĕн килне васкать. Эпĕ сире Петр Эйзин çырнă «Пўрт умĕнче йăмра пур» сăввине вуласа парам-ха. Тимлĕ итлĕр.

**Пўрт умĕнче йăмра пур**

Пўрт умĕнче йăмра пур,
Йăмра çинче йăва пур,
Çав йăвара кайăк пур,
Çав кайăкăн чĕппи пур
Чĕппин сарă сăмси пур.

Сĕм вăрманта çырма пур,
Çав çырмара шăтăк пур,
Çав шăтăкра упа пур,
Çавă упан çури пур,
Çурин пĕчĕк тяппи пур.

Ял варринче пĕр пўрт пур,
Çавă пўртре амăш пур,
Амăш пур та, ашшĕ пур,
Вĕсен пĕчĕк ачи пур,
Ачин хитре тетти пур.

(*П. Эйзин.*)

– Ачасем, килĕшрĕ-и сире ку сăвă?

– Мĕн ытларах килĕшрĕ?

– Кайăк чĕппи ăçтине аса илĕр.

– Çапла, пўрт умĕнче, йăмра çинче, йăвара. Маттур!

– Упа çури вара ăçта?

– Тĕрĕс, сĕм вăрманта, çырмара, шăтăкра. Пĕчĕк ачи ăçтине кам ас туса юлчĕ?

– Маттурсем – ял варринчи пўртре, ашшĕпе амăшĕ патĕнче.

– Сăввăн пуçламăшне тепре аса илер-и?

Воспитатель сăвва пуçлать те ачасене малалла калама хистет.

*Пӳрт умĕнче ...*
*Йăмра ...*
*Çав йăвара ...*
*Çав кайăкăн ...*
*Чĕппин сарă ...*

Ачасен çемье сăн ӳкерчĕкĕсем пулсан аван. Çапла майпа вĕсене ашшĕ-амăшĕ çинчен калаçтарма май пур.

В о с п и т а т е л ь. Халĕ сăвă вĕçне аса илер-ха.
*Ял варринче пĕр пӳрт пур,*
*Çавă пӳртре амăш пур,*
*Амăш пур та, ашшĕ пур,*
*Вĕсен пĕчĕк ачи пур.*
Ачин ячĕ – Николай.
Коля, пире хăвăн çемье çинчен каласа парсам.

Ачан кĕске калавĕ çакăн пек пулма пултарать: «Ку ман анне. Вăл Зоя ятлă. Ку ман атте. Вăл Сергей ятлă. Ман анне фермăра ĕçлет, атте – шкулта. Ман аппа – Катя. Эпир пĕрле вылятпăр».

## Теми: «Тупмалли юмахсем»
## Н. Карайăн «Кам вăл?» сăввипе паллаштарни

***Ĕç тĕллевĕ:*** ачасен пуплевне аталантарасси, çĕнĕ сăвăпа паллаштарасси, ăна ăнланма пулăшасси.

***Кирлĕ материал***: «асамлă» хутаç, теттесем: кушак, автан, чăх, кăвакал

### Ĕ ç й ĕ р к и

В о с п и т а т е л ь ачасен умне тулли тултарнă хитре пĕчĕк хутаçпа тухать.

В о с п и т а т е л ь. Эпĕ сире валли теттесем илсе килтĕм. Вĕсем çак «асамлă» хутаçра. (*Кăтартать.*) Вĕсене хаваспах сире выляма парăп. Анчах малтан сирĕн унта мĕнле теттесем пулнине пĕлмелле. Унсăрăн вĕсем «хутаçран тухасшăн» мар.

Пĕрремĕш тупмалли юмаха итлĕр:
*Шывра ишме юратать*
*Нарт, – тесе вăл сас парать*
– Тĕрĕс, ку – кăвакал. Мĕнле пĕлтĕр? (*Ачасене тупсăмне мĕнле тавçăрнине калаттарать*).
– Акă кăвакал хутаçран тухать. Ачасем, унпа выляма кăштах тăхтăр-ха.

Ытти теттисене те хутаçран кăларар. Кăвакал сире ак кунта кĕтсе ларĕ. (*Сĕтел çине лартать*).

– Иккĕмĕш тупмалли юмаха итлĕр.

*Пĕчĕкскер, çăмламас*:

*– Мяук, – тесе сĕт ыйтать.*

– Маттур, ачасем, тĕрĕс. Мĕнле пĕлтĕр? (*Тетте кушака хутаçран кăларать.*)

– Виççĕмĕш тупмалли юмаха итлĕр.

*Пуринчен малтан тăрать*

*Ыттисене вăратать.*

Ку мĕн пулать? (*Ачасем каланă хыççăн воспитатель хутаçран тетте автан кăларать.*)

– Тĕрĕс, мĕнле юрласа вăрататъ автан ыттисене?

– Çапла, ун сасси ян каять, пурне те вăрататъ.

– Тепĕр тупмалли юмах итлĕр.

*Кăт-кăтик, тет, васкаса,*

*Анать, çăмарта туса.*

– Ку вăл... тĕрĕс, чăх.

– Ну, пурне те кăлартăм курăнать. Халĕ теттесемпе выляр.

Воспитатель теттесене уçă вырăна лартса тухать. Ачасемпе хăш чĕр чунĕ патне пырать, çавна евĕрлесе тĕрлĕ хускану туса кăтартать.
Кăвакал патне çывхарнă чух енчен енне таянса утаççĕ, çак кайăк шывра мĕнле ишнине кăтартаççĕ (аллисемпе кăвакал урисемпе ишнĕ чух тăвакан хусканусене тăваççĕ).
Кушак патне пынă чух вăл мĕнле шăппăн утнине кăтартаççĕ.
Автан çунаттисемпе çапнă пек аллисене сулаççĕ, чăх ăман шыранă чух урисемпе çĕре сапаланă пек тăваççĕ тата ыт. те.
Воспитатель теттесенчен пăрăннă май вĕсене пуçтарса пырать, кайран асамлă хутаç выртакан сĕтел çине лартса тухать.

В о с п и т а т е л ь. Тем, таçта шиплетнĕ сасă илтĕнмест-и? (*Сĕтел çинче выртса юлнă «асамлă» хутаç патне ачасемпе пыраса.*) Ачасем, хутаç пушă мар! Акă курсамăр... (*Хутаçран чăх чĕппи туртса кăларать.*) Эх, пĕчĕкскер, епле асăрхаймарăм пулать сана? Тух ĕнтĕ, тух çутталла. Пĕччен юлнă вăл кунта. Чĕпĕ чĕр чунсенчен хăшин патне чупса пырать-ши? (Ачасем хуравлаççĕ.) Эпĕ те çапла шутлатăп, паллах амăшĕ патне. Хашĕ-ши ку чĕппĕн амăшĕ? (*Чĕппе чăх патне илсе пырса лартаççĕ.*) Акă пĕрле ĕнтĕ халь вĕсем. Питĕ лайăх. Итлĕр-ха, ачасем! Ку çемьен ашшĕ тата мĕнле чĕр чун-ши? Кунта пур-и вăл? Лена, чĕппĕн ашшĕне тупса килсе юнашар тăрат, тархасшăн.

Лена автана чĕпĕпе чăх патне илсе пырса лартать.

– Акă халĕ чăнах та питĕ лайăх. Амăшĕ те, ашшĕ те вырăнтах, ачи (чĕппи) те килтех. Пăхса савăнмалла çеç.

– Ачасем, эпĕ сире çак çемье çинчен сăвă вуласа паратăп. Ăна Николай Карай сăвăç çырнă. Сăвви «Кам вăл» ятлă.

**Кам вăл?**

Автан икĕ çунатне
Çат-çат-çат çапса юрлать.

Сар чăх сарă чĕппине
Тупмалли юмах калать:
«Кам вăл сар çăмха пекскер,
Пĕчĕкскер те чиперскер?»

Сарă чĕпĕ сиккелет:
«Анне,
Эп вăл,
Эпĕ», – тет.

(*Н. Карай.*)

– Ачасем, килĕшрĕ-и сире сăвă?

– Сăвă мĕнле кăмăл çуратрĕ?

– Чăнах та чуна савăнăç кӳрет ку сăвă. Манăн та ку сăвва итлесен хавас кăмăл çуралать. Çăмăл, хитре сăвă. Пĕчĕк чĕппĕн çемйинче тăнăçлăх. Чĕпĕ ашшĕ – автан – мĕн тăвать?

*Автан икĕ çунатне*

*Çат-çат-çат çапса юрлать.*

– Апла пулсан вăл савăнать пуль? Эпир те савăннă чухне юрлатпăр, çапла вĕт?

– Ачасем, кам ас туса юлчĕ – мĕнле тупмалли юмах пачĕ амăшĕ чĕппине?

*(Кам вăл сар çăмха пекскер,*

*Пĕчĕкскер те чиперскер?)*

– Сăвăра ăна çапла каланă:

*Сар чăх сарĕ чĕппине*

*Тупмалли юмах калать:*

*«Кам вăл сар çăмха пекскер,*

*Пĕчĕкскер те чиперскер?»*

– Чĕппи мĕнле?

– Тĕрĕс, *сар çăмха пекскер, пĕчĕкскер те чиперскер.*

– Чĕпĕ çине пăхсамăр. Çавăн пекех-и вăл?

– Ачасем юратса илĕр пĕчĕк чĕппе. Юратнă, ачашланă чух вăл мĕнлине калăр.

Воспитатель чĕппе алла илет. Ачашласа: «*Сар çăмха пекскер, пĕчĕкскер те чиперскер»,* – тет. Ачасене те çапла тума хистет.

– Чĕпĕ тупмалли юмаха тӳрех пĕлчĕ-и?

– Çапла, тӳрех тавçăрса илчĕ. Вăл çавăнтах:

*«Анне,*
*Эп вăл,*
*Эпĕ»,* – тесе чăтăмсăррăн сиккелеме тытăнчĕ.

– Ачасем, эпĕ сире сăвва тепре вуласа парам-ха. Тимлĕ итлĕр.

Воспитатель «Кам вăл?» сăвва вулать те теттесене ачасене парать. Вĕсемпе пĕрле вылять. Тин çеç итленĕ сăвва татах та янраттарма майлă самантсем йĕркелет.

### Теми: «Мĕн тума?»
### П. Эйзинăн «Мĕн тума» сăввипе паллаштарни

***Ĕç тĕллевĕ:*** ачасене харпăр хăй кĕлетки çинчен калаçăва явăçтарасси, çĕнĕ сăвăпа паллаштарасси, ăна ăнланма пулăшасси.

***Кирлĕ материал***: П. Эйзин сăввисен кĕнеки.

**Ĕ ç й ĕ р к и**

Воспитатель ачасемпе калаçу пуçарать.

– Ачасем, эсир хăвăрăн чи çывăх, пĕрремĕш пулăшакансене пĕлетĕр-и?

– Эпĕ мĕнле пулăшакансем çинчен каланине чухлаймарăр-и?

– Калам эппин – эпĕ куç, алă, ура, чĕлхе, хăлха çинчен калатăп. Айтăр, пĕрле шутласа пăхар – мĕншĕн эпĕ вĕсене пĕрремĕш пулăшакансем терĕм.

– Теттесемпе выляс терĕр – теттисем акă лараççĕ, анчах та выляма тытăнма пирĕн килĕшекен теттине суйламалла. Апла пулсан *куç* кирлĕ-и?

– Хăшĕнпе выляссине палăртрăмăр пулсан ăна пирĕн *алла* илмелле. Çапла вĕт? Вăл аяккарах пулсан – пирĕн урасем ĕçле пуçлаççĕ.

– Халĕ кашниех калăр – куç мĕн тума кирлĕ?

Воспитатель малалла çавăн пекех хăлха, алă, ура çинче чарăнса тăрать.
Пур ачине те калаçăва хутшăнтарма тăрăшать.

– Ачасем, эпĕ сире пĕр сăвă каласа парам-ха. Унта пирĕн пулăшакансем çинчен мĕн каланине тимлĕ итлĕр.

**Мĕн тума**

Алли кирлĕ
Мĕн тума?
– Тĕрĕ тĕрлеме.

Ури кирĕ
Мĕн тума?
– Ташă ташлама.

Сасси кирлĕ
Мĕн тума?
– Юрă юрлама.

Чĕлхи кирлĕ
Мĕн тума?
– Сăвă калама.

Хăлхи кирлĕ
Мĕн тума?
– Юмах итлеме.

Куçĕ кирлĕ
Мĕн тума?
– Çут тĕнче курма.
(*П. Эйзин.*)

– Сăвă килĕшрĕ-и?

– Сăвва ас туса юлтăр-и? Йĕркесене каласа пĕтерме пулăшсамăр тархасшăн:

– Тĕрĕ тĕрлеме....

– Тĕрĕс – алли кирлĕ.

– Ташă ташлама...(*ури кирлĕ*).

– Юрă юрлама... (*сасси кирлĕ*).

– Сăвă калама... (*чĕлхи кирлĕ*).

– Юмах итлеме... (*хăлхи кирлĕ*).

– Çут тĕнче курма... (*куçĕ кирлĕ*).

– Маттур, ачасем! Мĕнле пысăк пĕлтерĕшлĕ асăннă пулăшакансем пирĕншĕн. Ачасем, халĕ эпĕ сире пĕр юмах каласа паратăп, тимлĕ итлĕр.

**Асамлă чечек**
*(Юмах)*

Пурăннă пĕр хĕр ача – Катя. Пĕррехинче Катьăна амăшĕ лавккана пӳремеч илме янă. Катя мĕн кирлине туяннă та килне васканă. Çул çинче вăл пĕр карчăка курнă. Вăл ăна пӳремечпе хăналанă. Вата çын тав туса Катьăна асамлă чечек парнеленĕ. «Çак чечек пулăшнипе сан пĕр ĕмĕтӳ пурнăçланĕ», – тенĕ вăл.

Хĕр ача парнешĕн тав тунă та килелле чупнă. «Мĕн тăвам-ши ĕнтĕ», – шутланă Катя. Вăл теттесен магазинĕ патне çитнĕ. «Нумай-нумай тетте пултăрччĕ манăн», – тенĕ вăл. Çавăнтах: «Çук тетте кирлĕ мар – йытă çури лайăххах», – вĕлтлетнĕ унăн пуçĕнче шухăш. Кӳршĕсен йытти хаяррăн вĕрсе ярсанах вăл ку шухăша та пăрахăçланă.

Пылак пăр сутса тăракана курсан Катя савăнса кайнă. «Пĕлетĕп мана мĕн кирлине», – чутах кăшкăрса яман вăл.

Шăп çав вăхăтра Катя сак çинче ларакан арçын ачана асăрханă. Хĕр ача ун патне пырса пĕрле выляма сĕннĕ. «Эпĕ выляймастăп санпа, – тенĕ арçын ача, – эпĕ чупма мар, утма та пултараймастăп, – манăн ура итлемест».

«Эпĕ вара... Эпĕ... – савăнса кайнă Катя, – сана чĕртетĕп».

Вăл хăйне мĕн кирлине каланă та асамлă чечекĕпе сулнă. Сак çинче ларакан ача сывалнă. Вĕсем пĕрле тем тĕрлĕ чупмалла та, сикмелле те вылянă.

– Ачасем, пирĕн хамăрăн пулăшакансене сывă упрамалла. Алăсем таса сывă пулччăр тесен эпир мĕн тăватпăр?

– Çапла, çăватпăр, шăлатпăр, таса тытатпăр.

– Урасене мĕнле пăхатпăр?

Малалла воспитатель ачасене гигиена правилисем çинчен калаçтарать.

## Теми: «Пулмасла халапсем»
## Н. Ваçанккан «Ав, кăмака умĕнче», Н. Карайăн «Шапа» сăввисемпе паллаштарни

***Ĕç тĕллевĕ:*** ачасене сăвăсемпе паллаштарасси, вĕсене ăнланма, ас туса юлма пулăшасси.

***Кирлĕ материал***: сăвă содержанине сăнлакан ÿкерчĕксем.

### Ĕ ç й ĕ р к и

Воспитатель ачасене ÿкерчĕке сăнама ыйтать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пăхăр-ха: епле илемлĕ ÿкерчĕк. Мĕн ÿкернине тимлĕ сăнасамăр.

– Мĕншĕн ку ÿкерчĕк çине пăхсан ăшă кулă çуралать?

– Айтăр, ÿкерчĕке пĕрле сăнар – кăмакара вут çунать. Кăмака умĕнче вара – ... . Мĕн куратăр? Кăмака умĕнче йытă ĕçлет. Кушакĕ тата мĕн тăвать? Кушак çури тата? Ташша яман-и вăл?

– Тем, вĕсем хăна кĕтеççĕ-ши?

– Халĕ çак ÿкерчĕк çинчен сăвă итлĕр.

**Ав, камака умĕнче...**

Ав, кăмака умĕнче
Анчăк йăва пĕçерет.
Кăски урай варринче
Сухарисем вĕтетет.
Кушак çури пит çăвать,
Мяуклатса çаврăнать.
(*Н. Ваçанкка.*)

– Анчăк мĕн тăвать?

– Кăски, кушак, мĕн тăвать? Çапла, сухари вĕтетет. Кушак çури – ...? (*Пит çăвать, мяуклатать, çаврăнать.*)

– Çакăн пекех кулăшла тепĕр сăвă та вуласа парас килет сире. Вăл «Шапа» ятлă.

**Шапа**

Мана хирĕç
Сукмакпа

Юрласа килет
Шапа.

Сăран атă
Уринче,
Сĕрме купăс
Аллинче.

– Эс ăçта каян,
Шапа,
Каçа хирĕç
Купăспа?

– Кӳршĕ ял
Пĕви хĕрне,
Шавлă вăйă
Картине.
(*Н. Карай.*)

– Килĕшрĕ-и сире ку сăвă?
– Шапа мĕнле юрă юрласа килет?
– Вăл ăçта кайма тухнă?
– Çапла, вăл *кӳршĕ ял пĕви хĕрне, шавлă вăйă картине* каять.
– Çак сăмахсене шапа мĕнлерех калать-ши?
– Ман шутпа – мухтанарах, тен, мăн кăмăллăрах та. Унсăрăн вăйă пуçланмасть пуль ĕнтĕ. Купăссăсăр мĕнле вăйă пултăр?
– Шапа мĕнле пуçтарăннă, мĕн тăхăннă?
– Тĕрĕс, Шапан *сăран атă уринче, сĕрме купăс аллинче.*
– Ну, ку Шапана çул парсах ирттерсе ямалла пуль.
– Ӳкерчĕк çине пăхăр. Мĕн курнине каласа парăр.

Воспитатель ачасене ӳкерчĕк тăрăх калаçтарать.

## Теми: «Упапа хĕр ача»
## Вырăс халăх юмахĕпе паллаштарни

***Ĕç тĕллевĕ:*** ачасене вырăс халăх юмахĕпе паллаштарасси, ăна ăнланма пулăшасси.

***Кирлĕ материал:*** упа маски.

### Ĕ ç  й ĕ р к и

Воспитатель ачасене хăй тавра пуçтарать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эсир юмах итлеме юратнине пĕлетĕп. Çавăнпа паян тепĕр юмах каласа парăп. Вăл «Упапа хĕр ача» ятлă.

**Упапа хĕр ача**

(*Вырăс халăх юмахĕ*)

Пĕрре хĕр ачасем вăрмана çырлана кайнă. Çырла татнă та килелле утнă, пăхаççĕ – пĕр хĕр ачи çук. Ăна чĕнме пуçланă, чĕннĕ-чĕннĕ – никам та хирĕç сас паман. Яла таврăннă та хĕр ачасем Машук çухалса юлни çинчен каласа кăтартнă.

Машук çӳренĕ-çӳренĕ те вăрманти пĕр пӳрт патне пырса тухнă. Чӳречерен шакканă, никам та сăмах хушман. Алăкне тĕксе пăхнă – алăкĕ яриех уçăлса кайнă. Машук пӳрте кĕнĕ те сак çине ларнă.

Ку пӳртре упа пурăннă. Çав вăхăтра вăл килте пулман.

Каçхине упа киле таврăннă. Вăл, хĕр ачана курсан, çав тери хĕпĕртесе кайнă.

– Халь ĕнтĕ сана киле ямастăп, кунтах пурăнма юлатăн, – тет.

Хĕр ача чылай макăрнă, анчах та нимĕн те тăваймăн. Упапа вăрманти пӳртре пурăнма пуçланă.

Упа кашни кунах вăрмана туха-туха кайнă. Хĕр ача апат-çимĕç хатĕрленĕ, пӳрте тирпейленĕ. Унăн ашшĕ-амăшĕ патне çав тери каяс килнĕ. Мĕн тумалла-ха?

– Упа мучи, аттепе аннене яла кучченеç леçсе пар-ха, – тенĕ вăл.

Упа килĕшнĕ.

Акă хĕр ача кукăль пĕçерсе тултарнă. Пысăк карçинкка тупнă та упана:

– Эпĕ çак карçинккана кукăль хурса тултарăп, эсĕ ăна яла кайса пар. Анчах асту, пĕр кукăльне те ан çи. Эпĕ пӳрт тăррине хăпарăп та сана пăхса ларăп, – тенĕ.

Упа тула тухсан, хĕр ача карçинккана кĕрсе ларнă та çиелтен кукăльсем хурса тултарнă. Упа пӳрте кĕнĕ те карçинккана çурăм çине çĕклесе лартнă. Унтан вăл ялалла уттарнă.

Утсан-утсан, упа ывăнса çитет:

– Тунката çине ларам-ха,

Пĕр кукăльне çием-ха, – тет.

Хĕр ача карçинккаран:

– Куратăп, куратăп! Тунката çине ан лар, кукăль ан çи! – тет.

Упа каялла çаврăнса пăхать те тĕлĕнет:

– Епле чее ку хĕр! Çӳлте-е ларать, аякка-а курать! – тет.

Карçинккине йăтать те малалла утать. Татах кăштах каять те ывăнать:

– Тунката çине ларам-ха,

Пĕр кукăльне çием-ха, – тет.

Хĕр ача каллех:

– Куратăп, куратăп! Тунката çине ан лар, кукăльне ан çи! – тет.

– Ав епле чее хĕр! Çӳлте-е ларать, аякка-а курать! – тет упа. Унтан тăрать те хăвăртрах чупса каять.

Акă упа яла чупса кĕрет. Машукăн ашшĕпе амăшĕ пурăнакан çурта тупать те хапхаран шаккать:

– Шак-шак-шак! Питĕркĕчне уçăр, хапхине уçăр! Эпĕ сире валли Машукран кучченеç илсе килтĕм! – тет.

Сасартăк йытăсем вĕрсе яраççĕ те упа патнелле чупаççĕ. Упа карçинккине хапха патне пăрахать те вăрмана тарать.

Старик хапхине уçать. Карçинкка патне пырать те ун хупăлчине уçать. Карçинккара хăйĕн хĕрачи кулса ларать.

– Ачасем, сире ку юмах килĕшрĕ-и?
– Машук ăçта лекнĕ?
– Машукăн килне каяс килнĕ-и?
– Апла мĕншĕн кайман-ха вăл?
– Хĕр ача килне кайма мĕнле май тупнă? (*Юмахăн сыпăкне аса илтерет.*)
– Хĕр ача тавçăрулла пулни ăçтан курăнать? Аса илĕр-ха, хĕр ача упана мĕн каларĕ?
– Тĕрĕс, «*Эпĕ çак карçинккана кукăль хурса тултарăп, эсĕ ăна яла кайса пар. Анчах асту, пĕр кукăльне те ан çи. Эпĕ пÿрт тăррине хăпарăп та сана пăхса ларăп, – тенĕ».*
– Хĕр ача упана систермесĕр карçинккана епле кĕрсе ларма пултарчĕ?
– Упа çул çинче карçинккана ан уçтăр тесе вăл мĕн шутласа тупрĕ-ха?
– Упан кукăль çиесси пулчĕ-и?
– Ачасем, айтăр-ха упа вăрманпа мĕнле пынине кăтартатпăр. Акă вăл карçинккине йăтнă, ак çапла пырать пуль, çапла-и?
– Миша, сан шутпа мĕнле пырать? Аса илĕр-ха, ун карçинкки йывăр вĕт! Çавăнпа, тен, малалла ÿпĕннĕ пулĕ? Утса кăтартăр-ха çавăн пек.
– Ну, чăн-чăн упасем пекех вара эсир!

Воспитатель ачасемпе юмахри диалога выляса илет. Упа вырăнне хăй пулма пултарать, упа маскине тăхăнать, сассине те упанни евĕр кăларать, кайран упа сăмахĕсене ачасем те калаççĕ.

М и ш а. *Ух, ывăнтăм. Тунката çине ларам-ха, пĕр кукăльне çием-ха.*

Воспитатель ачасене кирлĕ сăмахсене аса илме, хуравлама пулăшать.

В о с п и т а т е л ь. *Куратăп, куратăп! Тунката çине ан лар, кукăльне ан çи!*
М и ш а. *Ав епле чее хĕр! Çÿлте-е ларать, аякка-а курать! Каям-ха васкарах малалла.*
В о с п и т а т е л ь. Ачасем, Машук киле çитрĕ-и? Сире юмахра геройсенчен хăшĕ килĕшрĕ? Мĕншĕн? Юмахри хăш вырăна ас туса юлтăр?

## Теми: «Автан тус, автан тус»
## П. Эйзин сăввипе тата И.Я. Яковлевăн калавĕпе паллаштарни

***Ĕç тĕллевĕ:*** ачасене автана сăнлакан хайлавсемпе паллаштарасси; ăнланма, вĕсен содержанийĕ тăрăх калаçма, харкам хăй кăмăлне палăртма пулăшасси.

***Кирлĕ материал:*** автан ÿкерчĕкĕ, тетте автан.

### Ĕ ç й ĕ р к и

Воспитатель ачасене тупмалли юмах итлеме сĕнет: «Хăй хуралçă мар, пурне те вăратать». (*Автан.* ) Тупсăмĕ ÿкерчĕк çинче. (*Ăна, тÿнтерле лартнăскерне, тупмалли юмахăн тупсăмне пĕлсен воспитатель пиччĕн çавăрса лартать*). Ачасем воспитательпе пĕрле автана сăнлаççĕ.

– Автан мĕн тĕслĕ?
– Унăн мĕн-мĕн пур? (*Пуçĕ, хӳри, кĕлетки, ури.*)
– Пуçĕ çинче мĕн пур? (*Хĕрлĕ киккирикĕ.*)
– Куçĕ мĕнле? (*Çавракa.*)
– Ури мĕнле (*Урисем пысăк, тĕклĕ.*)
– Ури çинче мĕн пур? (Ури çинче качисем пур.)

Воспитатель ачасем каласа пынă май мĕн каланине ӳкерчĕк çинче кăтартса пырать, ăнланман сăмахсене ăнлантарса парать.

– Автан мĕн тăвать? Тулă пĕрчисене ... (*сăхать*), чăхсене, чĕпсене ... (*апата йыхăрать*), ирхине ирех ... (*авăтать*).
– Вăл мĕнле авăтать?
– Автан мĕн юратать?
– Халĕ эпĕ сире автан çинчен калав вуласа парăп. Тимлĕ итлĕр. (*Ӳкерчĕке тӳнтерле çавăрса лартать.*) Калава чăвашсене çутта кăларакан, вĕрентекен Иван Яковлевич Яковлев çырнă. Ячĕ – «Автан».

**Автан**

Пирĕн пĕр пысăк хĕрлĕ автан пур. Вăл тăр-кăнтăрла урапа çине хăпарать те: «Ки-ки-ри-ку!» – тесе авăтать. Сасси аван; хӳри илемлĕ, авăна-авăна тăрать. Киккирикĕ пысăк; тĕклĕ ураллă; качи вăрăм.
Сирĕн автан çапла-и?

(*И. Яковлев.*)

– Килĕшрĕ-и сире ку автан?
– Пирĕн ӳкерчĕкри автан вара мĕнлеччĕ?

Ачасем воспитатель пулăшнипе автана сăнлаççĕ.

– Пирĕн автан ... (*пысăк, шурă*).
– Унăн хӳри ... (*илемлĕ, авăна-авăна тăрать*).
– Автанăн киккирикĕ ... (*хĕрлĕ*), ури ... (*тĕклĕ*), качи ...(*вăрăм*).

Воспитатель аллинче тетте автан. Автан ачасене чăх картине «йыхăрать». Ачасем автан пек урасене çӳле çĕклесе утаççĕ, «çунаттисемпе» суллаççĕ, автан пек авăтаççĕ. Воспитатель вылянă май ачасене автанăн киккирикне, алкине, кĕмĕл хӳрине сăнама ыйтать, кăтартать. Тытса пăхма сĕнет.

– Ачасем, автан туспа калаçса илер-и?

Воспитатель П. Эйзинăн «*Автан тус, автан тус...*» сăввине вулать.

**Автан тус, автан тус...**
– Автан тус, автан тус,
Киккирикӳ миçе пус?
– Пĕр пуспа та парас çук,
Çĕр пуспа та сутас çук.

– Автан тус, автан тус,
Ылтӑн алку миҫе пус?
– Пӗр пуспа та парас ҫук,
Ҫӗр пуспа та сутас ҫук.
– Автан тус, автан тус,
Кӗмӗл хӳрӳ миҫе пус?
– Пӗр пуспа та парас ҫук,
Ҫӗр пуспа та сутас ҫук.
(*П. Эйзин.)*

– Килӗшрӗ-и сире, ачасем, сӑвӑ? Ку сӑвва Петӗр Эйзин ҫырнӑ. Автор автанран мӗн ҫинчен ыйтать?

– Тӗрӗс, вӑл автанӑн киккирикӗ, алки, хӳри мӗн хакне пӗлесшӗн.

– Пӗлчӗ-и? Мӗн хак вара? Мӗнле хуравлать автан?

*– Пӗр пуспа та парас ҫук,*
*Ҫӗр пуспа та сутас ҫук.*

– Ачасем, кам автанпа выляс тет?

Воспитатель тетте автана ачана парать. Вӑл автан тытнӑ ачаран сӑвӑ йӗркисемпе киккирикӗ, алки, хӳри мӗн хак тӑнине ыйтать. Ачана хуравлама пулӑшать.
Теттене тепӗр ача илсен вӑйӑ малалла тӑсӑлать.

## Теми: «Кайӑксем килеҫҫӗ»
## И. Малкайӑн «Куккук килнӗ» сӑввипе паллаштарни

***Ӗҫ тӗллевӗ:*** ачасене кайӑксене сӑнлакан хайлавсемпе паллаштарасси; ӑнланма, вӗсен содержанийӗ тӑрӑх калаҫма, харкӑм хӑй кӑмӑлне палӑртма пулӑшасси.

***Кирлӗ материал:*** ҫуркуннене сӑнлакан ӳкерчӗк, кайӑксен ӳкерчӗкӗсем.

### Ӗ ҫ   й ӗ р к и

Воспитатель ачасене сӑвӑ итлеме сӗнет.

**Юр ирӗлет**
Ҫӳлте хӗвел йӑл кулать,
Шур юр унтан вӑтанать,
Шур юр унтан вӑтанать,
Ирӗлет те шыв пулать.
(*В. Давыдов-Анатри.*)

– Ачасем, савӑра калани хӑҫан пулать?

– Унта сӑнланӑ ҫут ҫанталӑкри улшӑнусене аса илер-ха. Ҫакӑ хӑҫан пулать?

– Ҫапла, ҫуркунне. Ҫуркунне ҫитрӗ. Пурте хавас ҫуркуннене. Пуринчен ытла – кайӑксем. Кайӑксем пӗрин хыҫҫӑн тепри васкаса тӑван ҫӗр-шыва тав-

рӑнаççӗ. Малтан тырӑ сӑхаканнисем килеççӗ, вӗсем хыççӑн – шывра ишекеннисем, юлашкинчен вара шӑна-пӑванпа тӑранса пурӑнаканнисем.

– Ачасем, эсир çуркунне вӗçсе килекен мӗнле кайӑксене пӗлетӗр?

– Маттур, эпӗ те пӗлетӗп вӗсене. Акӑ итлӗр, нимӗн те пӑтраштармастӑп-и эпӗ?

Вӗçсе килчӗç кайӑксем:
Сурӑхсемпе чӗкеçсем,
Кураксемпе шӑнкӑрчсем,
Ӗнесемпе чӗрӗпсем.

– Мӗншӗн кулатӑр? Апла-и-ха, тӗрӗс мар пулчӗ иккен. Тепре итлӗр.

Вӗçсе килчӗç кайӑксем:
Кулькисемпе çерçисем,
Чӑхсемпе тӑманасем,
Чанасемпе куккўксем.

– Маттур, питӗ тимлӗ эсир. Чӑххисем чӑнах та кунтах, килтех пурӑнаççӗ çав: ниçта та вӗçсе те каймаççӗ, ниçтан та вӗçсе те килмеççӗ. Шутласа пӑхӑр, чӑхсем вырӑнне мӗнле кайӑксене асӑнма пулать?

– Халӗ Иван Малкай çырнӑ сӑвва итлӗр. Вӑл «Куккўк килнӗ» ятлӑ.

**Куккук килнӗ**

Куккук килнӗ,
Куртӑр-и?
– Куртӑмӑр.
Ку-ку-ку-ку! тенине
Илтрӗр-и?
– Илтрӗмӗр.
Эпир ун чух
Вӑрманта
Пултӑмӑр.
Хитре-хитре
Чечексем
Пухрӑмӑр.
(*И. Малкай.*)

– Куккук ытти кайӑкран мӗнпе уйрӑлса тӑрать?

Воспитатель ачасене кайӑксен ӳкерчӗкӗсене кӑтарать.

– Хӑшӗ кунта куккук?

Ачасем воспитательпе пӗрле куккук ӳкерчӗкне уйӑрса илеççӗ, ытти ӳкерчӗсенче сӑнланӑ кайӑксен ячӗсене калаççӗ.

## Калаçу теми «Çуркунне»
## К. Ивановăн «Çуркунне» сăввипе паллаштарни

***Ĕç тĕллевĕ:*** ачасене çуркуннене сăнлакан хайлавсемпе паллаштарасси; ăнланма, вĕсен содержанийĕ тăрăх калаçма хистесси.

***Кирлĕ материал:*** çуркуннене сăнлакан ўкерчĕк.

### Ĕ ç й ĕ р к и

Воспитатель ачасене çуркуннене сăнлакан ўкерчĕке пăхма сĕнет.

– Ачасем, ўкерчĕкре çулталăкăн хăш вăхăтне сăнласа панă?

– Чăнах та çуркунне-и? Çуркуннен мĕнле паллисене куратăр? Кашниех харкам хуравне *çуркунне* сăмахран пуçлăр.

– Çуркунне ... *юр ирĕлет.*

– Маттур, Лена.

– Çуркунне ... *чечексем тухаççĕ.*

Воспитатель ўкерчĕкре сăнланă паллăсене уйăрса калама пулăшать. Хуравĕсене ачасен пĕлĕвĕ, опычĕ çине таянса йĕркелеттерет. (*Кайăксем вĕçсе килеççĕ, хурт-кăпшанкă вăранать, чĕр чунсем тумĕсене улăштараççĕ, хĕвел хĕртме пуçлать...)*

– Ачасем, эпĕ сире Константин Иванов çырнă «Çуркунне» ятлă сăвва вуласа парам-ха.

**Çуркунне**

Килчĕ ырă çуркунне,
Килчĕ ячĕ ăшăтса.
Хĕвел савать тĕнчене,
Хĕл ыйхинчен вăратса.

Çўлте, пĕлĕт айĕнче,
Тăри юрри илтĕнет.
Çемçе курăк çийĕнче
Путек-сурăх сиккелет.
(*К. Иванов.*)

– Сăвва итленĕ май сирĕн мĕнле кăмăл çуралчĕ?

– Мĕншĕн çуркуненне «ырă» тенĕ?

– *Савать* тенине урăхла мĕнле калама пулать?

– Хĕвел тĕнчене мĕнле савать?

– Тĕнче хĕл ыйхинчен вăраннине эпир мĕнле паллăсем тăрăх пĕлме пултаратпăр? (*Çĕр ăшăнчĕ, сывласа ячĕ, черчен симĕс курăкпа хупланчĕ – путек-сурăха чăн-чăн уяв. Йывăç-тĕмĕ çулçăпа витĕнчĕ. Этем те пĕтĕм тĕнчепе пĕрле çуркуннешĕн савăнать.)*

– Ўкерчĕк çине тимлĕрех пăхсамăр. Таврара мĕн юрри янрать?

– Çапла, тăри юрри. Мĕн çинчен-ши ун юрри? Тен... Итлер-ха, тен, ун юрри çапларах.

**Тăр-тăри**

Тăри ирех тăнă та
Шăрантарать юррине:
– Тăр-тăри, тăр-тăри,
Ирпе ирех тăтăр-и,
Пăри пĕрчи акрăр-и,
Пăри пăтти çакрăр-и,
Сарă çуне сапрăр-и,
Çиме мана лартрăр-и?

– Тăри мĕнле юрлать? Кам хăш йĕркесене астуса юлчĕ? Аса илер çак йĕркесене.

Воспитатель ачасене тăри юррине сăнлакан йĕркесене аса илсе евĕрлеме хавхалантарать, пулăшать.

## Теми: «Апрель»
## В. Алентейĕн «Апрель» сăввине аса хывни

***Ĕç тĕллевĕ:*** ачасене Василий Алентейĕн «Апрель» сăввипе паллаштарасси (юлашки çаврăмсăр); ăна аса хывма пулăшасси.

***Кирлĕ материал:*** сăвăра палăртнă çуркунне паллисене сăнлакан ӳкерчĕксем – мнемотаблица, çуркунне вĕçсе килекен кайăксене сăнлакан ӳкерчĕксем (хура курак, шăнкăрч, вĕлтрен тăрри, тăри, чĕкеç, шăпчăк), вĕсен сассисене çырса илни.

### Ĕ ç  й ĕ р к и

– Мĕнле илемлĕ паян çанталăк. Ачасем, аса илтерсемĕр – çулталăкăн хăш вăхăчĕ пырать?

– Çапла, çуркунне.

– Эпир сирĕнпе çуркуннене кăтартакан паллăсене уçăмланăччĕ – аса илер-ха. Эпĕ çуркуннен пĕр-пĕр паллине калăп – эсир мана тĕрĕслĕр: нимĕн те пăтраштармăп-и?

– Юр юлмарĕ таврара, кайрĕ пăрĕ çырмара.

– Вăрмансем çаралчĕç,
Уй-хирсем хура,
Кайăк-хур саланчĕ
Ăшă кăнтăра.

– Ача-пăча ярăнать, тăвайккине якатать.

– Тухать курăк çăп-çăра
Хĕвел хытă хĕртнĕрен.

– Сарă, хĕрлĕ çулçăсем
Тăкăнаççĕ çĕр çине.

– Юр каять те, сип-симĕс калча
Уй-хире ем-ешĕл тĕс парать.

– Пăт-пăт,
Пăтăр, пăтăр!
Тумласем ÿкеççĕ, пăхăр!

Воспитатель ачасене асăннă паллăсем тăрăх çулталăкăн вăхăтне тĕрĕс пĕлме пулăшса пырать.

– Маттур, ачасем! Эпĕ сире сăвă вуласа парăп. Ку сăвăра çуркуннен паллисене туллинрех сăнласа панă. Итлесемĕр.

Воспитатель ачасене Василий Алентейĕн «Апрель» сăввин сыпăкне вуласа парать.

**Апрель**

Шăнкăрчсем хавас юрлаççĕ,
Шарласа шывсем юхаççĕ,
Йăмрасем кăчка лараççĕ,
Чаплă-çке апрель.
Çепĕç çеçпĕлсем тухаççĕ,
Хурăнсем ăшша туяççĕ,
Çамрăк çулçă кăлараççĕ,
Чаплă-çке апрель.
Тракторсем хирте ĕçлеççĕ,
Тарăн касăсем чĕреççĕ,
Тăрисем çÿлте вĕçеççĕ,
Чаплă-çке апрель.
(*В. Алентей.*)

– Ачасем, сире сăвă килĕшрĕ-и?

– Çапла, урамра – çуркунне! Сивĕ хĕл кунĕсем хыççăн çуркунне пире савăнтарать. Хаваслă сăвă.

– Ачасем, сăвăра пĕр йĕрке темиçе хут янăрать. Çав йĕркене кам ас туса юлчĕ?

– Тĕрĕс: «*Чаплă-çке апрель».* Апрель уйăхĕ чăннипех те чаплă. Сăввăн ячĕ те çавăн пекех. Сăвă «Апрель ятлă». Ăна Василий Алентей çырнă.

– Ачасем, эпĕ ку сăвва сире тепре вуласа парăп. Анчах та хальхинче кашни йĕркине «ÿкерсе» пырăп. Мĕнле тетĕр-и? Ак çапла:

| | |
|---|---|
| *Шăнкăрчсем хавас юрлаççĕ* | Воспитатель мольберт çине шăнкăрчсене сăнлакан ӳкерчĕке çирĕплетет |
| *Шарласа шывсем юхаççĕ* | Каланă йĕркепе килĕшӳллĕ ӳкерчĕке вырнаçтарать |
| *Йăмрасем кăчка лараççĕ* | Мольберт черетлĕ ӳкерчĕкпе – симĕсленме пуçланă йăмрасене сăнлаканнипе – пуянланать |
| *Чаплă-çке апрель* | Кăшкăру палли ӳкернĕ хута кăтартать |

Воспитатель çавăн пекех малалла та пĕтĕм сăвва каланăçем ачасем умĕнче йăлтах куçăмласа пырать.

– Акă мĕнле «çырса хума» пултартăмăр ку сăвва!

Воспитатель мольберта куçарса хурать, ура çине тăрса, таврана кăтартса сăвă вулать.

**Çуркунне**

Юр юлмарĕ таврара,
Кайрĕ пăрĕ çырмара.
Тари-тари, та-ра-ра,
Юхрĕ шывĕ çыр таран.

Пултăм эпĕ вăрманта,
Мĕскер куртăм-ха унта?
Тари-тари, та-ра-ра,
Пин-пин кайăк вăйăра.
(*Е. Афанасьев.*)

– Эпĕ те сире вăрманта усăлса çӳреме чĕнетĕп. Вăйăри кайăксен сассисене итлĕпĕр.

Воспитатель ачасене кавир çине тухма чĕнет.

– Çуркунне мĕнле кайăксем вĕçсе килеççĕ?

– Тĕрĕс, малтан хура кураксем, каярах шăнкăрчсем вĕçсе килеççĕ. Хыççăнах ыттисем те – вĕлтрен тăррисем, тăрисем, чĕкеçсем, шăпчăксем.

Воспитатель кашни кайăк ятне асăннăçем вĕсене сăнлакан ӳкерчĕксене кăтартса пырать.

– Ачасем, ку кайăксем пурте пирĕн вăрманта хăйсен юррисене юрлĕç. (*Кайăксен ӳкерчĕкĕсене пӳлĕмре тĕрлĕ вырăнта вырнаçтарса тухать.*)

– Хăшĕ юрласа ярать – эпир çавăн патневаскăпăр, юрришĕн тав тăвăпăр.

Воспитатель кайăксен сассине çырса илнине ярать, ачасене кирлĕ кайăка тупма пулăшать, тав сăмахĕсене калама хавхалантарать: «Тавах сана, шăнкăрчăм, хăвăн юррупа савăнтарнăшăн», «Тавах сана, хура курак, çуркуннене илсе килнĕшĕн, тыр-пула, пахча çимĕçе сиен кӳрекен хурт-кăпшанкăсенчен хăтарнăшĕн...

Унтан воспитатель ачасене ларма сĕнет. Мольберт çине пăхма ыйтать.

– Ачасем, эпĕ мольберт çине мĕн çырса хунине вулама пултарăр-и?

– Малтан хама тĕрĕслем-ха. Эпĕ ас туса юлма пултартăм-и? Эсир, ачасем,

тимлĕ итлĕр, тархасшăн. Мана пулăшу кирлĕ пулма пултарать.

Воспитатель Василий Алентейĕн «Апрель» сăввине вулать (вуланăçем указкăпа ўкерчĕксене кăтартса пыма пулать). Тĕллĕн-тĕллĕн чарăнса ачасене те сăвва калама хистесен аван.

–Тавах, сире, ачасем, пулăшнăшăн. Коля манран та лайăхрах ас туса юлнă пулас. Каласа парсам сăвва.

Воспитатель сăвва ачасенчен уйрăмшарăн ыйтать, малтан лайăх ас туса юлма пултарнисене хавхалантарать, сăвва калама пулăшса пырать.

## Теми: «Чĕпсем»
## В. Сутеевăн «Чăх чĕппипе Кăвакал чĕппи» юмахĕпе паллаштарни

***Ĕç тĕллевĕ:*** В. Сутеевăн «Чăх чĕппипе Кăвакал чĕппи» юмахĕпе паллаштарасси, малтан паллашнă юмахĕсене аса илтересси.

***Кирлĕ материал***: юмахри персонажсен ўкерчĕкĕсем, виçĕ курупка (хуплашкисем çине малтан вуланă юмахсенчи самантсене сăнлакан ўкерчĕксем çыпăçтарнă).

### Ĕ ç  й ĕ р к и

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, сире паян икĕ тус çинчен юмах вуласа парăп. Паллашар-ха пĕрремĕшпе. Сăвва тĕрĕс вĕçлеме пултарсан вăл камне пĕлĕпĕр. Итлĕр.

**Кăвакал чĕппи**

Шывра ишет сар çăмха –
Сўтĕлмест çиппи.
Çăмха мар вăл, чимĕр-ха, –
(...)
(*Н. Васильев.*)

– Тавçăртăр-и мĕн çинчен каланă?

– Çапла, кăвал чĕппи çинчен. Мĕншĕн кăвакал чĕппи тесе шутларăр, чăх чĕппи те сар çăмха пекех вĕт, сап-сарă, кăпăшка?

– Шăпах чăх чĕппипе кăвал чĕппи çинчен юмах вуласа парасшăн та сире. Итлĕр. Ячĕ те ку юмахăн – «Чăх чĕппипе Кăвакал чĕппи».

**Чăх чĕппипе Кăвакал чĕппи**

Кăвакал чĕппи çăмартана шăтарса тухрĕ.
– Эпĕ çăмартана шăтарса тухрăм, – терĕ вăл.
– Эпĕ те, – терĕ чăх чĕппи.
– Эпĕ усăлма каятăп, – терĕ Кăвакал чĕппи.
– Эпĕ те, – терĕ Чăх чĕппи.
– Эпĕ çĕр чакалатăп, – терĕ Кăвакал чĕппи.

– Эпĕ те, – терĕ Чăх чĕппи.
– Эпĕ ăман тупрăм, – терĕ Кăвакал чĕппи.
– Эпĕ те, – терĕ Чăх чĕппи.
– Эпĕ лĕпĕш тытрăм, – терĕ Кăвакал чĕппи.
– Эпĕ те, – терĕ Чăх чĕппи.
– Эпĕ шыва кĕме каятăп, – терĕ Кăвакал чĕппи.
– Эпĕ те, – терĕ Чăх чĕппи.
– Эпĕ ишетĕп, – терĕ Кăвакал чĕппи.
– Эпĕ те! – кăшкăрчĕ Чăх чĕппи. – Çăлăр! Путатăп!
Кăвакал чĕппи Чăх чĕппине çырана туртса кăларчĕ.
– Эпĕ татах шыва кĕме каятăп.
– Эпĕ тек каймастăп, – терĕ Чăх чĕппи.

(*В. Сутеев.*)

– Ачасем, сире юмах килĕшрĕ-и?
– Чăх чĕппийĕ мĕнлескер?
– Пĕчĕк, хитре, айван. Çапла, вăл айванрах. Теприн хыççăн тем тума та хатĕр. Ялан апла тума çук çав. Чăх чĕппипе кăвакал чĕппи вĕсем тĕрлĕ кайăк-кĕшĕк-çке-ха.
– Атьăр тепре аса илĕпĕр хайлава. Вăл мĕнле пуçланчĕ? Кăвакал чĕппи малтан мĕн турĕ? Чи малтанах...
– Çапла, çăмарта шăтарса тухрĕ. Унтан... Шыва кĕме кайрĕ. Чăх чĕппи вара мĕн турĕ? ...
– Веçех Кăвакал чĕппи хыççăн туса пычĕ, çапла-и?
– Чăх чĕппи мĕн тума пултараймарĕ? Мĕншĕн?
– Çапла, чăхсем шывра ишеймеççĕ. Вĕсем шыв кайăкĕсем мар.
– Пĕчĕк Чăх чĕппи кулăшла хăтланать. Анчах ку темех мар, вăл пĕчĕкçĕçке, пĕчĕк ача пекех.

Воспитатель ачасене вăйă выляма чĕнет – ӳкерчĕксем пăтрашăнса кайнă.
Кашнине хăйĕн курупкине хумалла.
Пĕр курупки «Çарăк» юмахри ӳкерчĕксем валли, тепри – «Йăва» юмахри, виççĕмĕшĕ – халĕ вуланă юмахри ӳкерчĕксем валли. Курупкисене ачасем хуплашки тăрăх палласа илеççĕ.

## Теми: «Карап»
## А. Барто сăввине аса хывни

***Ĕç тĕллевĕ:*** ачасене А. Барто сăввипе паллаштарасси, ас туса юлма пулăшасси; ачасен пуплевĕн сăмах йышне пуянлатасси; ас тăвăмне, çĕннине пĕлес кăмăлне аталантарасси; вăйă опытне анлăлатасси.

***Кирлĕ материал:*** матрос тумĕ тăхăннă ачана (çитĕннине) сăнлакан ӳкерчĕк, матрос шапки, кашни ача валли хутран тунă карап, сăвва сăнлакан иллюстраци.

### Ĕ ç й ĕ р к и

В о с п и т а т е л ь. Пур ача та выляма юратать. Харкам тĕллĕн те, пĕрле пуçтарăнса та выляма пулать. Эсир хăвăр мĕнле вăйăсем вылятăр? (*Ачасене тимлĕ итлет, шухăшĕсене палăртма пулăшса пырать.*) Вăйăсем тĕрлисем пулма пултараççĕ. Ачасем, эпĕ сире ӳкерчĕк кăтартăп – ача мĕнле вылять-ши?

Воспитатель А. Барто çырнă «Карап» («Кораблик») сăввине сăнлакан иллюстраци кăтартать. Ӳкерчĕк тăрăх ачасене калаçтарать. (*Кама куратăр? Арçын ача тумĕ сире тĕлĕнтермест-и? Ача мĕн тăвать? Аллине мĕн тытнă? Арçын ача пĕччен-и? Шаписене тата мĕн кăсăкланта-рать-ши?...*)

– Ачасем, халĕ сире ӳкерчĕкри ачан вăййи çинчен сăвă вуласа парăп. Тимлĕ итлĕр. Ăна Агния Барто çырнă, «Карап» ятлă.

**Карап**

Килтен тухрăм эпĕ  
Матрос тумĕпе,  
Карап сĕтĕретĕп  
Çырма хĕррипе.  
Шапасем пĕр вĕçĕм  
Пыраççĕ хыçран:  
– Ярăнтарччĕ, – теççĕ, –  
Пире, капитан.

(*А. Барто. Н. Ыдарай куçарнă.*)

– Ачасем, сире сăвă килĕшрĕ-и?  
– Ача мĕнле вылять?  
– Сăвă мĕнле кăмăл çуратать?  
– Мана та ку сăвă питĕ килĕшет.  
– Сăвă мĕнле пуçланнине кам ас туса юлчĕ?  
– Маттур, Коля! Тĕрĕс каларăн.  
*Килтен тухрăм эпĕ*  
*Матрос тумĕпе,*  
– Эпĕ сире матрос тумне кăтартасшăн.

Воспитатель ӳкерчĕке сăнласа парать.

– Матрос тумĕ питĕ хитре: кăвакпа шурă йĕрлĕ тельняшка, пысăк тăваткал кăвак çухави хĕррине вицĕ шап-шурă йĕр илемлетет. Моряксен пуçĕнче сăм-сасăр карттус – хура хăюсемлĕ шурă шапка. Питех те капăр форма. Моряксен тумне тăхăнсан кашниех хăйне мăнаçлă туять пулĕ.

– Манăн сире моряксен шапкине тăхăнтарса пăхас килет. Çак сăмсасăр карттуса бескозырка теççĕ. (*Ачасене пĕрле, уйрăмшарăн калаттарать.*)

– Эсир те çак сăвăри ача пек капитан пулса пăхăр, хăвăр карап мĕнле сĕтĕрнине калăр.

Воспитатель матрос шапкине малтан хăй «тăхăнать» сăввăн малтанхи çаврине каласа пĕр вырăнта утать.
Ачасене, кăмăлне кура, черечĕпе тăхăнма пулăшать, сăввăн сăмахĕсене шăппăн аса илтерсе пырать. Мухтама манса каймасть: «Маттур, Коля, чăн-чăн капитан!»

– Ача пĕччен мар. Мĕнсем унпа пĕрле ярăнасшăн?
– Шапасем.
– Тĕрĕс. Коля, капитанпа пĕрле *«Шапасем пĕр вĕçĕм пыраççĕ хыçран?»*

Воспитатель ачана сăвă йĕркисемпе хуравлама пулăшать.

– Çапла, «*Шапасем пĕр вĕçĕм пыраççĕ хыçран»*.
– Катя, *«Шапасем пĕр вĕçĕм пыраççĕ хыçран?»*

Воспитатель çапла 2-3 ачаран ыйтать.

– Мĕншĕн шапасем уйрăлми пыраççĕ?
– Тĕрĕс, вĕсем ярăнасшăн:
*Ярăнтарччĕ, – теççĕ, –*
*Пире, капитан.*
– Ачасем, сирĕн те карап çинче ярăнас килмест-и?
– Апла пулсан, ыйтăр çеç – эпĕ кашнинех караппа тивĕçтерĕп.

Воспитатель ачасене хутран тунă карапсем парать. Парас умĕн сăвăри сăмахсемпе ыйтма хавхалантарать: *«Ярăнтарччĕ, пире, капитан»*.

– Халĕ кашниех хăйĕн карапĕпе тинĕсе тухать.

Воспитатель ачасене пӳлĕмре «ишме» чĕнет.)

– Тинĕс лăпкă, карапсем ерипен ишеççĕ.

Ачасем хуллен утса карап тытнă аллипе хумсем тăрăх хăпарса аннă пек кăтартаççĕ.

– Ачасем, çил тухрĕ!

Ачасем пӳлĕмре хуллен чупса хускалаççĕ.

– Çил чарăнчĕ, тинĕс лăпкă.

Утма пуçлаççĕ.
Çапла 2-3 хут выляса илсен воспитатель ачасене: «Карапсем пурте порта таврăнаççĕ», – тет. «Порт» ăçтине кăтартатса воспитатель карапсене сĕтел çине хума ыйтать, ачасене ларма сĕнет. Мольберт çине сăвва сăнлакан хăйсем маларах пăхнă иллюстраци çумне теприне вырнаçтарать. Ăна пĕрле сăнаççĕ. Ку ӳкерчĕк те сăвва сăнланине палăртаççĕ.
Ку шухăша çирĕплетсе воспитатель ачасене сăвва тепре вуласа парать.

– Ачасем, халĕ сăвва эсир каласа парсамăр. Кашни капитана хăйĕн карапĕпе тивĕçтерсе пырăп. Вăл карапсен çирĕплĕхне эпир урамри кӳлленчĕксенче те тĕрĕслĕпĕр-ха.

Воспитатель ачасене сăвва пăхмасăр калама пулăшса пырать. «Портри» карапсене тавăрса парать.
Ачасем карапсемпе хăйсем пĕлнĕ пек выляма пуçлаççĕ.

**Теми: «Теттесем»**
**А. Барто сăввисемпе паллаштарни**

***Ĕç тĕллевĕ:*** ачасене А. Барто çырнă «Качака путекки», «Мулкач» сăвăсемпе паллаштарасси, «Мишкă» сăввине аса илтересси.

***Кирлĕ материал:*** «Игрушки. Теттесем» кĕнеке (А. Барто. Н. Ытарай куçарнă), теттесем (мулкач, упа, качака путекки), тĕклĕ ал шăлли.

Ĕç йĕрки

Воспитатель. Эпĕ сире паян пĕр кĕнеке кăтартас тетĕп. Кунта Агния Барто çырнă сăвăсем. Вĕсене чăвашла Николай Ытарай çыравçă куçарнă. (*Кĕнекене кăтартатса 10-11-мĕш страницăсен тĕлĕнче уçать.*) Кĕнекери ӳкерчĕксем питĕ илемлĕ. Акă пăхсамăр. Вĕсене Ирина Калентьева художник ӳкернĕ.

– Килĕшеççĕ-и?

– Мана та ку ӳкерчĕк килĕшет. Ӳкерчĕкре мĕн-мĕн курнине каласамăр.

Ачасем каласа тухаççĕ: хĕр ача, качака путекки, пан улми йывăççи...

– Хĕр ача мĕн тăвать?

– Çапла, ман шутпа та – хĕр ача вылять. Хитре хĕрлĕ кĕпе тăхăннă, çӳçне икĕ енне пуçтарнă хĕр ача качака путеккипе вылять. Вăл пӳрнисемпе (*ачасене калама хавхалантарать*) мăйрака тунă, умнелле ӳпĕннĕ. Качака путеккине: «Эпĕ те качака путекки. Атя пĕрле вылятпăр», – тенĕн туйăнать.

– Ачасем, качака путеккине сăнласа парсамăр.

– Çапла, качака путекки шап-шурă, чĕрнисем хуп-хура. Мăйĕнче унăн – хĕрлĕ хăю. Вăл пуçне çĕкленĕ, хĕр ача çине кăмăллăн пăхать. Халĕ эпĕ сире ку страницăри сăвва вуласа парăп. Агния Барто. Качака путекки.

**Качака путекки**

Илсе тухăп ирхине
Качака путеккине.
Илсе тухăп çереме
Сиккелесе çӳреме.

Вăл таçта çĕтес пулсан
Хамах тупăп шыраса.
(*А. Барто. Н. Ыдарай куçарнă.*)

– Ачасем, сире сăвă килĕшрĕ-и?

– Сирĕн те хĕр ачапа, качака путеккипе пĕрле çерем çинче сиккелесе çӳрес кăмăл çуралмарĕ-и?

Ачасен кӑмӑлне кура воспитатель вӗсемпе пӗрле хускалса илме пултарать.
Ачасем пурте качака путеккисем пулса тӑраҫҫӗ, воспитатель вӗсене вырӑнтан тӑрса (сӑвва кӑшт улӑштарса: *Илсе тухӑп ирхине / Качака путекки<u>сене</u>. Илсе тухӑп ҫереме / Сиккелесе ҫӳреме*) вӑййа тухма чӗнет.
Юлашки *(Вӑл таҫта ҫӗтес пулсан / Хамах тупӑп шыраса)* йӗркесене каланӑ май ачасем «пытанаҫҫӗ». Воспитатель пурне те шыраса тупать. Вырнаҫса ларма сӗнет.

– Ачасем, халӗ эпир кӗнекене малалла тишкерӗпӗр. Ӳкерчӗке сӑнасамӑр. (*Кӗнекене 22-23-мӗш страницӑсен тӗлӗнче уҫать*.)

– Мӗн ку?

– Мулкач.

– Мулкач питне тимлӗрех сӑнӑр-ха. Мӗн куртӑр?

– Куҫҫуль тумламӗ.

– Мулкач йӗрет! Унӑн сӑнӗ салху.

– Мулкач ӑҫта?

– Ҫапла, вӑл сак (тенкел) ҫинче. Сакӑн хыҫӗ эрешлӗ. Мулкач урамри илемлӗ тенкел ҫинче макӑрса ларать. Сак хыҫӗ ҫинчи кайӑка сӑнасамӑр. Вӑл мулкача йӑпатать пулӗ?

– Халӗ эпӗ сире ку кӗнекери сӑвва валаса парӑп – вара мулкачпа мӗн пулнине ӑнланӑпӑр. Агния Барто. Мулкач.

**Мулкач**

Мукача манса хӑварнӑ –
Йӗпенсе выртать мулкач.
Вӑл тенкел ҫине йӑваннӑ,
Пулӑшмасӑр, анаймасть.
(*А. Барто. Н. Ыдарай куҫарнӑ.*)

В о с п и т а т е л ь (*кӑшт тӑхтасан*). Ачасем, хуйхӑрсах ан ӳкӗр. Мулкачпа йӑлтах йӗркеллӗ пулӗ. Курӑр акӑ. (*Ал шӑллипе чӗркенӗ тетте мулкача кӑтартать.)* Акӑ вӑл – сӑвӑри йӗпенсе выртнӑ мулкач. Вӑл Тишка ятлӑ. Эпӗ ӑна ал шӑллипе чӗркерӗм. Вӑл типсе ӑшӑнчӗ те ҫывӑрса кайрӗ. (*Мулкача «вӑратать».*) Тишка, вӑран, тӑр, вӑрӑм хӑлха Тишка!

Воспитатель ачасене хӑйне пулӑшма ыйтать.

А ч а с е м. Вӑрӑм хӑлха Тишка, вӑран!

Мулкач «вӑранать», ачасене сывлӑх сунать, ӑна воспитатель «калаҫтарать».

М у л к а ч. Ачасем, эсир ҫывӑхра качака путеккине асӑрхамарӑр-и? Кунта инҫех мар Мишкӑ ҫӳрет. Вӑл питӗ ҫилленчӗк. Ан тивтӗрччӗ Мишкӑ качака путеккине.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эпир вӑл Мишкӑна пӗлетпӗр пуль? Упа мӗншӗн ҫилленнине те чухлатпӑр.

Воспитатель тетте упана кӑтартать, ачасене «Пӗчӗк упа Мишкӑ» сӑвва аса илтерет.

**Пĕчĕк упа Мишкă**

Пĕчĕк упа Мишкă
Вăрманпа пырать,
Йĕкелсем тупать те
Кĕсйине хурать.

Пĕр йĕкелĕ ӳкрĕ
Ун çамки çине.
Мишкă, ах, çиленчĕ,
Тапрĕ урипе!

(*А. Барто. Н. Ыдарай куçарнă.*)

– Ачасем, Мишкăна лăплантарар-ха. Çамкине вĕрсе илетпĕр те, ыратма чарăнать. Пирĕн сурансене аннесем çавăн пек сиплеççĕ мар-и?

Воспитатель упа çурине ачасем патне илсе пырать. Ача упа çурин çамкине вĕрет, упана ачашлать: «Ан çиллен. Çамку текех ыратмасть». Аякран «Мэ-э-э» тени илтĕнет.

– Ачасем, качака путекки макăрнă сасă илтместĕр-и?
– Качака путекки çерем çинче çĕтсе кайрĕ пулинех.
– Качака путекки мĕнле саспа макăрать?
– Çинçе саспа. (*Ачасене евĕрлеттерет.*)
– Амăшĕ вара мĕнле сас парать-ши?
– Çапла, качакан сасси хулăн.

Воспитатель ачасене çакăн пек хулăн саспа качака путеккине унăн амăшĕ пек чĕнсе илме ыйтать. Тетте качака путеккине сĕтел çине кăларать.

В о с п и т а т е л ь. Илтрĕ иккен пире качака путекки, чупса çитрĕ.

М у л к а ч (*савăнса сиккелесе илет*). Мĕн тери лайăх! Эсĕ тĕрĕс-тĕкелех.

В о с п и т а т е л ь (*путеке ачашласа*). Ан хăра путекçĕм, эс çухалман. (*Ачасене те путеке ачашлаттарать.*)

Воспитатель упа çурине алла илсе ăна та «калаçтарать», кайран – качака путеккине те.

У п а  ç у р и. Манран та ан хăра. Акă эпĕ сана йĕкелпе хăналăп.

П у т е к. Тавах, эпĕ ытларах çемçе курăк кăмăллатăп.

В о с п и т а т е л ь (*мукач çине пăхса*). Ну, Тишка, сан тусусем юнашар. Пĕрле выляма та юрать.

Воспитатель теттесене ачасене салатса парать, вĕсемпе выляма сĕнет.

## Теми: «Ятсем»
## Р. Сарпин «Кам-ши эпĕ», С. Прокофьеван «Машукпа Аюкка» хайлавĕсемпе паллаштарни

***Ĕç тĕллевĕ:*** ачасене ятсем çинчен калаçтарасси, хăйсене кам мĕнле чĕннине калаттарасси; çĕнĕ хайлавсемпе паллаштарасси, вĕсене ăнланма пулăшасси; пĕр-пĕринпе хутшăннă чух тимлĕ пулма, кӳрентересрен сыхланма хăнăхтарса пырасси.

### Ĕ ç й ĕ р к и

Воспитатель ачасене хăй тавра пуçтарать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, сире аслисем мĕнле чĕнеççĕ?

Воспитатель аслисем ачасене юратса мĕнле чĕннипе кăсăкланать. Кашни ачана калаçăва явăçтарма тăрăшать.

– Эпĕ сире пĕр сăвă каласа парăп. Ăна чăвашсен çыравçи Раиса Сарпи çырнă. Вăл «Кам-ши эпĕ» ятлă.

**Кам-ши эпĕ?**

Анне мана чĕппĕм тет.
Атте ашкăнчăк эс тет.
Асаннеçĕм ĕнчĕ тет.
Аппа хура курак тет.
Шăллăм витлет: упăте!
Инке путенеçĕм тет.
Кӳршĕри Терен тете
Тыла пуçри тăрна тет.
Эп тăратăп аптраса,
Кам-ши эпĕ чăнласа?..
(*Р. Сарпи.*)

– Ачасем, ас туса юлтăр-и ку хĕр ачана кам мĕнле чĕннине? (*Чĕппĕм, ашкăнчăк, ĕнчĕ, хура курак, путене...*)

– Пĕр ачанах çакăн пек тĕрлĕрен чĕнме пулать иккен! Тĕлĕнмелле вĕт. Мĕнле шутлатăр, ăна апла е капла чĕннин сăлтавĕ пур-и?

– Эпир хамăра тĕрлĕрен тытатпăр çав: ашкăнсан – ашкăнчăк теме сăлтав памаспăр-и вара?

– Тăрна тесе чĕнни хама та шута ярать – тен сăвăри ача тăрна пек утма пĕлет? Ачасем тăрна пек утса кăтартăр-ха.

– Питĕ аван. Эп пĕлнĕ тăрăх, упăтесем питĕ пĕр-пĕрин хыççăн евĕрлеме юратаççĕ. Тен, çак ача та ку енчен маттур. Эпир те выляса пăхар. Ачасем, эпĕ мĕнле хускану кăтартатăп, çавна манăн хыççăн туса пырăр.

Воспитатель ачасене тӗрлӗ хускану кӑтартать, ачасем ун хыҫҫӑн тӑваҫҫӗ. Унтан каллех ларма сӗнет.

– Сире ачана мӗнле чӗнни кӑмӑла кайрӗ?

– Мана та путенеҫӗм, чӗппӗм тени килӗшет. Ку сӑмахсем никама та кӳрентермӗҫ, вӗсене хуть мӗнле лару-тӑрура та итлеме кӑмӑллӑ. Пӗр-пӗринпе хутшӑннӑ май кирлӗ-кирлӗ мар сӑмах персе яма тытӑнса тӑмалла. Ҫапла вӗт? Тантӑша хурлантарасран шикленмелле.

– Ачасем, сирӗн шутпа хӗр ачана Аюкка тесе чӗнме пултараҫҫӗ-и?

– Халӗ эпӗ сире тата тепӗр хайлавпа паллаштарӑп. Вӑл «Машукпа Аюкка» ятлӑ. Ӑна вырӑс ҫыравҫи Софья Прокофьева ҫырнӑ. Аюкка ят мӗнле ҫуралнине, мӗншӗн пӗр хӗр ачана ҫапла чӗнме пуҫланине часах пӗлӗпӗр.

**Машукпа Аюкка**

Пурӑннӑ тет икӗ хӗр ача.

Пӗрне – Машук, теприне Анюк тесе чӗннӗ тет.

Машук пур ӗҫе те хӑй тума юратнӑ. Хӑех яшка ҫинӗ. Тата кӗпи ҫине тумлатас мар тесе турилкке ҫинерех ӳпӗнме те манман. Хӑех пӗчӗк куркаран сӗт ӗҫнӗ. Теттисене те ешчӗке хӑех тирпейлесе пуҫтарнӑ.

Анюк вара нимӗн те тӑвасшӑн пулман. Ялан кутӑнлашнӑ:

– Ай-уй пултараймастӑп! Ай, тӑваймастӑп! Аюк, тумастӑп!

Яланах ай-уй! та ай! тата аюк! Ҫапла вара ӑна Анюк мар, Аюкка тесе чӗнме пуҫланӑ.

(*С. Прокофьева.*)

– Маттур, питӗ тимлӗ итлерӗр. Хӗр ачасене мӗнле чӗннӗ?

– Машукпа Анюк пӗр-пӗринчен мӗнпе уйрӑлса тӑнӑ?

– Ҫапла вара Анюка мӗншӗн Аюкка теме тытӑннӑ?

– Эпир сирӗнпе Машукпа Аюкка ҫинчен татах та вулӑпӑр, вӗсем ҫинчен тепрехинче татах та ытларах пӗлӗпӗр.

## Теми: «Мулкачсем»
## В. Тараватӑн «Ху ӳстер», П. Ялкирӗн «Музыкантпа мулкачсем», Н. Ваҫанккан «Мулкач» хайлавӗсемпе паллаштарни

***Ӗҫ тӗллевӗ**:* ҫӗнӗ хайлавсемпе паллаштарасси; сисчӗвлӗх, тимлӗх туйӑмӗсене амалантарасси; мулкача пулӑшас кӑмӑл ҫуратасси

***Кирлӗ материал**:* тетте мулкач, тӗрлӗ тӗслӗ кӑранташсем, ачасене купӑста ӳкерме хатӗрленӗ хут (воспитатель хутсем ҫине кашни ача валли пахчари пушӑ йӑрансем ӳкернӗ).

### Ӗ ҫ   й ӗ р к и

Воспитатель ачасене аллинчи теттепе илӗртсе калаҫу пуҫлать.

– Ачасем, пӑхӑр-ха, мӗн-ши манӑн алӑра? Ҫак чӗр чуна пӗлетӗр-и?

– Çапла, мулкач. Мĕн тумаллине те пĕлместĕп. Куян макăрманни анчах. Мĕн пулнă тетĕр-и? Юрать, куян мĕншĕн салху пулнине каласа парам.

**Ху ӳстер**

Кунĕпех салху куян:
Купăста çимен паян.
Кишĕр те лекмен ăна.
Пулайман куян хăна.
Хураçка – пахча хуçи:
– Хăр-р-р! – тет, –
Ху ӳстер те çи!
(*В. Тарават.*)

– Мулкачăн кăмăлĕ мĕншĕн пусăрăнчăк пулнине халĕ эсир те пĕлетĕр. Вăл мĕнпе хăналанасшăнччĕ?

– Мĕншĕн «*пулайман куян хăна*»?

– Эх, Хураçка та айăплă мар пуль ĕнтĕ. Ăна пахча сыхлама тăратнă пулĕ. Мĕн тумалла-ши ĕнтĕ?

Воспитатель ачасене мулкача мĕнле пулăшма май пуррине шутлама хистет.

– Мĕнле маттур, эсир. Эпĕ эсир мĕн те пулин шутласа кăларасса пĕлсех тăтăм. Ан кулян, куян тус, кĕçех сана ачасем тутлă купăста сĕнĕç. Кăшт çеç тăхта.

Воспитатель мулкача вырнаçтарса лартать, ачасене малтан хатĕрленĕ хутсене валеçсе парать. Ачасем ӳкернĕ чух вĕсемпе калаçать, калаçăва мулкача та «явăçтарать» – мулкач ачасен ӳкерчĕкĕсене «сăнать», вĕсен пултарулăхĕнчен «тĕлĕнет».

Ачасем ӳкерчĕкĕсене мулкач патне илсе пыраççĕ. Воспитатель ачасен ӳкерчĕкĕсемпе тата мулкачпа вылянă май Н. Ваçанккан «Мулкач» сăввине калать.

**Мулкач**

Тĕмеске те тунката
Нимĕн те мар мулкача.
Карта урлă ялт сикет
Кĕрет каять пахчана.
Пахча тулли купăста
Тĕлĕнтерет мулкача.
Купăстисен пуçĕсем
Шап-шурă та сарлака.
Хăшне çыртса пăхам-ши?
Хăшне татса каям-ши?
(*Н. Ваçанкка.*)

– Ачасем, куртăр-и – мулкач мĕнле хавас. Халĕ вăл çухалсах кайрĕ. Мĕн тет вăл?

– Çапла, «*Хăшне çыртса пăхам-ши? Хăшне татса каям-ши?*» – тет.
– Ачасем, эпир те мулкач пекех савăнар-и?
– Эпĕ сире пĕр сăвă юрласа парам-ха.

Воспитатель ачасене ташлама хавхалантарать. П. Ялкирĕн «Музыкантпа мулкачсем» сăввине янтраттарать, сăвăра калакан инструментсем çинче вылянă пек тăвать.

**Музыкантпа мулкачсем**

Сĕрме купăс эп калатăп –
Пи-ли-ли, пи-ли-ли,
Мулкачсем садра ташлаççĕ –
Пи-ли-ли, пи-ли-ли.

Ак тăмра кала пуçларăм –
Тинкĕлти, тинкĕлти!
Мулкачсем сиксех ташлаççĕ –
Тинкĕлти, тинкĕлти!

Параппан часах янратрăм –
Пăнтăртам, пăнтăртам!
Мулкачсем тарса çухалчĕç –
Пăнтăртам, пăнтăртам!
(*П. Ялкир. П. Воронькоран.*)

2-3 хут выляса илсен воспитатель ачасене мулкачпа сывпуллаштарать. Мулкач ачасене тепĕр хут хăйне пулăшнăшăн тав тăвать.

# ЧĂВАШ АЧА-ПĂЧА ФОЛЬКЛОРĔ ÇИНЧЕН

Воспитателе ***сăпка юрри*** тата ***йăпатмалли сăвă-такмак*** çинчен тĕплĕнрех вуласа пĕлме В.Я. Канюковпа П.Н. Метин пухнинчен (Чăваш халăх сăмахлăхĕ. VI том, I пайĕ. Ача-пăча сăмахлăхĕ. Шупашкар: чăваш кĕнеке издательстви, 1985, С.17–23.) çак материала сĕнетпĕр.

***Сăпка юрри*** тесе пĕчĕк ачасене çывратнă чух (сăпка сиктернĕ чух) йăпатса юрламалли юрра калаççĕ. Халĕ кăкăр ачисене сăпкара сиктерсе çывратас йăла майĕпен пĕтсе пырать пулин те, çывратнă чух лăпкă юрăпа çывратас йĕрке пăрахăçа тухмасть, юрă ячĕ те çав-çавах тытăнса тăрать.

Сăпка юррисене хывакансĕсемпе аталантарса пыраканĕсем – ача амăшĕсемпе ача пăхакан карчăк-кинемейсем. Вĕсене кура ку юрăсене шăллĕ-йăмăкĕсене пăхакан ачасем те, ытларах хĕр ачасем, юрлаççĕ. Сăпка ачисем те, çитĕнсе сăмахсене ăнланма-калаçма вĕренсе пынă май, харпăр хăй тĕтăш илтекен юрра часах хăнăхаççĕ

Сăпка сиктернĕ чух халĕ те çĕнĕ юрăсене шутласа кăларни пулкалать, анчах сăпка юррисем, тĕпрен илсен, авалтанпа пурăнаççĕ. Сĕм-авал çын ыйха чĕрĕ тесе шутланă. Унăн ăсĕпе, пур ырăсемпе усалсем те, вĕсемпе пĕрле ыйхă та, таврари этем пекех чунлă, чĕрĕ çӳренĕ. Вăл килме, кайма, вĕçме пултарнă. «Ыйхă килчĕ», «ыйхă пусрĕ», «ыйхă вĕçрĕ» тетпĕр эпир авалхи мăн асаттесем хыççăн. Авалхи çын шучĕпе, ырăсене йыхравпа, пĕлсе каланă сăмахпа чĕнсе илме пулнă имĕш. Ыйха та çывăрма выртнă ача патне килме йыхăрнă, ачапа пĕрле канлĕн выртма, ăна çывăратма, сывлăх пама чĕннĕ. Çапла пуçланса кайнă сăпка сăвви-кĕввисем.

Сăпка юррисенче халчченех авалхи йыхрав сăввин хăш-пĕр кукрисем упранса юлнă. Тĕслĕхрен каласан, сăпка юррисем тăтăшах çапла пуçланаççĕ: «Ачине-паппине», «А-ăх, ă-ăх, ачине-паппине...», «Нянине-паппине...» Çак сăмахсене юрăра темиçе те асăнаççĕ. Ку ĕнтĕ пӳрте, сăпка таврашне килнĕ ыйхă («паппа») ачана халал пултăр тенийĕ пулнă. Юрă ачана ыйхă сунать, ыйхине те, ачине те пĕрле «лăштăн-лăштăн ярăнма, шăппăн-шăппăн çывăрма» хушать.

Каярахри тапхăрта, фольклорăн чылай жанрĕсем ăшри туйăма илемлĕхпе палăртмалли мел кăна пулма тытăнсан, сăпка юррисен сăввисене çĕнĕ сăнарсем, пепкене кăмăллă урăх йышши сăмахсем те кĕме пуçланă.

Сăпка юррисен тĕп тĕллевĕ – ачана ачашласа лăплантарасси. Акă мĕншĕн вăл юрăсен сăмахĕсем çепĕç, сăнарĕсем кăмăллă, кĕвви лăпкă, вăрах çемĕллĕскер. Итленĕ майăн сăпка юрри канлĕх кӳрет.

Калăпăшĕпе сăпка юррисем пысăк мар, час-часах вĕсем пĕрер çаврăмшар

кăна, итлекен ача ăс-пуçне шăнăçма çăмăлскерсем. Сăнарсем те унта пеп-кене çывăхскерсем: амăшĕ çывăрма выртнă ачи ятне асăнать, ăна ачашласа «папак», «пепке», «няни» тет, ача чĕлхипе пуплешет – «паппа ту» е «паппине-паппине» тет. Канлĕн ярăнса выртнине астутаракан сăмахсем юрăра çине-çинех илтĕнеççĕ.

Тĕп шухăшĕпе сăпка юррисем ачана сывлăх, телей, ăраскаллă пурнăç сунаççĕ. Вĕсем канлĕ çывăрма, маттур та çăмăл ача пулма, «йăлт-ялт сикме», тăппи-таппи çӳреме, çунатланса «вăштăн-вăштăн вĕçтерме» йыхăраççĕ. Шухăшне май ун пек чухне кĕвви те хавас, вичкĕн тухать. Хавас сăнлă сăнарсем çывăрма выртнă ачана илĕртсе йĕрмешсе-йĕресрен пăраççĕ, ăна ырă кăмăл кӳреççĕ.

Ача сиктернĕ чухне юрлакан юрăсенчи чи паха сăнар – сăпка. Ача сăпкине чăвашсем авалтан питĕ юратса хатĕрленĕ. Сăпка ырă та канлĕ пулсан, ача та сывлăхлă пулать тенĕ вĕсем. Çавăнпа ăна пули-пулми хупран мар, ама хуп тенинчен, виççĕн юнашар ӳсекен çăка тупса, варринчин хупĕнчен тума тăрăшнă. Чăваш сăпкана теттесемпе илемлетме, тирпейлĕ тытма тăрăшать, упрать, пушăлла сиктертмест. Юрăсенче сăпка чи паха эпитетсемпе тан-лаштару вырăнне тăрать («Атте-анне çурчĕ – ылтăн сăпка...»).

Çывăрма выртнă ача юрăри сăнарсем урлă сăпкана мĕнрен тунине те, ăна мĕнпе витнине те, мĕнле илемлетнине те, хăйĕн çипуçĕ мĕнлине те илтме пултарать. Сăмахĕсем пĕр пек илемлĕн янăраççĕ (ку юрăсенче сасăсен янăравĕ уйрăмах килĕшӳллĕ).

Сăнарсем ачана сăпкаран аяккарах та ертсе тухаççĕ: юрăсенче вăл хăйĕн тусĕсемпе – кайăксемпе, чĕр чунсемпе паллашать, хăйĕн çывăхĕнчи ял ячĕсене илтет, юратнă амăшĕ ача-пăчана асăнса юрлакан эпитетсемпе сăнарлă тан-лаштарусене тăнлать. Юрă ăна пĕчĕклех кил-йыш ĕçпе пурăнни çинчен асту-тарса тăрать: тутлă çиме юратакан ачан «ашшĕ кайнă пасара, амăшĕ кайнă çырлана», теприне кил-çурта шуратса илемлетмелли шурă тăм çинчен те, ашшĕ сурăх çăмĕнчен кăçатă пустарни çинчен те, амăшĕ ывăлĕ валли ăшă чăлха çыхтарни çинчен те юрласа кăтартаççĕ. Хресчен ачи çапла мĕн кĕçĕн-ренех пурнăç ĕçпе çыхăннине тавçăрса пырать.

Чăвашсем сăпкари ачана йăпатса хавас кăмăл кӳмешкĕн шӳт сăмахĕпе усă кураççĕ. Шӳтлĕ юрăсем хушшинче ачаран е ашшĕ-амăшĕнчен килпетсĕрте-рех сăмахсемпе тăрăхланисем те тĕл пулаççĕ. Хăш чухне вĕсем ачасем хуш-шине те сарăлаççĕ, çапах вĕсене чăваш ача-пăча фольклорĕн паха тĕслĕхĕсем шутне кĕртме çук...

***Йăпатмалли сăвă-такмак.*** Сăпка ачине ашшĕ-амăшĕпе çитĕннĕ ачасем çывратмалли юрăсемпе çех мар, ыттипе те йăпатаççĕ. Ыйхăран вăрансан-и, выляса выртнă чух-и, çитерме ларсан-и е йĕме тытăнсан-и – кирек хăçан та ăна йăпатмашкăн сăвă-такмак хатĕр. Ача çитĕнсе тĕрекленме, ура çине тăма,

сăмах-юмаха ăнкарма тытăннăçемĕн сăвă-юрă хушăнсах пырать: ташлат-тармалли, уттармалли, «утьăкка» сиктермелли, пӳрнесемпе вылямалли, хисепсене шутламалли, эрне хушшинчи кун ячĕсене вĕренмелли, ахальтен – илемшĕн кăна такмакламалли те.

Ачан ӳсĕмĕпе – çул шучĕпе пăхсан, ку такмаксем «сăпкари пурнăçăн» иккĕмĕш тапхăрне тивеççĕ; анчах хăшпĕр тĕслĕхсем (ансат вăйă такмакĕ, мунча такмакĕ) ун хыççăн та пăрахăça тухмаççĕ-ха.

Хăйсен тытăмĕпе йăпатмаллисем юрăсенчен урăхла. Вĕсене юрласа мар, ытларах такмакласа калаççĕ. Кĕвве-çемме кунта тикĕс виçеллĕ такмак янăравĕ кӳрет.

Тытăм тĕлĕшĕнчен пăхсан, йăпатмаллисене икке пайлама пулать: пĕрисем – пуплешӳ-такмаксем, теприсем – сăвă-такмаксем. Ку икĕ ушкăн пĕр-пĕринчен уйрăмах мар пулин те, пуплешӳ-такмак тенисене (сăмахран, ача карăннă чух тата йĕнĕ чух ачашламаллисене, пӳрне ячĕсене, «пӳрнесем калаçнине», пӳрне шутламаллине, кун ячĕсене) сăвăран уйăрмалла. Чылай чухне сăвă пекех çемĕллĕ, сайра хутра рифмăллă та пулаççĕ вĕсем, çапах пĕтĕмĕшпе сăвă картне лармаççĕ...

Йĕрекен-макăракан ачана, ним тăвайман енне кайсан, усал-хăрушă сăнар-семпе хăратни те пулкаланă. Ун пеккисенчен чи хăрамалли пур ачасемшĕн те – мукка. Мĕнле тискер чĕрчун-ши вăл, хăш ача мĕнле сăнлă курать-ши ăна?

Хăратнинчен ытларах такмаксенче ачана ырăпа илĕртсе йăпатаççĕ. Çакăнта халăх педагогикин паха енĕ питĕ вичкĕн палăрса тухать.

Чăт, чăкăт парăп,
Ан шарла, аш парăп...

***

Ан йĕр, ачам, ан йĕр,
Паппа ту, тӳттӳ парăп.

Çак икĕ пĕчĕкçĕ такмак пур енчен те паха тĕслĕх: шухăша унта лăпкăн та йăвашшăн, пачах хирĕçлеме май çукла каланă; сăнарсене ахальтен, сăмах çаврăнăшĕн илемĕшĕн кăна кĕртсе лартман, ырă ĕçшĕн ырă пуласса шантарса каланă; сăнарсем куçкĕрет тухса тăраççĕ; çавна пурне те такмаксенчи сăмах-сем сасăсен янăравĕпе пĕрпекленсе илтĕнни чĕрĕ сĕм парать.

Йăпатса каланă сăмахсенче çутă сăнлă сăнарсем тĕпре. Макăракан ачана: «Хĕвел пăхать, ай, хĕвел пăхать ĕнтĕ!» – теме тытăнаççĕ, ача, чăнах та, йĕме чарăнать.

Йăпатмалли такмаксенчи сăнарсем ушкăнлă туслăх тата пĕрлĕхлĕ ĕç шухăшлĕ. Унта куракпа чĕпписем пĕрле апат пĕçерессĕ, пĕрле çиессĕ, савăнаççĕ, чакак апат пĕçерсен, кам ĕçлекене çитерет, кам ĕçлемене кашăк та памасть, пыл çиме ларнă ача тусĕсене хăнана йыхăрать. Сăвăсенчи çак шухăшсене ача-пăча питĕ килĕштерет – мĕн тĕрĕс, çавă унпа пĕртăван-çке!

Ача урипе пусма тытăнсанах, ăна сăвă-такмак каласа «утьăкка» сиктереççĕ, чĕрçи çинче ташлаттараççĕ. Утьăкка-ташлату такмакĕсене ача ахаль сăвă пек çех илтмест, ăна вăл пĕтĕм чунĕ-кĕлеткипе йышăнать, хăйĕн хусканăвĕсемпе çураçуллă çыхăнтарать – поэзи этем ăшне кĕрет. Ку сăвăсем хавас кĕвĕллĕ. Çемĕ тапса тăрать, сасăсем ян-ян янăраççĕ. Хавас кĕвве шӳтлĕ сăнарсем пит çывăх, çавăнпа утьăкка сăввисем тăтăшах шӳтлĕ. Çапах ачана ырă сунас кăмăл-шухăш кунта та тĕпе ларать...

Йăпатмалли такмаксем ача-пăчана вăйă-кулă енне çавăраççĕ. Алли-урипе хăлаçланса выртакан ачана сăвă-юрăпа усă курса хусканусем тума вĕрентни е çиме ларнă ачана йăпатни т. ыт. те вăл сисмен хушăрах вăйăлла пулса иртет. Хушăран ăна урамра ачасем вылякан вăйă юррисене те юрлакаласа кăтартаççĕ, сăмахран, «Кăшман юррине». Ку юрă пĕчĕк ачана ăнланма питĕ меллĕ, мĕншĕн тесен юрланă май ăна хусканусемпе кăшман шăварнине, çумланине, кăларнине туса кăтартаççĕ. «Кăшманĕ» те кунта – ачи хăех, «шăварни-çумлани» ăна ачашланиех пулса тухать.

Йăпатмаллисем шутне ятарласа пӳрнесемпе вылямалли ансат вăйăсем – пӳрне вăййисем кĕреççĕ. Пĕчĕк ача хăйĕн алă пӳрнисене тыткаласа пăхма питĕ юратать. Çавăнпа усă курса, ача пăхакансем ăна тĕрлĕрен вăйă выляттараççĕ: пӳрнесене ят хураççĕ, вĕсене «калаçтараççĕ», «мăйрака» туса сĕкĕштереççĕ т. ыт. те. Ку вăйăсен тĕп тĕллевĕ – япалана сăнарлă курма вĕрентесси, кĕвĕллĕ сăмахпа хусканусене килĕштерсе пыма хăнăхтарасси.

Чăвашсем пӳрнисене ят хурса ачисене выляттарасси сĕм-авалтанах пуçланса кайнă пулас. Авал чăвашсем хутшăнса пурăннă тĕрĕк халăхĕсен (тутарсен, кăркăссен, алтай тăрăхĕнчи халăхсен, урянхайсен, телеутсен, теленгитсен т. ыт. те) çавнашкал йĕрке пурри çавăн çинчен калать те ĕнтĕ. Пӳрне ячĕсем те чăвашсен çав халăхсеннипе пĕр евĕрех.

Асăннă тĕрĕк халăхĕсен ачисем выля-выля калакан пӳрне ячĕсене танлаштарса пăхсан, халĕ чăвашла ăнланма çук пек туйăнакан сăмахсемех ăнланмалла пулса тухаççĕ. Авалхи чăвашсем пӳрнесене хăш чухне ачасемпе, тепĕр чухне йывăçсемпе те тата паттăрсемпе танлаштарнă иккен: «палан ӳте», «у(р) те тирек» тенисене пĕр такмакра иккĕмĕш ача тата вăта ача тесе ăнланмалла («бала» – ача), тепĕр такмакра, – палан йывăççи, вăта тирек (тополь) йывăççи темелле; «паш пӳрне», «пас пурне», «баш баттыр» – пуç пӳрне, аслă паттăрĕ; «качи папак» – кĕçĕн ывăл, пĕчĕк ачи. Ытти такмаксенче пуç пӳрнене пăрăспа танлаштараççĕ, вăта пӳрнене тĕрекки теççĕ, ятсăрри – яр пӳллĕ яштака каччă. Хăш чухне ăна юмахсенчи хăрушă хăвата пĕлтерекен «сĕм-сĕмеккĕм» сăмахпа та асăнаççĕ: «Сĕм-сĕмеккĕм, сĕмеккĕм, çав карчăка çи!..»...

Çапла вара пӳрне такмакĕсенче авалхи чăваш сăмахĕсем упранса юлнă та халĕ те пурăнаççĕ. Каярахри тапхăрта хывнă такмаксем те пур. Кусенче сăмахсем ăнланмаллисемех. Сăмахран, шӳтлĕ такмакра пӳрнесенчен пĕри –

пукан пичче, тепри – тӳнтер тӳре (чиновник, пуçлăх), виççĕмĕшĕ – вăрăм вăртах, тăваттăмĕшĕ – ятсăр ятак (çĕрсĕр, шăпасăр юлнă хресчен), кача пӳрни – каçăр качака. Такмакра пӳрнесем çын ячĕсемпе те çӳреççĕ.

Пӳрнесене «калаçтармалли» вăйă та чăвашсен çав тĕрĕк халăхсеннипе пĕр пек. Ку текстсем те авалтанах пыраççĕ пулас. Вĕсен калаçăвĕнчен сюжетлă та шӳтлĕ пĕчĕкçĕ произведени пулса тухать: аслисем кашни харпăр хăй хуйхисуйхи çинчен калаççĕ, кĕçĕннин (айваннин) пĕр хуйхă – çиес те тарас, ĕçес те тарас!

Пӳрне вăййисем ача-пăча тавракурăмне анлăлатас тĕлĕшрен питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ – вăйăсемпе усă курсах ачасене япала хисепне астуса юлма, шутлама вĕрентеççĕ. Шутлама-сума вĕрентекен вăйă-такмаксем йышсăр мар. Вуннă таран шутлама вĕрентекеннисене кашни хисеп ячĕ çумне пĕрер çын ячĕ е ял ячĕ хушса пынипе янăравлă тата астуса юлмалла хываççĕ.

Вăйă мелĕпех, сюжет хывса, эрне хушшинчи кун ячĕсемпе паллаштарма та, ӳрĕк-сӳрĕкрен тăрăхлама та пулать пккен. Кунашкал такмаксем ача ăсне ахаль сăмахпа тӳрремĕн вĕрентсе каланинчен çивĕчрех те витĕртерех вырнаçаççĕ.

# КĔÇĔН УШКĂНРА ПАЛЛАШТАРМА СĔНЕКЕН ХАЙЛАВСЕН ТĔСЛĔХĔСЕМ

***Чăваш литературинчен***

**Иван Яковлевич Яковлев**
**(1848 – 1930)**

## Автан

Пирĕн пĕр пысăк хĕрлĕ автан пур. Вăл тăр кăнтăрла урапа çине хăпарать те: «Кикки-ри-ку!» – тесе авăтать. Сасси аван, хӳри илемлĕ, авăна-авăна тăрать. Киккирики пысăк, тĕклĕ ураллă, качи вăрăм.

Сирĕн автан çапла-и?

## Чăлха çыхни

Эпĕ пĕчĕкçĕ чухне пĕрре анне пуçланă чăлхана çыхма тытăнтăм. Çыха пĕлмесĕр çиппине пĕтĕмпе чăлхантарса пĕтертĕм.

Анне çакна курчĕ те:

– Ачам, малтан çыхма вĕрен-халĕ, унтан тин çыхтарăп, – терĕ.

## Уçăлма тухнă шăши

Пĕр шăши çури шăтăкĕнчен уçăлса çӳреме тухнă тет. Çӳресен-çӳресен амăшĕ патне таврăнчĕ тет те:

– Ах, анне, эпĕ икĕ кайăк куртăм-çке! Пĕри пит аван, тепри тискеррипех тискер ĕнтĕ! – тесе калать тет амăшне.

– Мĕнле кайăксем вĕсем апла, – тесе ыйтрĕ тет амăшĕ.

– Тискерри картишĕнче ак çапла уткаласа çӳрет-çке!.. Хăй хура уралла, хĕрлĕ çĕлĕклĕ, куçĕсем сиксе тухас пек, сăмси кукăр! Эпĕ ун патĕнчен иртсе пынă чухне хăрах урине çӳлелле çĕклерĕ те çăварне карса пăрахрĕ, унтан кăшкăрса ячĕ-çке! Хăранипе ниçта кайса кĕме пĕлмерĕм çав.

– Вара, ачам, автан-çке вăл! Унтан мĕн апла тĕрлĕ хăрасси пур! Унтан пире ним усалĕ те çук. Тепри тата мĕнлеччĕ?

– Тепри хĕвел ăшшинче ăшăнса выртатчĕ. Хăй шурă мăйлă, яп-яка, сăрă уралла. Шурă ăмăрне çулакаласа выртатчĕ. Хӳрине хăй кăшт вĕл-вĕл сиктеркелет. Ман çине куçне пĕр илмесĕр пăхать.

– Эх, айван, айван!.. Вара, ачам, вăл кушак аçи вĕт!– тесе каларĕ тет амăшĕ çурине.

Пăхма хăйсем хĕвел пек, ăшĕ-чикки хура юн тени çав ĕнтĕ.

## Егор Афанасьев
## (1922 – 1980)

### Виçĕ тус

Урине, Кентти, Илюк –
Вĕсем пек тусли, тен, çук:
Урамра, сад пахчинче,
Улăхра, çаран çинче

Уйрăлми çывăх туссем,
Яланах пĕрле вĕсем.
Çавăнпа та пуль вĕсен
Пит хаваслă вăййисем.

### Мĕншĕн?

– Эс пĕлетĕн-и, Çеруш,
Эс чухлатăн-и, Çеруш?
Мĕн пирки-ши çулсерен

Мулкач шурă, юр ӳксен?
– Çук, пĕлместĕп, каласам...
– Юр çиет вăл, хĕл ларсан...

### Çĕнĕ йĕрпе

Лăпăс-лăпăс шур юр çурĕ
Ак çапла!
Анчăк сикрĕ те йĕр турĕ
Ак çапла!
Вăл мана тухма чĕнет
Ак çапла.
Мĕн сĕнксе ларатăн, тет
Ак çапла.
Тухрăм эпĕ йĕлтĕрпе
Ак çапла.
Ыткăнатăп кив йĕрпе
Ак çапла.
Ма ун тăрăх каймалла
Ак çапла?
Манăн хамăн хывмалла
Ак çапла!
Эп пăхатăп çаврăнса
Ак çапла.

Юлать çĕн йĕр тăсăлса
Ак çапла.
Умăмра ман вар хĕрри
Ак çапла.
Ну, Япшар, сикетпĕр-и?
Ак çапла?
Тапрăм, ятăм туяпа
Ак çапла!
Ӳкрĕм – пултăм шур упа
Ак çапла.
Туртать анчăк аркăма
Ак çапла!
Тăрăп, тетĕп эп хамах
Ак çапла!
Тухăр, тухăр ярăнма
Ак çапла!
Эх, аван çĕн йĕр хывма!
Ак çапла!

## Борис Борлен
## (1934 – 2013)

### Куян

– Эп пуян, – тет куян, –
Кишĕр тупрăм паян.
Çийĕр, – тет çурисене, –
Шĕвĕртсе шăлăрсене.

### Ташă ăсти

Линка-линка ташламашкăн
Тантăшăм хистерĕ,
Лайăх кĕвĕ, çăмăл çемĕ
Кăмăла çĕклерĕ.

Линка-линка...
Кам-ха урăх
Ман пекех пултартăр?

Çепĕç юрă, савăк юрă
Таврана салантăр.

Линка-линка ташламашкăн
Капăр тум та кирлĕ:
Асанне тухъя парасшăн,
Кĕпине хам тĕрлĕп.

## Николай Васильев (Ыдарай)
## (1925 – 2005)

### Хур чĕпписем

Хур чĕпписем урамра
Курăк пуçне сăхаççĕ.
Ашшĕ-амăш хуралта
Ялан сыхă тăраççĕ.

### Хураçка

– Эй, Хураçка, Хураçка, .
Эс ытла та хура-çке?
– Çĕрле хурал тăнă чух .
Хура тумăм питĕ чух.

### Йытă

– Каласа парсамччĕ, йытă,
Ма вĕретĕн питĕ хытă?
– Хам-хам-хам-хам!
Хăрататăп кашкăра!

– Каласа парсамччĕ, йытă,
Ма чĕтретĕн питĕ хытă?
– Хам-хам-хам-хам!
Хам хăратăп кашкăртан.

### Автобус

Авă килет, авă килет
Аслă çулпа автобус,
Автобуспа ларса килет
Авăк хӳре – Автан тус.

Акă çитрĕ, акă çитрĕ
Аслам тĕлне автобус,
Автобусран анса юлчĕ
Авăк хӳре – Автан тус.

### Шурă акăш

Шывĕ юхать,
Шывĕ юхать,
Шывĕ юхать шурă-шурă чул çинчен.
Хумĕ вылять,
Хумĕ вылять,
Хумĕ вылять ешĕл çыран хĕррипе.
Вĕçрĕç килчĕç,
Вĕçрĕç килчĕç,
Вĕçрĕç килчĕç, шурă акăш чĕпписем.

Вăй вылярĕç,
Вăй вылярĕç,
Вăй вылярĕç, çутă-çутă хум çинче.
Вĕçрĕç кайрĕç,
Вĕçрĕç кайрĕç,
Вĕçрĕç кайрĕç, хуралса та хурланса.
Хăмăш юлчĕ,
Хăмăш юлчĕ,
Хăмăш юлчĕ, хумханса та юрласа.

### Çумăр хыççăн

Çумăр хыççăн
Мĕн пулать, мĕн пулать, мĕн пулать?
Лупашкана шыв тулать, шыв тулать, шыв тулать.
Шыв тулсассăн мĕн пулать, мĕн пулать, мĕн пулать?
Кимĕ яма чух пулать, чух пулать, чух пулать.
Кимĕ ярсан мĕн пулать, мĕн пулать, мĕн пулать?
Çамрăк халăх савăнать, савăнать, савăнать.

## Никифор Ваçанкка
## (1903–1976)

### Кăсăя

– Чи-чи кăсăя, кăсăя,
Шыв кӳрсемччĕ, кăсăя.
– Эп хăратăп кашкăртан,
Эп хăратăп упаран.
– Шыв кӳрсемччĕ, кăсăя,
Кашкăр халĕ шурлăхра,
Упи кайнă сунара.

## Илле Тукташ
## (1907 – 1957)

### Чĕрĕп чĕппи хăнаран таврăнни

Пĕчĕк чĕрĕп чĕппи куккăшĕсем патне хăнана кайнă. Куккăшĕсем ăна пĕр пĕчĕк хутаçпа кучченеç парса янă. Киле килнĕ чух, çурма çула çитсен, сасартăк шарлаттарса çумăр çума пуçлать. Чĕрĕп чĕппи хутаçне пĕчĕк тĕмеске çине хурать те хăй ватă юман çумне ларать. Çумăр чарăнасса кĕтсе ларать-ларать те çывăрах каять çак юман хӳтлĕхĕнче.

Нумай çывăрать-и чĕрĕп чĕппи, сахал çывăрать-и, вăрансан пăхать, – кучченеç хутаççи таçта çухалнă. Тытăнать шырама. Шырать-шырать, ниçта та тупаймасть. Вара килне куккăшĕн кучченеçĕсĕрех йĕрсе таврăнать.

– Ма йĕретĕн, ывăлăм? – ыйтать кунран амăшĕ.

– Кукка кучченеçне çухатрăм,– тет ку, сăмсине нĕшлеттерсе.

– Ăçтарах хурсаттăн ара?– ыйтать амăшĕ.

– Юман çывăхĕнчи тĕмеске çине хутăм та çывăрса кайрăм. Вара такам вăрласа кайнă.

Чĕрĕп чĕппипе амăшĕ кучченеçе шырама тухса каяççĕ. Хайхисем юман патне пырса çитеççĕ. Пăхать чĕрĕп амăшĕ – хăй ывăлĕн хутаççи пĕр пысăк кăмпа тăрринче выртса парать.

– Эх, айван,– тет вăл ачине,– тĕмеске çине мар, кăмпа çине хунă вĕт эс хутаçна.

– Çук, пĕчĕкçĕ тĕмеске çине хунăччĕ,– тавăрать ку амăшне хирĕç.

– Вăл тĕмеске мар, кăмпа пулнă. Эс çывăрнă хушăра çумăрпа ӳссе кайнă,– ăнлантарса пачĕ амăшĕ.

Чĕрĕп чĕппипе амăшĕ кучченеç хутаççине кăмпа çинчен илчĕç те савăнăçлăн киле таврăнчĕç.

### Чăпар чăхпа чĕпписем

– Кăлăк-к... кăлăк-к... кăлăк-кăлăк!... – тесе çӳрет чăпар чăх кил хушшинче.

– Шип-шип-шип... Шип-шип-шип!.. – шиплетсе утаççĕ ун хыçĕнчен чĕпписем.

Чăпар чăх тислĕк купи тĕлне çитрĕ те, чĕпписем валли хурт-кăпшанкă тупас тесе, чаваланма пуçларĕ. Сирпĕтет те сирпĕтет урисемпе тислĕке. Çапла чаваланса шалт варланса пĕтрĕ.

Пăхаççĕ пĕчĕкçĕ чĕпписем – хăйсен амăшне хăйсем те паллаймаççĕ.

– Шип-шип, шип-шип, ăçта кайрĕ пирĕн анне, ăçта кайрĕ пирĕн анне? – шиплетсе çӳрет хăраса ӳкнĕ чи пĕчĕк чĕппи.

– Шип-шип, ак кунта, шип-шип, ак кунта! – тет пысăкраххи, кил хушши варринче выртакан тимĕр кăмака мăрйи ăшне кĕрсе кайса. Кун хыççăн ыттисем те, амăшне шыраса, хăрăмлă тимĕр кăмака мăрйи ăшне пыра-пыра

кӗреççӗ. Пӗр пуçӗнчен сап-сар пырса кӗреççӗ те тепӗр пуçӗнчен хуп-хура пулса тухаççӗ.

Чăпар чăх тислӗк ăшӗнчен пӗр ăман чаваласа кăларчӗ. Чӗպписене йыхăрма пуçларӗ

– Кăтик-кăтик, чӗппӗмсем!  Кăтик-кăтик, чӗппӗмсем! – тесе йыхăрать.

Чӗպписем чупса çитеççӗ, анчах амăшӗ хăй чӗպписене палласа та илеймест.

– Ăçта çухалчӗç ман чӗппӗмсем? – тесе тӗлӗнет.

Çак самантра шарлаттарса çумăр çуса ячӗ те, чăпар чăхăн чӗպписем каллех сар ука пек сап-сарă пулса тăчӗç. Чăпар чăх вӗсене палласа илчӗ те ăманне таткаласа çитерчӗ, унтан çуначӗсем айне пухса лартрӗ.

**Мария Волкова**
**(1933 – 1976)**

### Самолет

Атте мана илсе пачӗ
Ик моторлă самолет.
Кӗмӗл тӗслӗ ун çуначӗ,
Варринче – маттур пилот.
Самолет, самолет!
Пулăп эп хамах пилот.

Хăпаратăп сак çине,
Çавăратăп моторне.
Мотор сасси кӗр-кӗр-кӗр!
Часрах сарса ӗлкӗрӗр!
Çитес çӗре çитӗпӗр,
Тем те курса пӗлӗпӗр.

**Александр Галкин**
**(1928–2002)**

### Карап

Карап турăм эп хамах,
Капитанӗ те хамах.
Тинӗс тем тӗрлӗ урсан та,
Шикленместӗп нихăçан та.

**Денис Гордеев**
**(1938)**

### Шар пек уйăх

Ăшă каçсенче хӗрне
Ашшӗ уçăлма чӗнет.

– Мӗн ку? Ку мӗн? Ку тата? –
Аптратать хӗрӗ, ыйтать.

Хурăн хыçӗпе шуса
Тухрӗ уйăх, тăп тулса.

– Пысăк шар! Атте, хăçан
Кун пек шар илсе паран?
Ай епле хитре ку шар!

– Хӗрӗм, уйăх ку, шар мар.
– Уйăх? Уйăх та нихçан
Эс мана илсе паман.

## Васлей Давыдов-Анатри
## (1917–2010)

### Илтĕм эп кушак валли
(*П. Воронькоран*)

Илтĕм эп кушак валли
Урине тăхăнмалли.
Эп якатрăм мăйăхне,
Çĕлеттертĕм кĕпине.
Ах, мĕнле тăхăнтарас,
Хӳрине ăçта хурас?

### Куян

Сикрĕ тухрĕ вăрмантан
Пĕр куян,
Пăхкаларĕ унталла,
Кунталла.
Йăпшăнчĕ вăл майĕпен
Юр çумне,
Пытанасшăн çынсенчен
Кĕрт ăшне.

### Кăсăя

Пирĕн килте, читлĕхре,
Пĕр кăсăя пурăнать.
Вăл тухасшăн хушăкран,
Анчах хăрать кушакран.

### Качака

Кача ура качака,
Икĕ вăрăм мăйрака,
Кĕрсе кайнă чăлана,
Тăкса янă хăймана.

## Николай Думков

### Тĕлĕнӳ

Пирĕн ача кĕпинчен
Кĕрен чечек тĕлĕнет:
– Çак сăпкари сар ачан
Кĕпи ытла хитре, – тет.
– Чăнах-и?
– Чăн, ара.
Пирĕн ача куллинчен
Савăк хĕвел тĕлĕнет:
– Çак сăпкари сар ачан
Кулли ытла хитре, – тет.
– Чăнах-и?
– Чăн, ара.
Пирĕн ача сассинчен
Садри кайăк тĕлĕнет:
– Çак сăпкари сар ачан
Сасси ытла хитре, – тет.
– Чăнах-и?
– Чăн, ара.
Пирĕн ача чуппинчен
Тĕкĕлтура тĕлĕнет:
– Çак сăпкари сар ачан
Чуппи ытла тутлă, – тет.
– Чăнах-и?
– Чăн, ара.

### Кайăксем

Ан йĕр, пепкем, ан йĕрех,
Ăсан килĕ кĕçĕрех:
Илсе килĕ теттесем –
Ешĕл симĕс мерченсем.
  Ах, мерченсем!..
Ан йĕр, пепкем, ан йĕрех,
Ăсан килĕ кĕçĕрех:
Илсе килĕ теттесем –
Ешĕл симĕс мерченсем.
  Ах, мерченсем!..
Ан йĕр, пепкем, ан йĕрех,
Пăчăр килĕ кĕçĕрех:
Илсе килĕ теттесем –
Пиççе çитнĕ çырласем.
  Ах, çырласем!..
Ан йĕр, пепкем, ан йĕрех,
Утăк* килĕ кĕçĕрех:
Илсе килĕ теттесем –
Тĕрлĕ тĕслĕ чечексем.
  Ах, чечексем!..
Ан йĕр, пепкем, ан йĕрех,
Ыйхă килĕ кĕçĕрех:
Илсе килĕ теттесем –
Тĕлĕнтермĕш тĕлĕксем.
  Ах, тĕлĕксем!..
(*утăк – улăх кайăкĕ)

## Николай Зайцев
## (1942)

### Çывăх тус

Кил-ха терĕм, кил-ха терĕм,
Кил-ха терĕм, Автан тус,
Пул-ха терĕм, пул-ха терĕм
Çак ачапа çывăх тус.
  Автан килес темерĕ –
  Йытă патне кай терĕ.

Кил-ха терĕм, кил-ха терĕм,
Кил-ха терĕм, Йытă тус,
Пул-ха терĕм, пул-ха терĕм
Çак ачапа çывăх тус.
  Йытă килес темерĕ –
  Кушак патне кай терĕ.

Кил-ха терĕм, кил-ха терĕм,
Кил-ха терĕм, Кушак тус,
Пул-ха терĕм, пул-ха терĕм
Çак ачапа çывăх тус.
  Кушак мана итлерĕ –
  Килсе сăпка силлерĕ.

## Александр Ильин
## (1945)

### Машăпа автан

– Куккурук-кук ! мĕн тени?–
Ыйтрĕ пĕчĕк Маша.
– Вăл пире ыр кун сунни, –
Ăнлантарчĕ ашшĕ.
– Апла эпир те ăна
Ыр сунса илер-и?
Маша хăй те автана:
– Куккурук-кук, – терĕ.

### Кулинепе упа

– Упа тус, упа тус,
Ăçтан ирех таврăнан?
– Ял çумĕнчи вăрмантан.

– Упа тус, упа тус,
Чĕресӳ ма йывăр сан?
– Пыл нумай тултарнăран.

– Упа тус, упа тус,
Нумай пылпа мĕн тăван?
– Хăналап ачасене.

– Упа тус, упа тус,
Халь ăçта вара баскан?
– Сирĕн яла, Кулине.

## Георгий Ирхи
## (1949 – 2010)

### Ăстаçă

Пан улми эп ӳкеретĕп –
Сар сăрпа...
Хĕрли ăçта?
Анис евĕр пултăр тетĕп.
Ăста мар-им эп?
Ăста!
Хĕрлĕпе улма сăрланчĕ,
Пиçсе çитнĕ пек тинех.
Аттепе анне сăйланччăр, –
Татса парăп килсенех!

## Николай Ишентей
## (1953)

### Чуччу кашти хурама

– Чу-чу!
– Чу-чу!
Чуччу кашти хурама,
Пурте тухăр урама.
Чуччу кашти авăнсан
Ярăнма тата аван.

– Чу-чу!
– Чу-чу!
Анне – ачаш тăвакан,
Атте – чуччу тăвакан.
Ан шикленĕр ярăнма –
Хуçăлас çук хурама.

## Николай Карай
## (1942)

### Олеҫпе кушак

Олеҫ шурӑ кушакне
Лартнӑ та пукан ҫине,
Пӳрнипе юна-юна
Пикенсе вӑрҫать ӑна:
«Кайӑк тытнӑ – ҫын кулли.
Ара хамӑр кӗлетре
Шӑши ҫук-им сан валли?»
Леш ӑнланнӑ пек ларать. –
Олеҫе куҫран пӑхать.

### Пуканесем

Ман ҫире те сараппан,
Пуканен те сараппан.
Вӑл та,
Эп те тутӑрпа.
Вӑл та,
Эп те пушмакпа.
Тӗлӗнсе ҫынсем тӑраҫҫӗ, –
Аннерен вӗсем ыйтаҫҫӗ:
– Вӑл та,
Ку та пукане, –
Ӑҫта сирӗн
Марине?

### Автан

– Кунсерен ӳссе пыратӑп, –
Эп ӳссен кам пек пулатӑп? –
Ыйтрӗ чӗпӗ автанран.
– Эс-и? –
Тет ӑна автан, –
Ман пекех, паллах, пулан:
Кӑкӑр урлӑ шӳлкемеллӗ,
Ҫырла тӗслӗ тупетейлӗ,
Кӑлтӑрмач пек шур хӳреллӗ,
Ҫӗр чавма –

Çинçе чĕрнеллĕ...
Ӳс-ха,
Ӳс-ха эс,
Петюк.
Кăт-кăт-кăт,
Кукуруку-у-ук!

**Куянкка**

Куян, куян, куянкка
Кулянмашкăн пит ăста,
Тата ăста, пит ăста –
Кучан çиме пит ăста,
Тата ăста, пит ăста –
Мухтанмашкăн пит ăста,
Тата ăста, пит ăста –
Ташламашкăн пит ăста.
Ташла пĕлмен çынсене
Пăхса тăма намăс та!

## Петĕр Ялкир
## (1922 – 2006)

**Самолет**

Самолет кĕр-кĕр кĕрлет,
Кĕç хăпарĕ тӳпене!
Пуканесемпе пĕрле
Хам те вĕçĕп инçете.

**Кĕр килет**

Сарă çулçăсем ӳкеççĕ,
Çулçă çумăрĕ çăвать.
Кăмпасем пуçне çĕклеççĕ,
Кĕр килнишĕн пит хавас.

**Çилпе йăмра**

Уçă çил вĕçсе килет
Вăшăл-вăшăл, вăшăл-вăшăл.
Варкăшпа йăмра пуплет
Пăшăл-пăшăл, пăшăл-пăшăл.

### Чĕрĕп

Йĕплĕ чĕрĕп хĕл каҫа
Ҫывăрать хăй йăвинче.
Тупаяс ҫук шыраса
Ăна шур юр айĕнче.

Лайăх тĕлĕксем курма
Ырă-мĕн ҫулла ҫинчен.
Туйăнать пылак улма
Тирĕннĕн йĕпписенчен.

### Ешĕл туссем

Пирĕн садик тавралла
Ҫитĕнеҫҫĕ йывăҫсем.
Симĕс-симĕс тумпала
Илĕртеҫҫĕ халь вĕсем.

Ӳсчĕр пĕлĕт таранах –
Хуҫмăпăр туратсене.
Капăрлатчăр таврана –
Татмăпăр ҫулҫисене.

## Михаил Мерчен
## (1933 – 2020)

### Икерчĕ

Кăпăш икерчĕ
Анне пĕҫерчĕ.
Ҫу сĕрчĕ,
Пыл сĕрчĕ –
Ай тутлă пулчĕ!
Ҫирĕмĕр-ҫирĕмĕр,
Хырăм лăк тулчĕ.

### Килетех

Кушак утать мăн кăмăллăн,
Пăхмасть никам ҫине.
Питне типтерлĕ ҫунă вăл,
Пырать хăйма ҫиме.

Ирех тăрать вырăнĕнчен,
Ларать стена ҫумне.
Таса, ҫап-ҫутă пуличчен
Пуҫлать шăлма пуҫне.

Пит ҫунине сăнатăп эп,
Кĕтетĕп тем пекех.
Хăлха урлă ҫусассăн шеп:
Инҫетри ялтан,
Тури Турхантан
Пирĕн куками
Эпĕ ҫĕклейми
Пысăк торт йăтса,
Сар мăйăр илсе,
Шоколад чиксе,
Теттесем ҫакса
ки-
ле-
тех!
Эх!..

## Утма вĕренни

Икĕ пӳрнерен тытса,
Шиклĕн тӳрленсе тăрса
Вовик утма вĕренет,
Амăш юрă кĕвĕлет:
– И, тăп-тăп-лап,
тăп-тăп-лап,
Эпĕ космонавт пулап.

Халĕ виçĕ утăм турăм,
Ыттине ыран утап.
– Эх! Тăп-тăп-лап,
тăп-тăп-лап,
Эпĕ космонавт пулап.

## Анатолий Ыхра
## (1948 – 2004)

### Уçă кăмăл

Пуçтаратăп, пуçтаратăп
Хĕрлĕ, сарă çулçăсем.
Пĕтĕмпех эп пуçтармастăп:
Пухчăр тетĕп ыттисем.

### Сикетĕп

Çерçи пулкки тĕлĕнче
Вĕлтĕрт-вĕлтĕрт сикетĕп.
Шăрчăк шăллăм патĕнче
Тринкки-тринкки сикетĕп.

Шапа кӳлли хĕрринче
Йăлтти-ялтти сикетĕп.
Качакасем хушшинче
Тăр-рăст, тăр-рăст сикетĕп.

Мулкач патне пымастăп:
Вăл тарасран хăратăп.

## Сасăсем

Кушак калать: «Мяв-мяв!» – тет.
Йытă калать: «Хам-хам!» – тет.
Сысна калать: «Нăри-ик!» – тет.
Чăхă калать: «Кăт-кăт!» – тет.
Автан мĕн тет – каламастăп.
Ун сассине юратмастăп.
Паян шартах сиктерчĕ –
Тĕлĕкĕме вĕçтерчĕ.

# Петĕр Эйзин (1943)

## Сысна çури

Нăрик, нăрик, нăркки тус –
Вăрман тăрăх вăл утать,
Симĕс курăк вăл татать,
Кунтă çине тултарать,
Унтан киле чуптарать.

## Сан валли, Тимук

Вĕçрĕ анчĕ сарă чăх...
Вĕçрĕ анчĕ сарă чăх
Йăваран.
«Кăт-кăтик! – тет, – кăт-кăтик!
Турăм çăмарта.
Турăм çăмарта
Сан валли, Тимук».
Ĕне килчĕ васкаса
Кĕтӳрен.
«Му-ук! – тет хăй, –
му-ук! – тет. –
Килтĕм сĕт илсе.
Килтĕм сĕт илсе
Сан валли, Тимук».

**Пĕчĕк Лена**

Пĕчĕк Лена найкăшать,
Пĕчĕк Лена макăрать,
Теттисемпе вылямасть,
Макăрмашкăн чарăнмасть.

Авă килет качака,
Майракине тăратса,
Сухаллине каçăртса,
Шăлĕпе вăл шак! тăвать,
Урипе вăл так! тапать.

Чарăн, хĕрĕм, найкăшма,
Чарăн, хĕрĕм, макăрма.
Авă килет качака, –
Ури чĕрни – пăхăртан,
Сухаллийĕ – кĕмĕлтен,
Майракийĕ – ылтăнран.

Кач! качака, кай кунтан!
Пирĕн Лена макăрмасть,
Пирĕн Лена найкăшмасть.
Пĕчĕк тути йăл! кулать,
Питçăмарти пăт! путать.

**Хĕл Мучи хутаçĕнче**

Хĕл Мучи хутаçĕнче
Кишĕр пур –
мулкач валли,
Мăйăр пур –
пакша валли,
Пыл та пур –
упа валли.
Хĕл Мучи хутаçĕнче
Премĕк пур –
Петюк валли,
Шоколад –
Сашук валли,
Пан улми –
Ленук валли.

**Хĕлле**

Хура алсиш –
алăра.
Шур çăматă –
урара.
Кăвак тутăр –
пуçăмра.
Сар çунашка –
айăмра.

## Вениамин Тимаков
## (1940 – 2002)

### Кушака ят хуни

Пĕчĕкçĕ кушак çури
Пурăнать-ха ятсăрах.
Чăн калас-тăк, ят пурри
Чĕр чунсемшĕн аванрах.

Пиллĕкри Нинук паян
Тавçăрса илет çакна:
– Ячĕ пултăр ун – Куян, –
Тет вăл йыхăрса ăна.

– Эй, Куян, кăвак Куян,
Эс хăвна епле туян?
Килсе çи-ха ăшă сĕт,
Хырăму сан выçă вĕт.

Çук, пымасть кушак çури,
Темшĕн ютшăнать юри,
Темшĕн чĕр турат шырать,
Хуппине çиет-хырать.

Тĕлĕнет ак хĕр ача,
Шухăшлать вăл пĕр кана:
«Тупнă ят каймасть пачах,
Урăхла чĕнес ăна».

– Эй, Пакша, кунта килсем,
Тутлă, ăшă сĕт ĕçсем.
Хăв турилккӳне пушат. –
...Çук, каллех пымасть кушак.

Вăл йăтса çӳрет кăмпа.
Акă улăхрĕ унпа
Пахчари йăмра çине,
Кĕчĕ йывăç хăвăлне.
Тытăнчĕ кăмпа çиме,
Çынсене тĕлĕнтерме.

Йăлт аптрарĕ хĕр ача:
Тупнă ят каллех начар.
Унăн-кунăн пăхкаларĕ,
Çĕнĕлле чĕнсе каларĕ:
– Эй, Курак, ансам çĕре,
Хăвăлра тек ан çӳре.

Лешĕ илтрĕ чĕннине,
Сарчĕ çивĕч чĕрнине –
Кайăк пек вĕçесшĕн пулчĕ,
Намăса кăна хăй юлчĕ:
Ӳкрĕ хĕр ача умне,
Çĕр улми ани çине.

Хĕрхенет ăна Нинук:
– Ай, юлмарĕ пуль чуну.
Кил-ха, пĕчĕкçĕ Мăркка,
Эс илемлĕ, эс сăркка.

Çакăн пек чĕнсессĕнех
Улшăнчĕ кушак тинех:
Мăрăлтатрĕ, сĕркеленчĕ,
Турилкке патне иленчĕ.
Хĕр ача та хĕпĕртерĕ:
– Сан яту Мăркка-çке, – терĕ.

## Людмила Смолина
## (1962)

### Чип-чип-чип

Чип-чип-чип! – чĕпĕсене
Йыхăрать манăн анне,
Савăтри сар кĕрпене
Çитерет вăл вĕсене.

### Хур чĕпписем

Урамра шап-шурă хурăн:
Ал çупаççĕ çулçисем.
Ун тавра ташлаççĕ хурăн
Сарă пĕчĕк чĕпписем.

## Александр Пăртта
## (1963)

### Хĕлле

*(Акросăвă)*

**Х**ĕл мучи пăхмасть ирне-каçне,
**Ĕ**лкĕресшĕн пур ача патне.
**Л**аши унăн чăн-чăн çил çунат,
**Л**арса чупнă чухне çил тухать.
**Е**вит çитнĕ, килчĕ вăл тинех.

### Тăри юрри

Тăр-тăри те тăр-тăри!
Мана эсир куртăр-и?
Хĕвелпе пĕрле вăрантăм,
Тӳпене вĕçсе хăпартăм,
Çумăр пĕлĕчĕ çинче
Пите çурăм ир çинче.

### Аннене

Сар хĕвел ăш хĕлхемне
Сапаларĕ савăнса,
Ма тесессĕн аннене
Патăм юрă юрласа.

Пăхрăм та анне çине:
Сар хĕвел пек ун кулли,
Ма тесессĕн ман анне
Çĕр çинче чи илемли.

**Людмила Сорокина**

## Кăлтăрмач

Кăлтăр-кăлтăр!
кăлтăрмач
куçăмран çухалчĕ пач.
Шав васкарĕ малалла,
Çаврăнмарĕ каялла.
Хĕрхенмерĕ Сашăна.
Халь ăçта шырас ăна?

## Мечĕк

Тăппи-таппи, тăппи-тап!
Сикрĕ мечĕк çĕн пӳртре.
Урупа ăна ан тап,
Вăл вылясшăн ирĕкре.

## Кушак çури

Кушак çури сĕт ĕçет,
Пуçне чашăка чикет.
Паллама çук ăна,
Пичĕ-куçĕ сĕт кăна.

– Ăшă шыв парсам, анне,
Çăвам Мăрккан шур питне,
Ал шăллипе типĕтем,
Тирпее те вĕрентем.

## Хĕвел

Сар хĕвелĕн сар тумне
Кам çĕленĕ-ши касса?
Сар хĕвелĕн сар питне
Кам-ши çунă пит таса?
Вăл хăех çапла ĕçчен,
Ир тăрсан ĕçлет каçчен.

## Çил

Ăшă çил
Таçта васкать,
Чупать-чупать,
Çук, ывăнмасть!
Вăл, такăнмасть.
Пите кăшт ăшшăн çупăрлать,
Çӳç пĕрчине чăп! чуптăвать.

## Пирĕн сысна

Пирĕн сысна нăрăлкка,
Сăмси вĕçĕ çаврашка.
Пылчăкра йăваланать,
Унсăр шутсăр савăнать.
Эп ятлатăп нăрăха:
– Итле, пур-и сан хăлха?
Кăшт тирпейлĕ пулмалла,
Халь питне ак çумалла.

## Пĕчĕк Павăл

Чарсăр чакак чакăлти,
Каçăр кăркка кăлтăрти,
Мяук мăркка мăрăлти,
Нăрăх нюрук нăрăлти.
Пĕчĕк Павăл пакăлти,
Теттисемпе калаçать,
Итлеменшĕн ятлаçать.

# Валентина Тарават
# (1946)

## Атту йĕрет вăл

– Марине, пепкем, выçрăн пуль, ларса çи-ха хăвăртрах, – тет амăшĕ урамра вăрах выляса çӳренĕ хĕр ачине.

– Хам выçман та, хырăм питĕ хытă выçнă манăн. Анне, ăна çитер-ха часрах. Атту йĕрет вăл.

## Хăрăк туратăн ăшши çук

Марине аппăшĕ пăхмасăр сăвă калама вĕренет.

– «Тухса кайрĕ вăрмана хăрăк турат пуçтарма», – вулать вăл янратса.

– Эй, айванскер! – тарăхать Марине. – Асанне каларăш, хăрăк туратран мĕн ăшши пултăр.

## Банан çиес килет

Маринепе Анюк пытанмалла выляççĕ. Шырать-шырать Марине Анюка, ниепле те тупаймасть. Чăланти лар хыçĕнче ларса ывăннă Анюк текех чăтаймарĕ:

– Эпĕ Африкăра! Хам таврăнмасăр та тупаймастăн эсĕ мана! – тесе кăшкăрчĕ.

Тавçăруллă Марине нумай шухăшласа тăмарĕ:

– Банан илсе кил-ха мана валли нумайрах. Эпĕ ăна пĕртте çисе курман, – терĕ.

## Илсе парать

Марине салтак тӳми текен чечеке тытнӑ та тӑрӑшсах юмӑç пӑхать.

– Илсе парать. Илсе памасть. Илсе парать. Илсе памасть. Илсе парать... – чӗвӗлтетет вӑл хӑйӗн çепӗç чӗлхипе.

– Илсе парать тухать. Тавçӑруллӑ чечек. Манӑн асанне хӑй сӑмахне яланах тытнине пӗлет. Пенси укçи илсенех хитре пукане туянса парать пуль-ха асанне.

## «Ыранюк» тесен лайӑхрах

Марине «Çилçунат» журнала пӑхса ларать. «Ырвалюк» ятлӑ страницӑна уçсан тӗлӗнсе калаçать:

– Ырвалюк, Ырвалюк... Валюкӗ хӑй ырах та мар пуль. Ав пирӗн садике çӳрекен Валюк пӗртте ырӑскер мар. Яланах мана çивӗтрен туртать.

«Ыранюк» тесен лайӑхрах пулмалла. Кӳршӗ Анюк мана нихӑçан та кӳрентермест.

## Пиçмен пашалу

– Чӑн-чӑн пиçмен пашалу, çавӑн пек çӑмӑл сӑвва та пӑхмасӑр калама вӗренеймен, – каласа парать такам çинчен аппӑшӗ амӑшне.

Марине, калаçӑва илтсе юлнӑскер, чупса пычӗ те:

– Анне халь анчах кӑмака хутса кӑларчӗ. Пиçмен пулсан ларт пашалӑвне хӑвӑртрах кӑмакана, – терӗ.

## Марине ашшӗне шеллет

– Ай, чӗпӗтет? Ай, чӗпӗтет! – аллисене сӑтӑркалать хӗллехи урамран васкаса кӗнӗ ашшӗ.

– Кам чӗпӗтрӗ сана, атте?! Санӑн хӑйне хытӑрах чӗпӗтмеллеччӗ! – шеллет ашшӗне Марине.

## Анюк савӑнсах пуçтарчӗ

– Улми йывӑççинчен аякка ӳкмест вӑл, – калаçаççӗ Марине амӑшӗпе асламӑшӗ тем пирки.

– Ӳкмест тетӗн-и? – хирӗçлет урайӗнче пуканепе вылякан Марине. – Ӗнер ав вӑйлӑ çил пулчӗ те – пирӗн улмуççи çинчи пан улмисем кӳршӗсен пахчине çитиех ӳкрӗç. Анюк савӑнсах пуçтарчӗ вӗсене.

## Марине вӗрентет

– Пӗтрӗ пуç! Пӗтрӗ пуç! – аллисемпе хӑлаçланать урамран кӗнӗ Марине асламӑшӗ.

– Анне, мӗн пулчӗ? Мӗн пиркиех çав териех кулянатӑн? – шикленсе ыйтать ывӑлӗ.

– Ара, çӳлтен мăйăр пысăкăш пăр çăвать те пĕтĕм пахча çимĕçе, тыр-пула пĕтерет-çке!

Марине çакна илтнĕскер, асламăшне вĕрентет:

– «Пĕтрĕ пуç» тесе каламалла мар. Пуçу чиперех-çке. Пĕтрĕ пахча çимĕç, пĕтрĕ тырпул темелле.

### Харсăр хĕвел

Хĕвелтен хăранă –
Çăласшăн хăйне:
Юр купи пытаннă
Тĕмеске хыçне.

Хĕвелĕ пит харсăр
Пăхать, йăл кулать.
– Епле-ха вăл сансăр
Çут тинĕс пулать?

### Тавăрчĕ

Пӳрнене хĕстерчĕ алăк,
Пăшăлтатрĕ:
– Асăнмалăх
Тек ан хуп шаплаттарса,
Тек ан тап таплаттарса,
Ан чĕркеле, ан варла,
Ырă чунлă пулмалла.
Ман çине текех ан сур,
Алăкăн та чунĕ пур.

## Людмила Николаева
## (1970)

### Васук

Кушак тупнă чăланта
Кивĕ пĕчĕк сар çăмха.
Савăнса унпа вылять,
Урай тăрăх кустарать.

Ун тавра сикет, чупать,
Çĕн тус хыççăн хăвалать.
Ак тата!.. Тамаша:
«Эп çухатрăм юлташа!»

Унталла та кунталла
Васук пăхрĕ айванла.
Ачашлам-ха хĕрхенсе:
– Çăмху пĕтрĕ сӳтĕлсе.

### Пĕчĕк парне

Чечексем эп пухрăм –
Кăвакки, хĕрли...
Чечек çыххи тухрĕ
Ман анне валли.

Пĕчĕк парне пулчĕ
Аннене манран.
Кăмăлĕ ун тулчĕ,
Савăнчĕ чунтан.

### Мăрăлти Ваçук

Юратать йăпăлтатма
Мăрăлти, чее Ваçук:
«Тутанасчĕ кăшт хăйма.
Унран тутли ним те çук!»

### Пĕр витре сĕт

Ĕне сăвать асанне.
Ваçук пăхать витрине.
Чăр-чăр-чăр! сĕт пăсланать.
Кушак чунтан савăнать:
«Мăр-мăр-мăр! Кур! Мăр-мăр-мăр!
Пĕр витре мăр! сурăмăр».

### Хĕвел çаврăнăш

Хĕвел çаврăнăш паян
Уснă сар пуçне.
«Хĕвел тус тарчĕ манран
Пĕлĕтсем хыçне».

### Купăста

Йăран çинчи купăста
Тумланмашкăн пит ăста.
Виçĕ тутăр, вун кĕпе!
Хăратаймĕ халь йĕпе!

## А. Пускил

### Пăравус

Пукан çумне пукан –
Ку ĕнтĕ пăравус.
Петюк руль тытакан.
Асту, пуçна ан ус.

## Екатерина Рдюкова

### Кампур

Кампур – пирĕн йыт çури.
Вăрçтарап ăна юри:
«Эй, Кампур, кунта кам пур?
Каласам часрах Кампур».
Тарăхать вара Кампур:
«Кам пур, кам пур... Эпĕ пур!»

### Парне

Парнелерĕç Сашука
Çăмламас хура упа.
Ăна тытрĕ хăлхинчен,
Тек ямарĕ аллинчен.

### «Илсе панă Уçăпа...»

Илсе панă Уçăпа
Кăвак куçлă шур упа.
Уçăп халь унпа пĕрле
Пуçтарăнать Çурçĕре.

## Александр Савельев-Сас (1932)

### Пурте пур

Пирĕн ачи пит маттур,
Мĕскер кирли пурте пур:
Сад чечеке ларнă чух
Илем курма икĕ куç,
Хушăнса пырсан вăй-хал
Ĕç тумашкăн икĕ ал,
Ăмăрту-тупăшура
Мала тухма ик ура.
Ик хăлхийĕ Уртеме
Хитре юмах итлеме.

– Мĕн тума-ха ик тута?
– Анне, сана чуптума.

### Выляма кайнă

Чаплăн ларчĕ хĕл каçа
Хамăр тунă юр ача.
Халь курмастпăр тек ăна –
Юлнă шăпăрĕ кăна.

Кам пултарĕ калама
Çав ача халь ăçтине?
«Кайнă пулĕ выляма
Аната, шыв хĕррине».

### Юрларăм та ташларăм

Асаттеçĕм, асатте,
Пар-ха юмах каласа.
Эсĕ юмах каласан
Эпĕ парăп юрласа.

Асаннеçĕм, асанне,
Пар-ха сăвă каласа.
Эсĕ сăвă каласан
Эп кăтартăп ташласа.

Асаттепе асанне
Турĕç эпĕ ыйтнине.
Хам сăмаха манмарăм,
Юрларăм та ташларăм.

## Михаил Лермонтов
## (1814 – 1841)

### Сăпка юрри

Паю-пай, пепкем, ан çуйăх,
Хуп куçусене.
Ав, пăхать çап-çутă уйăх
Сан сăпку çине.
Юмах ярăп эп хулленçĕ,
Юрлăп юрăсем.
Паю-пай, выртах, пепкеçĕм,
Лăпкăн тĕлĕрсем.

## Михаил Исаковский
## (1900 – 1973)

### Сăпка юрри

Çӳл тӳпере çăлтăрсем йăлтăраççĕ,
Уйăх шăвать ярăнса.
Чĕвĕл чĕкеç чĕпписем çывăраççĕ,
Эс те, ачам, çывăрсам.
Ăшшăн пăхса, сана лăпкĕç ир кӳлĕм
Сарă хĕвел ачисем,
Çывăрах, чĕппĕмçĕм, çывăр, телейĕм,
Çывăр, шăнкравăм-пепкем.

Çывăр, тĕпренчĕкĕм, çывăр, хастарăм,
Хуш мăшăр çăмăл çунат.
Ырă çĕршывăмăр упрĕ патваррăн
Санăн тӳлек ыйхуна.
Памăпăр çул нимĕнле синкере те,
Пӳлĕпĕр пур инкеке,
Çывăрах, чĕппĕмçĕм, çывăр, кĕтретĕм,
Çывăр, шăнкравăм-пепкем.

Çывăр, пепкем, çывăрсан пысăк пулăн,
Ик çунату çитĕнсен,
Кăйкăр пекех вĕçсе кайăн хăюллăн

Эсĕ аçу килĕнчен.
Пиллĕ сана юратса аслă халăх,
Пиллĕ мĕн ĕмĕрлĕхе,
Çывăрах, чĕппĕмçĕм, çывăр, раскалăм,
Çывăр, шăнкравăм-пепкем.

**Валентина Осеева**
**(1902 – 1969)**

### Чĕрĕп

Мăн упа та,
Тилĕ тус та
Ыйхăра хальччен.
Эп ларатăп,
Шухăшлатăп
Чĕрĕп тус çинчен.
Йĕплĕ чĕрĕп,
Мĕскĕн чĕрĕп
Çывăрмасть çĕрле.
Ăна йĕпĕ –
Хурçă тĕкĕ –
Питĕ кансĕрлет.
Чак! чикет те,
Яш! тирет те –
Витĕр витерет.
Йĕп чиксессĕн,
Чун кӳтсессĕн,
Ыйхă сирĕлет.
Салтăнасчĕ,
Хывăнасчĕ
Унăн ун пек чух.
Ах,тăванăм,
Мĕн тăвам-ха? –
Пулăшма май çук.

**Зоя Петрова**
**(1921 – 2005)**

### Теттесем çывраççĕ

Кĕнеке, тетте таврашĕ
Ырса çитнĕ – тĕлĕрет.
Сарнă вырăн çывăрмашкăн
Ачасене чĕнет.
Ав, паппа тăвать юмах та,
Ăна курăн эс татах та
Ыйхă пуснă май,
Паю-пай.

Каççерен килет те ыйхă
Килсене кĕрет:
Курăнми пулса çӳрет вăл –
Çывăрма хистет.
Тулта питĕ тĕттĕм халĕ,
Чылайран кăна çуталĕ,
Вăхăт шунă май,
Паю-пай.

Каççерен канмашкăн тивĕç
Кашни чун, –
Сĕмлĕхе сирсе, кĕç килĕ
Çĕнĕ кун.
Кун каçа пит ывăнатпăр,
Пурне те «Ыр каç» сунатпăр,
Çывăр пĕрехмай,
Паю-пай.

## Софья Прокофьева
## (1928)

### Хăçан макăрма юрать

Маша ирхине ирех макăрма тытăннă. Автан чӳречерен пăхнă та:

– Ан макăрсам, Маша! Ирхине ирех эпĕ ки-кки-ру-кук! юрлатăп, эсĕ мана юрлама кансĕрлетĕн, – тенĕ.

Маша кăнтăрла макăрма пуçланă.

Симĕс курăк хушшинчен шăрчăк тухнă та:

– Маша, ан йĕрсем тархасшăн, – ӳкĕтленĕ вăл хĕр ачана, – манăн сасă çинçе çеç, эсĕ вара питĕ хытă макăратăн, мана никам та илтеймест.

Маша каçхине макăрма пуçланă.

Кӳршĕри пĕверен икĕ шапа сиксе килнĕ те хĕр ачана çапла каланă:

– Лăплансам, Маша, ан макăр. Эпир каçхине кăваклатма юрататпăр, эсĕ вара пире кансĕрлетĕн.

Маша çĕрле макăрса янă.

Садран шăпчăк вĕçсе килнĕ те чӳрече сакки çине ларнă:

– Маша, ан макăр! Çĕрле эпĕ хитре юрăсем юрлатăп, эсĕ вара мана чăрмантаратăн.

– Манăн вара хăçан макăрмалла? – ыйтнă хĕр ача.

– Эсĕ нихăçан та ан макăр, – хуравланă амăшĕ,– эсĕ халĕ пысăк хĕр ача вĕт.

### Пĕрремĕш çырласем çинчен калакан юмах

Машукпа Аюкка хăйăртан кукăль тунă.

Машук кукăлĕсене хăй тунă. Аюкка пĕр вĕçĕм йĕрмешнĕ:

– Ай, атте, пулăш-ха! Ай, атте, мана кукăль туса пар!

Ашшĕ хĕрне кукăльсем туса панă.

– Ман кукăльсем лайăхрах! – мухтаннă Аюкка. – Вĕсем пысăкрах, хитререх. Санăн вара авă мĕнлерех пĕчĕк, япăх.

Тепĕр кунне ашшĕ ĕçе кайнă.

Вăрмантан пĕр Кайăк вĕçсе килнĕ. Унăн сăмсинче сапака пулнă. Сапака çинче икĕ çырла. Çырлисем хĕп-хĕрлĕ ялтăртатнă.

– Кам хитререх кукăль тăвать, çырлине çавна парăп, – тенĕ Кайăк.

Машук хăвăрт кăна хăйăртан кукăль туса хунă. Аюкка вара, темле тăрăшсан та, нимĕн те тăвайман.

Кайăк çырлине Машука панă.

Аюкка питĕ кӳреннĕ, макăрса янă.

Машук вара тантăшне лăплантарма тытăннă:

– Ан макăр, Аюкка. Çырлине эпир санпа çурмалла пайлăпăр. Акă кунта икĕ çырла. Пĕри сана, тепри мана.

**Кăнттам сăмах çинчен калакан юмах**

Машукпа Аюкка тăваткалсенчен пӳрт купаланă. Шăши çури чупса пынă та:

– Мĕнлерех хитре пӳрт! Эпĕ унта пурăнам-и? – тесе ыйтнă.

– Кай кунтан! – кăнтаммăн хуравланă ăна Аюкка.

Машук макăрса янă:

– Эсĕ шăши çурине мĕншĕн хăваласа ятăн? Вăл лайăх вĕт, – тенĕ.

– Эсĕ те кай кунтан, – кăшкăрса пăрахнă Аюкка.

Машук кӳреннĕ те кайнă.

Чӳречерен Хĕвел пăхнă.

– Намăс та мар-и сана Аюкка! – тенĕ Хĕвел. – Машук санăн тусу вĕт. Туссене «Кай кунтан!» тесе кӳрентерме юрать-и вара?

Аюкка чӳрече патне чупса пынă та Хĕвеле те:

– Кай кунтан,– тесе кăшкăрнă.

Хĕвел нимĕн те шарламан, тӳперен таçта çухалнă. Тавралăх тĕттĕмленсе ларнă. Сĕм тĕттĕм пулнă. Аюкка урама тухнă. Урамра та пач тĕттĕм пулнă. Нимĕн те курăнман. Çӳренĕ-çӳренĕ Аюкка тĕттĕмре аташса, чут çеç шăтăка ӳкмен.

Аюкка питĕ хăраса ӳкнĕ.

– Халĕ ăçта каймалла ĕнтĕ, – макăрса янă вăл. Ăçта-ши пирĕн кил? Усал сăрă кашкăр тĕлне пулсан мĕн тăвам... Урăх нихăçан та никама та «Кай кунтан!» тесе каламастăп.

Çакна Хĕвел илтнĕ те тӳпене ярăнса тухнă. Таврара каллех çап-çутă, ăшă пулса кайнă.

Аюкка киле май шăпах Машука тĕл пулнă. Савăнсах кайнă вăл.

– Атя пирĕн пата, Машук! Шăши çури валли çĕнĕ пӳрт тăвăпăр. Пурăнтăрах вăл унта.

**Яков Тайц**
**(1905 –1957)**

**Кашкăр**

Машăна зоопарка илсе кайнă.

Акă кашкăр. Маша ăна тӳрех палласа илнĕ.

– Эсĕ мĕншĕн Хĕрлĕ Калпака çисе янă? – тĕпченĕ хĕр ача. Кашкăр чĕнмен.

– Мĕншĕн виçĕ сысна çурине кӳрентернĕ? Кашкăр хӳрине хĕстернĕ.

– Лар халь читлĕхре, усал сăрă кашкăр! Кашкăр çаврăнса тăнă.

Апла намăс пулнă пулĕ ăна. Апла текех ун пек тумĕ вăл.

## Кăмпара

Натушпа асламăшĕ кăмпана пуҫтарăннă. Аслашшĕ вĕсене пĕрер кунтăк тыттарнă та:

– Пăхăпăр, кам ытларах пухĕ, – тенĕ.

Ҫапла ваттипе мăнукĕ вăрманта ҫӳренĕ-ҫӳренĕ, кăмпа пуҫтарнă-пуҫтарнă – килелле уттарнă. Асламăшĕн кунтăкĕ туп-тулли, Натушăн вара – ҫурри кăна.

– Асанне, атя кунтăксемпе улшăнар, – сĕнет хĕр ача.

– Юрĕ, атя, – килĕшет асламăшĕ.

– Еплерех маттур Натуш! Пăх-ха, асламăшĕнчен те ытларах пуҫтарнă, – тесе мухтать аслашшĕ.

Натуш хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе каять те шăппăн:

– Ку ман кунтăк мар ҫав... Ку асаннен кунтăкĕ... – тет.

## Кăранташ

Ашшĕ пысăк кăранташ илсе килнĕ.

– Мана пар! – кăшкăрнă Маша.

– Мана пар! – кăшкăрнă Миша.

– Шăпланăр, – лăплантарнă вĕсене ашшĕ. – Эпир ăна пайлăпăр.

Пĕр вĕҫĕпе ҫырса пăхнă – кăвак, тепринпе – хĕрлĕ.

– Атя, пайлар кăранташа, – хĕпĕртенĕ ачасем.

Машăна – хĕрли лекнĕ, Мишăна – кăвакки.

Маша хĕрлĕ ӳкерчĕк ӳкерет, Миша – кăвак ӳкерчĕк.

## Тилĕ

Пурăннă тет карчăккипе старики. Старикки вăрмана кайнă тет. Пăхать – тилĕ. Ăна хӳринчен кап! ярса тытать.

– Атя-ха, тилĕ, манпала, пирĕнпе пĕрле пурăнăн.

– Сана мĕнле чĕнеҫҫĕ, мучи?

– Якур тесе чĕнеҫҫĕ.

– Юрĕ, Якур мучи, пырăп санпа, пĕрле пурăнăпăр. Ҫурамсемпе сывпуллашма ҫеҫ ирĕк парсам.

– Пыр, сывпуллаш ҫурусемпе!

Мучи тилле ирĕке ярать те ăна кĕтме тунката ҫине ларать. Унта карчăкĕ пырса тухать.

– Мĕн тăватăн эсĕ вăрманта?

– Тилĕ тытрăм.

–Тилли ăҫта?

– Ҫурисемпе сывпуллашать. Карчăкăм, хăвăртрах киле чуп. Эпĕ часах тиллине илсе пырăп.

Карчăкĕ киле чупрĕ. Стариккине кĕтсе ларать.

Старикĕ таврăнмасть. Старик тунката çинче ларать, тиллине кĕтет. Тилли темшĕн килмест.

## Ирина Токмакова
## (1929 – 2018)

### Пулă çурчĕ ăçтарах?

Каç та, шыв та хуп-хурах,
Пулă çурчĕ ăçтарах?

Тилĕ çурчĕ – шăтăкра,
Пакшан – хăвăл вулăра,
Йыттăн – алăк айĕнче,
Шăшин – хушăк тĕпĕнче.
Пулă пурнăçĕ – шывра,
Йĕрсем çук – ан та шыра.

Каç та, шыв та хуп-хурах,
Пулă çурчĕ ăçтарах?

## Геннадий Цыферов
## (1930 – 1972)

### Юмах

Пĕррехинче ашака юмах каласа пама ыйтнă. Ашак шутланă-шутланă та çапла юмах каланă:

– Ашаксен хăлхисем пысăк – шап-шап. Слонсен урисем пысăк – тап-тап. Ăнланмалла-и?

Вăт çапла вара. Çĕр ашак хăлхисемпе шап-шап! шаплаттарсан, çĕр слон урисемпе тап-тап! таплаттарсан вăйлă çил тухать. Ăнланмалла-и?

Кутăнла та пулать. Вăйлă çил тухать те сире çĕр слон урисемпе таплаттарнăн, çĕр ашак хăлхисемпе шаплаттарнăн туйăнĕ.

Пĕтрĕ.

### Уйăх

Уйăх мĕнлине пурте пĕлеççĕ. Сарă вăл. Пурте çапла калаççĕ. Пĕр пĕчĕкçĕ шапа кăна кăшт урăхларах шутлать:

– Уйăх вăл... питĕ ырă кăмăллă. Ниушлĕ эсир çакна курмастăр? Вăл çĕрле кăна çутатать, кăнтăрла ту хыçне çывăрма каять. Унăн пĕчĕк çеç майраки пур та вăл ăнсăртран хĕвеле тĕкесрен шикленет.

Ниушлĕ эсир çакна курмастăр?

## Шапасем чей мĕнле ĕçнĕ

***

Арçын ача хĕвел ӳкернĕ. Ун тавра пайăркисене – ылтăн хăрпăкĕсене. Ашшĕне кăтартнă:

– Аван-и?

– Аван, – тенĕ те ашшĕ тунине ӳкерсе хунă.

– Ух! – тĕлĕннĕ ача. – Ку хĕвел çаврăнăш вĕт!..

***

Шапапа хур чĕппи çул çинче вĕрене çулçи тупнă. Ку камăн ури-ши тесе тавлашса кайнă.

– Санăн, – ăнлантарнă хур чĕппи, – симĕс вĕт.

Шапи çулçăна илсе кайнă. Тепĕр эрнерен ăна каялла хур чĕппине тавăрса панă. Çулçă хур ури пекех хĕрелсе ларнă.

***

Арçын ача урамра вылянă. Киле йĕп-йĕпе, тăр пылчăк таврăннă.

– Аçта пултăн? – ыйтнă амăшĕ.

– Кӳлленчĕкре.

– Унта мĕн турăн?

– Хĕвелпе ал çупмалла вылярăм. Питĕ хаваслă пулчĕ.

***

Пĕррехинче пăлан çурин пуçĕ çине турат-мăйрака шăтнă.

Пăлан çури çулçă тухасса кĕтнĕ. Кĕркунне те çитнĕ, çулçăсем те тăкăнма пуçланă. Пăлан çури вара çаплипех кĕтнĕ те кĕтнĕ.

## Роберт Миннуллин
## (1948 – 2020)

### Çывăрма выртать анне

Çерçисем, ан чĕвĕлтетĕр,
Хăмасем, ан чĕриклетĕр,
Кушакки шăпрах çӳре,
Ма ӳкертĕн йĕтĕре?

Эй, шăпрах, çил ачисем,
Ан калаçăр, çулçăсем,
Хытă ан шакка, сехет,
Шавсăрах йĕппӳ сикет.

Кӳршĕсем те ан шавлаччăр,
Машинсем тулта шăпланччăр,
Çут тĕнче, лăплан, тархасшăн, –
Халь анне канма выртасшăн.

***

Пуçласам, анне, юмах,
Килтĕр ыйхăллă сăмах.
Эп вара куçа хупам,
Лăпланса паппа тăвам.
Выртмассассăн çывăрма
Эп пултарăп йăслама.

### Хĕлле

Тухрĕ урама Алмаз.
Çук, тухмарĕ çарамас.
Тухрĕ ăшă тăхăнса,
Тути урлă шарф çыхса.

Çур сехет çӳресенех
Чупса кĕчĕ вăл пӳрте:
– Асанне теп, асанне,
Сăмсана тем чĕпĕтет.

Шатăр-шатăр шартлама
Алхасасшăн пулмалла.
Асаннеçĕм, ятлама,
Тен, пыратăн манпала?

**(*Ю. Сементер куçарнă.*)**

# УСĂ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА

Артемьева, Т.В. Примерная программа образования ребенка-дошкольника в чувашском (национальном) дошкольном образовательном учреждении / Т.В. Артемьева, С.Г. Михайлова, Н.В. Иванова– Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 2015. – 95 с.

Пĕчĕккисен кĕнеки : хрестомати / Т.В. Артемьева, Г.Ф. Трофимов. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 2006. – 319 с.

Пĕрле вулар-ха : хрестомати. Пĕрремĕш кĕнеке / З.С. Антонова-пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1986. – 87 с.

Пĕрле вулар-ха : хрестомати. Иккĕмĕш кĕнеке / З.С. Антонова-пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1987. – 88 с.

Чăваш халăх сăмахлăхĕ. VI том, I пайĕ. Ача-пăча сăмахлăхĕ.– Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1985. – 304 с.

Сăпка юррисем : хрестомати / Н.В. Васильев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1987. – 143 с.

Ача-пăча вăййисем: хрестомати / Г. И. Воронцов, И.Г. Воронцова – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1992. – 128 с.

Ачалăх сасси. (Голоса детства. Чувашская музыка в детском саду) : хрестомати / Захарова Г.П., Захаров Л.В. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 2019. – 128 с.

Чи-чи кăсăя. Ача-пăча сăввисем. : хрестомати / П.Эйзин. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви,1987. – 190 с.

**ТУПМАЛЛИ**


УМĔН КАЛАНИ .......... 3

ИККĔМĔШ КĔÇĔН УШКĂНРИ АЧАСЕНЕ ИЛЕМЛĔ ЛИТЕРАТУРĂПА ПАЛЛАШТАРАССИ .......... 4

Иккĕмĕш кĕçĕн ушкăнри ачасем илемлĕ хайлавсене йышăнассин уйрăмлăхĕсем .......... 5

Иккĕмĕш кĕçĕн ушкăнри ачасене литературăпа паллаштарас ĕçĕн тĕллевĕпе задачисем .......... 6

Иккĕмĕш кĕçĕн ушкăнри ачасенчен çулталăк вĕçĕнче кĕтекен результатсем .......... 6

Ачасене литературăпа паллаштарас ĕçе хăш самантсенче ирттересси, ĕç формисем, усă курма сĕнекен меслетсемпе мелсем .......... 7

Шкулчченхи вĕренӳ организацийĕ ачасене илемлĕ литературăпа паллаштарас тĕлĕшпе çемьепе килĕштерсе ĕçлесси .......... 7

Иккĕмĕш кĕçĕн ушкăнри ачасен итлев-вулав карти .......... 8

МЕСЛЕТЛĔХ СĔНĔВĔСЕМ

Иккĕмĕш кĕçĕн ушкăнри ачасене илемлĕ литературăпа паллаштарас ĕç йĕркеленĕвĕ .......... 10

Ача садĕнче вулав кĕтесне йĕркелесси .......... 15

Иккĕмĕш кĕçĕн çулхи ачасен килти вулав-итлевне йĕркелесси .......... 17

Килти библиотека йĕркелесси .......... 20

КАЛАÇУ КОНСПЕКЧĔСЕН ТĔСЛĔХĔСЕМ .......... 22

ВОСПИТАТЕЛЕ ЧĂВАШ АЧА-ПĂЧА ФОЛЬКЛОРĔ ÇИНЧЕН .......... 93

КĔÇĔН УШКĂНРА ПАЛЛАШТАРМА СĔНЕКЕН ХАЙЛАВСЕМ .......... 98

УСĂ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА .......... 130

БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»
Минобразования Чувашии

Учебное издание

Артемьева Тамара Васильевна
Михайлова Светлана Георгиевна

**Ознакомление детей второй младшей группы
с художественной литературой**
*(Для чувашских дошкольных образовательных организаций)*

Редактор *Р.П. Прокопьева*

Верстка *И.В. Матвеевой*

Формат 60х90/16. Бумага офсетная.

Печать офсетная. Тираж: 50 экз. Заказ № 35.

Согласно Федеральному закону «О защите детей от информации, причиняющей вред их здоровью и развитию» от 29 декабря 2010 года № 436-ФЗ данная продукция не подлежит маркировке.

Чувашский республиканский институт образования
428001, Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. М.Горького, 5.

Отпечатано в типографии «Перфектум».
г. Чебоксары, ул. К. Маркса, д. 52.
Тел.: (8352) 32-05-01